28-112
155
690

ТИНЕХПИ ПЕТĔР МИХАЛККИ

# ЂӐВАШ ИСТОРИЙĔ ҪИНЂЕН

## КĔСКЕН КАЛАСА КӐТАРТНИ

МАЛТАНХИ ПАЙĔ

## ТĔП ИСТОРИЙĔН ЙĔРĔСЕМ

ЂӐВАШ КĔНЕКИ УЙРӐМĔ
ШУПАШКАР 1928

ТИНЕХПИ ПЕТĔР МИХАЛККИ

# ÇĂВАШ ИСТОРИЙĔ ÇИНÇЕН

## КĔСКЕН КАЛАСА КĂТАРТНИ

### МАЛТАНХИ ПАЙĔ

## ТĔП ИСТОРИЙĔН ЙĔРĔСЕМ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чебоксары Чувашской АССР

ÇĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар—1928

Типография
«ЧУВАШСКАЯ КНИГА»
Чебоксары. Чувашская 6.

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палате
„——“ ———— 19 г.
№————

Главлит. № 38. Зак № 384 Нап. 5000 экз.

*Пĕлĕвçĕсем пулма хатĕрленекен йуратнă шăллăмсене, тьăваш атьисене, ырă сунса çыратăп.*

# УМЁНХИ САМАХ.

Ђăвашсен тĕп аслашшĕсем çинђен, ђăваш халăхĕн авалхи историйĕ çинђен çырнă кĕнекесем çукпа пĕрех. Пур пек кĕнекесем те ку ыйтăва пĕр майлă, татăклă каласа памаççĕ, мĕншĕн тесен, пирĕн алра ђăвашсен авалхи çыру токкумĕнђĕсем çук пирки, ку ыйту çине кашни вĕреннĕ çын хăйне майлă пăхат те, „çапла пулнă пулмалла“ тесе хурат. Хăшĕ пĕри: ђăваш халăхĕ VIII — X-мĕш ĕмĕрсенђе Хура тинĕс çывăхĕнђи çеçен хирсенђе пурăннă пеђђенехсенђен йулнă халăх, теççĕ. Теприсем: ђăвашсем вĕсем Атăлпа Камă çинђе пурăннă пăлкарсенђен йулнă халăх, теççĕ. Çак иккĕмĕш теори йулашки çулсенђе ђăвашсем хушшинђе çĕнтерсе çитрĕ. Проф. Н. И. Ашмарĕн, Н. Н. Поппе, çак кĕнекене çыракан М. П. Петров, тата ыттисем те ку ыйтăва çителĕклĕ çутатса панă. Çапах та, пайан-кун та вĕреннĕ çынсем хушшинђе урăхла шутлакансем те тупăнкалаççĕха. Вĕсенђен пĕри—М. К. Хуŭакков—çапла çырат:

„Разработкой теории болгаро-чувашского тождества занимались исключительно лишь лингвисты, пользовавшиеся только словарным и при том незначительным метериалом, без всякого согласования с данными других дисциплин“. Малалла тата: „В настоящее время теория болгаро-чувашского тождества культивируется в пределах Чувашской Республики“. Йулашкинђен тата: „Известно, что появление болгар в Европе относится к VII веку*)“, тет.

Çакнашкал «тĕрĕс» сăмахсем çыракан вĕреннĕ çынсем те пур халĕ пирĕн хушăмăрта. Кунашкал çынсене вĕрентсе тăна кӳртес çук ĕнтĕ. Çак кĕнекене те ун пеккисемшĕн çырман. Кăŭ вĕреннĕ ђăвашсен хушшинђе ђăваш историйĕ пирки тепĕр майлă тĕшмĕшле теори пур. Хăшĕ пĕри: ĕлĕк авал мĕн пур тĕнђипех ђăвашсем пулнă, ђăваш сăмахĕсем пур ђĕлхере те темĕн ђулах, тесе вĕрентесшĕн.

„Собака» тенĕ вырăс сăмахĕ ђăвашсен «суп акă» сăмахсенђен пулнă, «ђăваш» сăмах «çăвĕпех ашса çӳре» сăмахсенђен

*) М. Г. Худяков. К вопросу о происхождении чуваш (Известия Общества Обследования и Изучения Азербайджана, № 4, 1927 г., стр. 135—146).

пулнӑ, тесе вӗрентекенсем те пулкалаççӗ*). Çавӑн пек тӗшмӗшсене сирсе йарас тӗлӗшрен çак кӗнеке питӗ кирлӗ йапала пулаť.

Ку кӗнекен пахалӑхӗ унти маттериалсене кӑť çийелтен анђах пӑхса тухсан та питӗ лайӑх курӑнса тӑраť. Вӑл маттериалсене пухса, шыраса кӗнеке автӑрӗ пӗр çулталӑк кӑна иртермен, вӗсене вӑл темиçе çул, ӳркенмесӗр, вӑйхалне хӗрхенмесӗр шыранӑ, мӗн тупнӑ пеккине йӗркелесе, çиçтемӑласа панӑ.

Кӗнекен тепӗр пахалӑхӗ—кӗнекене çырнӑ меттӑт. Историлле маттериалисӑм кӑтартнӑ пек çырнӑ истори анђах етеме тӗрӗс çул çине тӑратассине автӑрӗ малтанах кӑтартса параť, хӑй кӗнекине те çав çул çинђен пӑрӑнмасӑр çырма тӑрӑшаť.

Ку кӗнекере ђӑвашсен ђи авалхи пурӑнӑçӗ çинђен çырнӑ. Çавӑнпа та автӑрӑн] пур шухӑшӗсене те токкументсемпе çирӗплетме май пулманнинђен тӗлӗнмелли çук. Тен пурте автӑр каланӑ пекех пулман та пулӗ, урӑхларах пулнӑ пулӗ, ун çинђен епӗр халӗ татӑклӑ каласа пама пултараймастпӑр.

Сӑмахран, кӗнекен III-мӗш пайӗнђе хунсем тимӗр-тӑмӑр тума пӗлнӗ тенӗ, тата хунсен тӗнӗ çинђен каланӑ вырӑн автӑр каланӑ пекех пулман пулмалла, мӗншӗн тесен ӑрӑвӑн-ӑрӑвӑн пурӑнакан, вырӑнтан вырӑна куçса çӳрекен халӑхӑн тӗнӗ ытла йӗркеленсе çитнӗ тӗн пулма пултарайман пулӗ; тимӗр-тӑмӑр тума пӗлекен халӑх мӗн пур хапрӑк-савӑђӗсемпе пӗрле вырӑнтан вырӑна куçса çӳреме пултарайман.

Кӗнекен V-мӗш пайӗнђе ђӑвашсем çӗр ӗçлеме вӗренни çинђен калани те автӑр каланӑ пекех пулман пулӗ. Авалхи çӗр ӗçӗ халђхи пекех йӑвӑр пулман пулӗ, кайӑкçӑ ӗçӗпе танаштарсан, вӑл ђылай çӑмӑлтарах, нумай усӑллӑрах ӗç пулнӑ пулмалла.

Анђах ку вырӑнсем тӗрӗсех мар пулсан та (вӗсем тӗрӗс мар тесе епӗр татӑклӑ калама пултараймастпӑр), вӗсем пирки кӗнекен тӗп шухӑшӗ пӑсӑлмасť, кӗнекен пахалӑхӗ ђакмасť.

Ђӑвашсен авалхи историйӗ çинђен çыракансене малашне çак кӗнеке пысӑк пулӑшу парӗ, тесе шанатпӑр.

*Ђӑваш Çӗршывне пӗлме тӑрӑшакан*
*Ушкӑн Советђӗ.*

Шупашкар, 1928 çул.

*) И. Н. Юркин. Ђӑваш сӑмахӗсенђен пулнӑ сӑмахсем (Ђӑваш Çӗршывне пӗлме тӑрӑшакан Ушкӑнри алçырӑвӗ).

# АВТĂРТАН.

Ђăваш историйĕ çинђен нимĕн каламасан та, халиђђен курман-илтменскер теме йурат, мĕншĕн тесен, етем шухăшĕ ђăнах та ăна ку таранђђен йĕрлесе, тĕпђесе сăнаса тухайман. Çавăнпа ђăвашсенĕн историйĕ пурри-çуккине пĕлмеççĕ, çавăнпах тата ђăвашсене „неисторический народ“—историсĕр халăх, теççĕ.

Анђах апла калани вăл пĕрре те тĕрĕс мар. Çĕр çинђе пурăнан йапалан puринĕн те хăйĕн историйĕ пур. Çул çинђе вырткаласа, йăванкаласа çӳрекен ђул катăкĕ те историсĕр пулман теме пулат. Апла пулсан, еппин, ĕмĕртен ĕмĕр ђĕрĕ пурăнакан халăх йепле историсĕр пултăр?!

Ђăваш историйĕ вăл пулни пулнах та, анђах ăна ĕлĕк йури пĕлтересшĕн пулман, мĕншĕн тесен, харпăр хăй историне пĕлни вăл халăх куçне уçат. Аслă Револђутси, Раççейре пурăнакан халăхсене ирĕке кăларсан, тӳрех каларĕ: пур халăхăн та хăйĕн кулђтурлăхĕ, ђĕрĕ вăй-хăвађĕ пур, терĕ.

Çавăнпа халђ кашни халăх хăйĕн пурăнăçне, хăйĕн историне тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлесшĕн тăрăшат. Пирĕн те ку ĕçе пикенсех тăвас пулат. Ăна вăрăма йама йурамаст. Кăна тăнлисем пурте лайăх пĕлеççĕ. Çавăнпа епĕр вăл вăрăма каймассине хытă шанатпăр. Вĕренекен çамрăксем те ку ĕçе ыран-пайанах тытăнассине епĕр пĕтĕм ђун хавалĕпе кĕтсе тăратпăр. Ваттисем: çамрăк малаллах! теççĕ.

Пирĕн шухăшпа ку пĕђђен-иккĕн тăвас ĕç мар. Пултаракансенĕн пуринĕн те вăл ĕçе тума пулăшас пулат. Çавăнпа епĕр те: çак ĕçе йермесĕр йулас мар, вăй çитнĕ таран, хамăр пĕлнĕ ђухлĕ, ђăваш историйĕ çинђен, кĕскен те пулин, каласа парас, терĕмĕр. Çак кĕнекене çав шухăша тытса çыртăмăр. Вăл—малтанхи пайĕ çеç.

Кĕнекине епĕр „Тĕп историн йĕрĕсем“ йатлă хутăмăр. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен, ђăвашсенĕн ђăн авалхи пурăнăçĕн, тахçанах иртсе кайнăскерĕн, пăт-пат йĕрĕсем анђах тăрса йулнă. Вăл пурăнăç йепле халлĕн иртсе кайнине пĕлес тесен, çав йĕрсене йĕрленипе çеç пĕлме пулат. Çак кĕнекере епĕр, хамăр йĕрлекелесе кайса, мĕн-мĕн тунине çыртăмăр.

Кайăкçăн, кайăк йĕрĕпе кайнă ђух, ђăтлăх виттĕр те тухмалла пулаť, тарăн çырмасем, варсем урлă та каçмалла пулаť, хăш ђухне тата кайăк йĕрĕ пађах çухалаť те, вара унăн-кунăн çавăрăнкаласа çӳреме те килет. Ђăвашсенĕн тĕп историне йĕрленĕ ђухне те çавăн пек пăтăрмахсем нумай тĕл пулаççĕ: сĕм вăрманти пек хăш ђухне ниçталла та кайма пĕлмелле мар пек пулаť.

Анђах кĕтмен çĕртенех унтан пĕр сасă илтĕнет, кунтан тепĕр сасă. лерен тата тепĕр сасă, вара унталла-кунталла тишкерсе пăхатăн та, хуллен-хулленех çул çине тухатăн.—

— Вăл çул пире Аçи варринђен Атăл çине, аслă çеçен хирсем урлă Мăн Атăлпа Ђулман Атăл куккăрĕнђи вăрманлăха, ђăвашсенĕн тĕп йăви патне илсе çитерђĕ.

Çак йăвана ђăвашсем, Хун ăрăвĕсенђен уйăрălсан, килсе вырнаçнă. Пĕлĕвçĕсем ку ĕçе пĕр 1500 çул ĕлĕкрех (Х.ç-ан IV-мĕш ĕмĕрте) пулнă, теççĕ. Пирĕн шухăшпа вăл пĕр 2400—500 çул ĕлĕк пулнă. Çавăнпа епĕр калатпăр: ђăвашсем Атăл таврашĕнђи ђăн тĕп халăх, автохтонсем, тетпĕр.

Ђăвашла ăрусем малтан нумай пулнă, анђах, пурăна киле вĕсем пурте пĕтнĕ, пĕр Ђăваш йăхĕ çеç тăрса йулнă. Халĕ вăл ытти халăхсем хушшинђе аслă тинĕс варринђи утă пек (утрав пек) çеç пĕђђен тăрса йулнă. Ку кĕнеке тăрăх ĕнтĕ епĕр çаксем çинђен пурин çинђен те, пăртак та пулин, каласа парасшăн.

Ут тăват уралла та, çапах та такăнаť, теççĕ. Етем те çавах: вăл тытса тунă ĕçре те çитменлĕхсем пулаççĕ. Пирĕн кĕнекере кăлтăксем пуррине епĕр хамăр та лайăх пĕлетпĕр, пирĕнтен нумай пĕлекенсен ђĕпђĕр куçĕсем ун пек çитменлĕхсене темĕн ђухлĕ те шыраса тупĕç.

Епĕ вĕсене сарпаласа калатăп: кукăрине тӳрлетĕр, çитменнине çитерĕр, ытлашшине катăр, пур кăлтăксене тасатăр, тетĕп. Есĕр çавна тăвасса шанса, епĕр хамăрăн тайăн пуçăмăра малтанах сирĕн умăрта тайайса тăратпăр.

Çак кĕнекене çырнă ђухне пире ăс парса нумай пулăшнă çынсене пурне те епĕр халĕ пĕтĕм кăмăлтан тав тăватпăр: проф. Н. И. Ашмарине, Е. С. Саххарăва, Т. Ç. Елмене, Н. И. Ванерккене, А М. Куçнетсова, И. Т. Трофимăва, ыттисене те.

Тинехпи М.

Шупашкар. 6/IX, 1927.

# I.

## Ҫӑваш историйӗ ҫинҫен ӑнлантарса калани.

1. Истори мӗн вӑл? 2. Ҫӑваш истори фактӑрӗсем. 3. Историне пӗлни мӗнтен усӑллӑ. 4. Ҫӗлхе палӑкӗсем. 5. Йапала палӑкӗсем. 6. Ҫырусем (токкумӗнтсем). 7. Ҫӑваш историн палӑкӗсене пикенсе пуҫтарас пулат. 8. Ҫӑваш историне ҫыракансем. 9. Ҫӑваш историн пайӗсем.

# I. Ђăваш историйĕ çинђен ăнлантарса калани.

## I. Истори мĕн вăл?

Истори тенĕ сăмах—вăл авалхи крексенĕн сăмахĕ. Истори тесе крексем мĕн курни-илтнине каланă, тата мĕн курни-илтни çинђен каласа кăтартнă сăмаха каланă. Çак сăмах крексенђен ĕлĕкхи римсем патне куçнă, унтан Йевроппăри мĕн пур халăхсем хушшине сарăлса çитнĕ, ђи кайран пирĕн ђăваш ђĕлхи çине те килсе кĕнĕ.

Хаљхи вăхăтра *истори* тесе иртнĕ пурăнăç çинђен вĕрентсе, ăнлантарса паракан науккăна калаççĕ. Етем хăй те, етем пурăнăçĕ те улăшăнмасăр пĕр пек тăмаççĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн епĕр хамăр та пĕрмайах улăшăнса урăхланса пыратпăр, пирĕн таврари çутçанталăкри йапаласем те çавăнпекех улăшăнса урăхланса пыраççĕ. Хăвăрăн иртсе кайнă пурăнăçăра аса илĕрха: мĕнле пулнă есĕр?—Утайми ађаран утакан, ђупакан пулнă, пĕђĕк çĕртен пысăк пулнă. Тата сирĕн çемйере, сирĕн килçуртăрта мĕн мĕн пулман çав хушăра? Сирĕн йалта, сирĕн йалйышĕ хушшинђе те тĕрлĕ улăшăнусем сахал пулнăи? Вăхăт иртнĕçемĕн çĕр çинђи тĕрлĕ халăхсем те, тĕрлĕ патшалăхсем те çавăн пек улăшăнмасăр тăни çук. Сăмахран илĕпĕр вырăссене. 100 çул ĕлĕк пирĕн Атăл таврашĕнђе вырăсăн тĕсĕ те пулман. Вĕсем кунтан инçетре, хыçал йенђе, пурăннă. Вĕсем ун ђухне çĕр ĕçлеме те лайăхах пĕлеймен. Вĕсем сунарçă (кайăкçă) халăх пулнă. Пăхăсăн—хаљ пĕтĕм Атăл тăрăх вырăс хулисем, салисем ларса тухнă. Вырăссем хаљ çĕр ĕçне те лайăх пĕлеççĕ, пур ăсталăха та пултараççĕ. Вĕсем ĕлĕк çыру пађах пĕлмен, вĕсенĕн шкул тĕсĕ те пулман, хаљ çыру пĕлмен вырăс çукпа пĕрех, вĕсенĕн темĕн ђухлĕ шкул пур, универçиттетсем те ђылай. Вырăссем ĕлĕк Перун йатлă турра пуççапса пурăннă, унтан Христос тĕнне кĕнĕ, хаљ вĕсем хушшинђе темиçе тĕслĕ тĕне тытса тăракансем те пур, тата ним тĕнсĕр пурăнакансем те ђылай. Вĕсем 1000 çул ĕлĕк йут халăх аллинђе пулнă, хаљ вĕсенĕн хăйсенĕн пит пысăк, питĕ ђаплă респуплĕкĕ

пур. Вырăс ĕççыннине ĕлĕк кђаçсемпе патшасем, улпутсемпе хуçасем пусмăрласа пурăннă, халĕ ĕçлекенсемпе хресђенсем пролеттариат тиктаттурĕ туса хунă. Çапла ĕнтĕ 1000 çул хушшинђе вырăс халăхĕ темиçе тĕрлĕ улăшăна-улăшăна урăхланса, хаљхи вăхăта çитнĕ. Хаљхи вырăспа авалхи вырăса илсессĕн, вĕсене никам та пĕр кăкран, пĕр йăхран тухнă халăх тесе калас çук.

Илĕпĕр тата тепĕр пример—Вавилон хулине. Темиçе пин çул ĕлĕк вăл пит пысăк, пит илемлĕ, ђапларан ђапла хула пулнă. Хаљ Вавилон вырăнĕнђе етем пурăнми çара пушă хир сарăлса выртаť. Унăн-кунăн анђах унта сăртсем курăнкалаççĕ. Вăл сăртсем çилпе вĕçекен хăйăр айне пулса йулнă çĕмрĕк çуртсем. Ĕлĕк Вавилонра етем пурăнăçĕ вĕресе тăнă, хаљ унта пăг-пат караван ирткелесе кайаť, йе пĕрпĕр арăслан сиксе тухаť те, мĕкĕрсе йарса, кайăк хăвалама тытăнаť, йе тата выçă вĕт кашкăрсем, шаккалсем, улани илтĕне илтĕне кайаť. Çапла ђаплă хула Вавилон çĕмрĕк çурт купи, кашкăр йăви çеç пулса йулнă.

Çакăн пек улăшăнусем йепле пулса пынине пире истори каласа ăнлантарса параť: вырăссенне—вырăс историйĕ, тутарсенне—тутар историйĕ, ђăвашсенне—ђăваш историйĕ. Тепĕр майлă каласан, ђăваш историйĕ вăл ђăвашсем ăçтан тухса кайнине, тата вĕсенĕн пурăнăçĕ йепле улăшăнса пынине, пурăнăçĕ улăшăннă майĕпе хăйсем те вĕсем йепле хуллен хуллен урăхланса кайнине, унтан вĕсем хаљхи саманана йепле халлĕн çитсе кĕнине пĕлтерсе тăраť.

## 2. Истори фактăрĕсем.

Çутçанталăкра ахалех сăлттавсăр пулни нимĕн те çук. Илер йăвăç-курăка. Çуркунне хĕвел çĕр питне ăшăтса, çутатса тăра пуçласанах, йур ирĕлсе шывсем пулаť те, йухаканни йухса кайаť, йухайманни çĕре сăрхăнса пĕтет, вара çĕр ăшăнса типсе çитсенех, пур тĕрлĕ йăвăç-курăк çĕр ăшĕнђи апата ĕмсе, ăшă сывлăшпа сывласа, ӳсме тытăнаť, пĕр-ик-виç уйăх хушшинђе вĕсем çулçăсем сараççĕ, ђеђексем кăлараççĕ, унтан вăрăллă çимĕçсем тăваççĕ. Çапла хĕвел ăшшипе çуттинђен çав тери тĕлĕнмелле ĕççĕм, улăшăнусем пулса пыраççĕ.

Етем ывăлĕ-хĕрĕн пурăнăçĕнђе те сăлттавсăр ахалех нимĕн те пулмасť. Мĕн пулса иртни пурте пĕрпĕр сăлттав пирки пулнă. Çавăн пек сăлттава урăхла истори фактăрĕсем теççĕ.

Етем пурăнăçĕнђе мĕн пулаť, иртет, çавсем пурте—сотсиаљни фактсем те, политтĕкле фактсем те, куљттурлă фактсем те, ыттисем те йалтах çав фактăрсенђен пуçланса кайаççĕ те, çав фактăрсем тĕртсе пынипе пулса пыраççĕ.

Вĕсенђен пĕри—етем пурăннă вырăнти çĕр-шыв вăйхăвађĕсем пулаť. Çĕршыв вăй-хăвађĕ пур çĕрте те пĕр мар: хăш çĕрте ăшă, хăш çĕрте сивĕ; хăш çĕрте тата тӳп-тӳрем, хăш çĕрте сехре хăппи тусем; унтан тата хăш çĕрте çеçен хирсем, хăш çĕрте пуш уйсем, хăш çĕрте сĕм вăрмансем; йе тата хăш çĕрте мамăк пек хура тăпра, хăш çĕрте çара хăйăрлăх; хăш çĕрте йĕпе-сапа çителĕклĕ пулаť, хăш çĕрте йалан пит уйар тăраť. Пурне те каласа та пĕтерес çук. Çаксем пурте пит хăватлă фактăрсем: етем пурăнăçне вĕсем йе малалла тĕксе пыраççĕ, йе кайалла туртаççĕ. Ак çак пĕђик примерех ăна лайăх ăнлантарса параť. Илер хура тăпраллă анапа пурăнакан çыннах: унăн ани çинђе тырă-пулă йышлăрах пулаť, çавăнпа унăн апат-çимĕç те илпекрех пулаť, çавăнпа вăл выљăх-ђĕрлĕх те, кайăк-кĕшĕк те ытларах усраť, çавăнпа унăн кил-йышĕ тăраниђђен çийет, питĕрех тумланаť, çавăнпа унăн кил-йышĕ вăйлăрах, ĕçре паттăртарах, ђир-ђĕре тăруках парăнмасť. Çапла унăн пурăнăçĕ кайалла каймасť, малалла пыраť. Шурă тăпраллă анапа пурăнакан çыннăн тырри сахал пулнă пирки, апат-çимĕç те сахал пулаť. Унăн килйышĕ вара кирлĕ таран çийеймест, лайăхрах тумланаймасť, ђас шăнаť, ђире йерет, вăйран сулăнаť. Ку етемĕн пурăнăçĕ кайалла кайаť. Етем ывăлĕ-хĕрĕн пысăк ушкăнĕсем те,—йал-йышсем, хула-йышсем, патшалăх-йышсем,—пурте çавах: çĕр-шыв ырă пулсан, халăх малалла кайаť, нађар пулсан, кайалла. Пăрлă тинĕс тавращĕнђи çĕр-шыв калама çук нађар, çавăнпа унта пурăнакан оçťаксем аран-аран хире-хирĕç çитеркелесе пурăнаççĕ. Çавăнпа вĕсенĕн пурăнăçĕ мĕскĕн пурăнăç, çавăнпа вĕсем малалла кайаймаççĕ, ĕрђеймеççĕ. Вĕсемпе пĕр кăкран тухнă маťарсенĕн çĕр-шывĕ паха, ырă, пуйан. Çавăнпа вĕсем Йевроппăри ђи малта пыракан халăхсенђен нимрен те кайа мар: вĕсенĕн патшалăх та, хуласем те, промышлĕннăç та, пурте пур. Çапла ĕнтĕ çĕр-шыва етем историне тутаракан фактăр тени вăл ахаљ сăмах мар, вырăнлă сăмах. Çавăнпа та Пуххарин (Бухарин) калаť: „Человеческое общество есть продукт природы, как и весь человеческий

род"—етем ушкăнĕ вăл çут-тĕнђенĕн протукти, пĕтĕм етем ăрађĕ те çавах, тет*).

Истори фактăрĕ тепри--халăх ĕрђесе йышлăланни. Халăх нумайланса çитсен, çĕр-шыв тăвăрланса çитет, вара унăн ырăлăхĕ çитмен пирки, пурăнăç хире хирĕç çитми пулаť. Çав тăвăрлăх, çав çитменлĕх етем ывăлĕ-хĕрне ирĕксĕрех йе, унтан пăрахса кайса, çĕнĕ çĕр шыраттараť, йе, ниçта куçса кайма май çук пулсан, хытăрах ĕçлеттерсе, çав тăвăрланса çитнĕ çĕр-шывранах тăранмаллăх, пурăнăça хире хирĕç çитермелĕх ырăлăх туптараť. Çавăнпа етем ĕçлеме сăлайлăрах хатĕрсем тупса кăлараť, ĕçĕ ăнăçлăрах пулмашкăн органисатсиленсе ĕçлет. Çапла вара унăн ĕçленин ресулттађĕ пысăкрах пулаť. Акă илер ђăвăшсенех. Нумай та пулмасť, вĕсем çĕр-шыва навус таврашĕ тăкмасăр, ахаљ сухапа сухаланипех тăранса пурăнађђĕç, мĕншĕн тесен, ĕлĕк çĕр-шыв ирĕк пулнă. Халĕ халăх йышлă пирки пĕђĕк ластăк çĕртен тырă-пулă йышлăрах илес тесе, унта тислĕкне те тăкаççĕ, икĕ-виçĕ хут та сухалаççĕ, нађар сухапа мар, тимĕр акапа. Вăл сахалха. Ĕлĕк виçĕ пусăпа тутă пулнă, халĕ апла май килмест те, 4--5 пусă тăваççĕ, 7—8 тĕслĕ тырă-пулă акаççĕ, ĕлĕк пушă выртан анкартисене тĕрлĕ пахђа-çимĕç, тĕрлĕ улмаççи лартаççĕ. Çапла етем çут-тĕнђенĕн вăй-хăвађĕсене хăйшĕн нумайтарах ĕçлеттерет, хăйĕн вăй-хăватне те ытларах кăлараť. Пăхăсăн—йышлăланса çитнĕ етем ывăлĕ-хĕрĕ выçă вилме мар, пурăнăça ђип-ђиперех хире хирĕç çитерсе пыраť.

Историн виççĕмĕш фактăрĕ—ĕç тумалли хатĕр. Çĕр-шыв ырăлăхĕ етем аллине ахаљ пырса кĕмест. Ăна алпа, хатĕрпе ĕçлесен çеç илме пулаť. Ĕçлемелли хатĕр мĕн ђухлĕ лайăх, мĕн ђухлĕ сăлайлă, çавăн ђухлĕ вăл ĕçе ўсĕмлĕ тăваť. Йакалнă шăллă, усал, йăвăр çурлапа тырă вырма кансĕррине, çивĕђ шăллă, ырă, çăмăл çурлапа ĕçлеме çăмăллине ĕçлесе курнă çын такам та пĕлет: лешинпе пĕр кĕлте тунă çĕре, кунпа 2—3 кĕлте тума пулаť. Машшинпа вырма тата çăмăлтарах, унпа ĕç ђас пулаť те, нумай пулаť. Çапла лайăх хатĕрпе етем çĕр-шыв ырăлăхне нумайрах пуçтарма пултараť. Унтан тата хатĕрпелех етем çĕр-шывăн пĕр тĕслĕ ырăлăхне тепĕр тĕслĕ тума пултараť: арманта тыр пĕрђинђен çăнăх тăваť, хапрăксенђе çăмран, çĕр-мамăкĕнђен, сўсрен темиçе

*) Бухарин Н. Теория историческ го материализма. Государственное издательство. 1921 Стр. 60—61.

тĕслĕ пир-авăр тăвать. Хатĕрпеле етем çĕр-шыв вăй-хăватне, çут-тĕнђе енеркине хăйне пăхăнтарать: тĕрлĕ хатĕрсемпе вăл електрисе, шыв пăсне хăйшĕн ĕçлеттерет. Çапла етем, хатĕрне кура, йе вăйлă пулать, йе вăйсăра тухать. Çавăнпа ĕçлемелли хатĕр етем историнђе пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак фактăр пулăшнипе вăл „пурлăх" тăвать.

„Пурлăх" тесе епĕр етем хăйне кирлинђен ытлашши тунă ырăлăха калатпăр. Çакăн пек „пурлăх" историре паллă вырăн йышăнса тăрать. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен, пурлăх пур çын кана пĕлмесĕр, кунĕн-çĕрĕн хура тар тăкса ĕçлемесен те, пĕр хушă пурăнма пултарать. Çапла вăл хура ĕçрен хăтăлса, пĕр вăхăтлăха та пулсан, ирĕке тухать. Çак вăхăтра вăл ăспа, тăн-пуçпа ĕçлеме тытăнать: йе ĕçлеме майлăрах хатĕрсем, инструментсем шухăшласа кăларать, йе пĕр-пĕр çĕнĕ ĕçе тытăнать, йе тата хăйне астармалăх прaçниксем тăвать, тĕрлĕ май тупса кăмăлне выљатать. Çапла „пурлăх" пулнă пирки ĕç техникĕ вăйланса пырать, ăна пула етем пурăнăçĕ ӳсĕмлĕ пулса, сарăлса, аталанса кайать. Çавăнпа „пурлăха" етем историне тăвакан фактăр теме тĕрĕс тивĕçлĕ.

Етем шухăшласа кăларнă хатĕрсем, пурăнма тупнă тĕрлĕ майсем, пĕр-пĕринпе пĕрлешсе, хутшăнса, савăнса, йăпанса, пурăнмалли йĕркесем, йăласем, уђрештенисем, орканисатсисем пурĕ пĕрле унăн куљттурлăхне кăтартаççĕ. Куљттурлăх вăл етем тăрăшнипе, унăн терђĕпе пулнă йапала. Çак куљттурлăх та етем историйĕнђе пысăк вырăн йышăнса тăрать. Куљттур тĕлĕшĕнђен малта пыракан халăх вăйлă пулать: унăн тавра пурăнакан ытти вăйсăртарах халăхсем ирĕксĕрех унăн йеннелле пăхаççĕ. Вара вăйлă халăхăн куљттурĕн сăнĕ вĕсем çине ӳкет, вĕсене хăш ђухне витĕрех çапса тухать. Ак илер хаљхи вырăссемпе хамăр ђăвашсенех. Вырăс куљттури вăйлă, малта пырать. Çавăнпа ђăвашсем нумай йапалана вырăсран илеççĕ, вырăсран вĕренеççĕ. Çапла вĕсем хăйсем те сисмеççĕ, вĕсенĕн пурăнăçне вырăс сăн-сăпађĕ витĕрех çапа пуçлать. Çавăнпа куљттура та етем историне тăвакан фактăр теме пулать.

Йулашкинђен тата тепĕр хăватлă фактăр çинђен калас пулать: вăл—етем хушшинђи классем. Клас тесе епĕр пĕр ушкăнпа пурăнакан етем ывăлĕ-хĕрĕсене уйрăмăн-уйрăмăн, тепĕр тĕслĕ каласан, хутлăн-хутлăн, сийĕн-сийĕн пурăннине

калатпăр: пĕр сийĕ—пуйансем, çĕр-шыв ырăлăхне хăйсенĕн аллинђе тытса тăракансем. Тепĕр сийĕ—ђухăнсем, мĕскĕнсем, йурлă çынсем, вĕсем пурте хура ĕçпе тертленсе, тивĕçсĕре тухса, хурлăх курса пурăнаççĕ.

Пĕрлешсе çитнĕ вăйлă клас, ирĕке (влаçа) хăй аллине йарса илсен, хăйне килĕшӳллĕ, хăйне майлă, хăйне усăллă, хăй йевĕрлĕ патшалăх тăват. Ку таранђђен çĕр çинђе классăр патшалăх пулман, мĕншĕн тесен, Ленин кал анă тăрăх пĕр-пĕр етем ушкăнне ђеретĕн-ђеретĕн пайан пĕри, ыран тепри тытса тăра пуçласан, ăна патшалăх теме пулмаст?*) Пĕре патшалăх тусан, çав патшалăхра пурăнакан халăхсене пурне те пуçлăх пулса тăракан клас, тĕрлĕ сакконсем, тĕрлĕ йĕркесем кăларса, хăй аллинђе, картари ылђăха тытнă пек тытса тăрат, пĕтĕм массăна хăй куçĕнђен пăхтарат, ăна хăй ырăлăхĕшĕн, хăй усă курасшăн пусмăрласа, експлоататсилесе пурăнат. Акă илĕпĕр ĕлĕкхи Раççей патшалăхнех. Ĕлĕк вăл улпутсен, улпут таврашĕсен аллинђе пулнă. Вĕсем Раççейри пĕтĕм хура халăха улпут аллине валеçсе парса тивĕçсĕре кăларнă: ăна вĕлерме те, сутма та, тем тума та пултарнă. Анђах айала тăрса йулнă етем ывăлĕ-хĕрĕ ушкăнĕ, пусмăрлăхра тăракан клас, çийеле тухнă ушкăнне, пусмăрлакансен класне, курайман. Çавăнпа çак икĕ клас хушшинђе ĕмĕр вăрçă пырат. Çапла рапођђисемпе хресђенсем ĕмĕрех улпутсемпе, хуçасемпе вăрçса пурăннă. Çак икĕ клас хушшинђе тăраканнисем йаланах çӳлти, çийелти клас майлă пулса, ăна пăхăнса тăрса, вĕсемпе пĕр çулпа пыраççĕ. Çапла етем историнђе, тӳрех каласан, икĕ клас çеç. Çак икĕ клас çапăçни вăл пĕтĕм историйе тултарса тăрат. Вăрçăсем, çапăçусем, револютсисем хыççăн пурăнăç йĕркисем улăшăнаççĕ, йе айалти класа пурăнма çăмăлтарах, йе хĕсĕкрех пулат. Çавăнпа ĕнтĕ етем ывăлĕ-хĕрĕ класланса пурăнни вăл историйĕн пысăк, вăйлă фактăрĕ.

Çапла ĕнтĕ епĕр куратпăр: етем пурăнăçне тĕрлĕ фактăрсем, тĕрлĕ вăй-хăватсем апла та капла майлаштарса формăласа пыраççĕ. Вĕсем ĕçлеменни пĕр минут та, пĕр саман та çук. Апла пулсан, еппин, етем хăй историйĕнђе йепле вырăн йышăнса тăрат пулĕ? историре унăн ролĕ пысăки, пысăк

*) „Общину, в которой „организацией порядка“ заведывали бы поочередно все члены ее, никто, разумеется, не мог бы назвать государством“. Н. Ленин Собрание сочинений. Гос. Изд. Москва—Ленинград. т. II. стр. 83.

мари? Ленин калаҫ: «История вся слагается именно из действий личностей»—истори вăл пĕтĕмпех уйрăм етемсем тунипе пулса пыраҫ, тет. Етеме вăл «несомненный деятель» (истории)—ҫăнахах историйе тăваканскер, тет. Йепле? Историре уйрăм етемĕн ролĕ йеплине пĕлес тесен, Ленин каларĕшле, вăл ыйтăва тепĕр майлă калас пулаҫ: пĕр пĕр ҫын опҫăстăвăра ĕҫлени хăҫан ӳсĕмлĕ пулма пултараҫ? вăл опҫăстăвăра ĕҫленине ăна хирĕҫ пыракансем путарса ан хуҫăр тесен, ăна мĕнле карантти кирлĕ? тес пулаҫ. Епĕр куртăмăр: историйе тăвакан фактăрсенҫен пĕри класпа клас кĕрешни. Ĕнтĕ уйрăм етемĕн историнҫи ролĕ ҫак вăрҫăра йепле кĕрешнинҫен, йепле ҫапăҫнинҫен килет. Вăл ҫак ҫарăна пĕлми вăрҫа йермесĕр, унта хăйне валли вырăн йышăнмасăр тăрса йулсан, вара историре паҫ ролсĕрех тăрса йулаҫ. Историшĕн вăл ҫын нимĕн те мар. Анҫах патшалăхсем пуҫланса кайнăранпа классăр етем ушкăнĕ ҫук. Ҫавăнпа клас тулашĕнҫе, ним класа йермесĕр пурăнакан ҫын та ҫĕр ҫинҫе никам та ҫук. Пролетари класĕ—ĕҫпе ҫыхăнса пĕрлешсе тăракан клас. Вăл мĕн пурăннăҫемĕн ҫийеле тухса пыраҫ. Вăл—ҫăн вăйлă, ҫăн пысăк ĕмĕтлĕ клас. Вăл вăрҫни етем пурăнăҫне малалла пустараҫ. Ҫавăнпа Ленин,—етеме опҫăстăвăра ӳсĕмлĕ ĕҫлеме мĕн кирлĕ тесен,—тӳрех калаҫ: пролетарисем класланса пуршуйсене хирĕҫ тăрса вăрҫни, тет[1]).

Ҫапла ĕнтĕ етем историне тăвакан фактăрсем хушшинҫе етем хăй те пур. Ҫак каланă фактăрсем те, ыттисем пурте историйе харпăр хăй ĕссĕн, пĕр пĕҫҫен, тумаҫҫĕ, харăс, пĕрле, пĕр-пĕринпе ҫыхăнса тăрса, туса пыраҫҫĕ. Историре пĕр факт та вĕсемсĕр пулман. Историре пĕр-пĕр ĕҫ йепле пулнине ăнласа илес тесен, ҫав фактăрсем йепле ĕҫленине кăтартса пама пĕлес пулаҫ. Ҫавăнпа ҫăваш историнҫе пулнă ĕҫсем ҫинҫен ăнлантарса парас тесен, ҫав тĕрлĕ фактăрсем ҫинҫен куҫа пĕре те илме йурамасҫ. Ҫапла тусан, тин истори тĕрĕс пулма пултараҫ.

1) „Действительный вопрос, возникающий при оценке общественной деятельности, личности, состоит в том, при каких условиях этой деятельности обеспечен успех? в чем состоят гарантии того, что деятельность эта не останется одиночным актом, тонущим в море актов противоположных?... именно классовая борьба пролетариата против буржуазии". Н. Ленин Собрание сочинений. Гос. Изд. Москва. 1925 г. Т. I, стр 98.



ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чебоксары Чувашской АССР

## 3. Ђăваш историне пĕлни мĕнтен усăллă.

Пирĕншĕн пулсан, ђăваш историне пĕлни вăл кирек мĕнле историйе пĕлнĕ пекех усăллă йапала. Мĕншĕн тесен, çын ăна пĕлнипе ăслăланма пултарать. Йепле?

Ђăн малтан ак çапла. Пĕр ĕлĕкхи паллă вырăс историкĕ каларĕшле, „Ясное и отчетливое познание прошедшего всегда служит благонадежнейшим ключем к уразумению потребностей настоящего и к просвещению попечительных видов о будущем“[1])—иртсе кайнине тĕплĕ пĕлни вăл халĕ мĕн тумаллине ăнласа илме те йаланах хытă пулăшать, тата малашнехишĕн йепле майпа тăрăшмаллине те ђипер кăтартса тăрать. Хађхи тепĕр ђаплă вырăс историкĕ ăнлантарса панă тăрăх, çĕр çинђе улăшăнманни нимĕн те çук, пурте улăшăнать, етем те улăшăнать. малашне те улăшăнмасăр тăрас çук. Етем ушкăнĕсен пĕр тĕрлĕ йĕркисем саланса кайнă çĕре тепĕр тĕрлĕ йĕркесем çĕнĕрен çуралаççĕ. Вĕсем йепле улăшăнса пырса, йепле пулса пĕтессине епĕр халĕ нимпе те пĕлме пултарайас çук. Анђах темиçе 100 çул, темиçе 1000 çул хушшинђе етем пурăнăçĕ историре йепле улăшăнса пынине асăрхаса тухсан, епĕр çав улăшăнусем йепле саккон тăрăх пулса пынине, урăхла каласан, истори сакконне ăнласа илме пултаратпăр. Ăна пĕле пуçласан, епĕр вара малашне етем пурăнăçĕ йепле çулпа, йепле йĕркепе улăшăнса майлашса пырассине те тавçарса илме пултаратпăр. Малашнехи йепле пулассине пĕлни вăл етемшĕн пит хаклă, мĕншĕн тесен, апла етем ниçталла пăрăнмасăр тӳрĕ çулпа кайма та, хăйне хăй пăтăрмах тăвасран сыхланма та пултарать. Çавăнпа çав вырăс историкĕ калать: «знание прошлого дает нам, таким образом власть над будущим. Вот для чего нужно знать прошлое!»[2]) пулса иртсе кайнине пĕлни, еппин, малашне пулассине пирĕн ирĕке, пирĕн алла парать. Пулса иртсе кайнине акă ĕнтĕ мĕншĕн пĕлес пулать! тет. Авалхи ăслăлăхçăсем те çавăнпа историйе пĕлме тăрăшнине мухтанă. Вĕсенђен пĕри: истори— вăл пурăнма вĕрентекен йапала, тенĕ; тепри: истори вăл çамрăксене ват çын ăсне парать, тенĕ.

Ђăваш историне пĕлни вăл пуринђен ытла ђăваш ађисене ђăваш çамрăкĕсене кирлĕ. Вĕсем пурте ђăваш хушшинђе

[1]) Журн. Мин. Внутр. Дел, 1864 г., кн. 4-ая, стр. 5.

[2]) Покровский М. Русская история в самом сжатом очерке от древнейших времен до конца XIX столетия. Москва—Ленинград. 1923 г. Стр. 6.

пурӑнаҫҫӗ, пурте ђӑвашран пулнӑ. Ҫавӑнпа ђӑваш историне пӗлни вӗсемшӗн хӑйсен историне пӗлни пулаҭ. Кунсӑр пуҫне тата шкулра вӗренекен ҫамрӑка ҫак ђӑваш историне пӗлни вӑл ӳлӗм, Ђӑваш Ҫӗрӗнђе ӗҫленӗ ђух, кирлӗ пулаҭ; мӗншӗн тесен, Ђӑваш Ҫӗрӗнђе ђи тӗп-халӑх—ђӑваш халӑхӗ. Унпа ђунтан вартан пӗрлешсе ӳсӗмлӗ ӗҫлесе пурӑнас тесен, унӑн ӑсне пуҫне, пур пурӑнӑҫ йӑлисене те питӗ лайӑх пӗлсе тӑрас пулаҭ. Кусене пурне те истори кӑтартса параҭ.

Унтан тата ҫак пирӗн ђӑваш халӑхӗ ҫинђен темӗн тӗрлӗ шухӑшлакан та пулнӑ, хаљ те пур: хӑшӗ ӑна кайӑкла етем ырӑнне ҫеҫ хураҫҫӗ, куљттура вӑл нихҫан та вӑйлӑлатма пултарас ҫук теҫҫӗ: ыттисем тата ђӑвашсене пит хастарлӑ халӑх, теҫҫӗ; виҫҫӗмӗшсем ђӑваш халӑхне пӗтме пуҫланӑ халӑх теҫҫӗ. Ђӑваш историне лайӑхӑн пӗлсен, ӑна тӗплӗрех тӗрӗслесе тухсан, ҫак халӑх ђӑнах мӗнлине лайӑх пӗлме пулаҭ, вара ун тӗлӗшӗнђен иккӗленсе тӗрлӗрен шухӑшлани те нимӗн те пулас ҫук.

Историйе пӗлнин усси кунпа анђах пӗтместха. Истори вӑл пӗтӗм ђӑваш халӑхӗн пурӑнӑҫ ҫулне, пӗр вӗҫӗнђен пуҫласа, тепӗр вӗҫне ҫитех кӑтартса пама тӑрӑшаҭ. Вара епӗр ђӑваш пурӑнӑҫӗ йепле иртсе пынине, унӑн йухӑмне, пур протсесӗсене карттин ҫинђи пек куратпӑр: унӑн хуҫалӑхӗ йепле майлашса пынисене, пӗрпӗринпе, тата кӳршисемпе йепле пурӑннисене, пурӑнӑҫ ӑстрӑмӗсене пурне те. Ђӑваш халӑхӗн пурӑнӑҫӗнђе хурапа шурӑ нумай пулнӑ: сехре хӑппи трамӑсем те сахалах пулман. Ҫапах та ђӑваш халӑхӗ пӗтмен, пурне те ђӑтса ирттернӗ. Ҫаксене курсан, ирӗксӗрех ђӗре ђӑваш халӑхӗ малалла куљттур ҫулӗпе ӳсӗмлӗрех кайассине ӗмӗтленерех параҭ, вара малашне ырӑ пулас шанђӑк та ҫирӗпленсе патварлӑрах пулаҭ.

Йулашкинђен тата ҫакна та манмалла мар: етем кӑмӑлӗ пӗлнӗ йапала йенне ҫеҫ туртӑнаҭ, пӗлмен йапалана вӑл йышӑнмасҭ. Истори кӑтартнисене пурне те пӗлсе тӑрсан, пирӗн кӑмӑл хамӑр ђӑваш халӑхне хӗрхенме пуҫлаҭ, ӑна йуратса, ӑшшӑн пӑхаҭ, пулӑшма та хатӗртерех пулаҭ. Ҫапла ӗнтӗ историйе пӗлни вӑл опђӑствӑшӑн, халӑхшӑн, ӗҫлеме пикентерет, вырӑсла каласан, «побуждает к общественной деятельности“.

## 4. Ҫӗлхе палӑкӗсем.

Ҫӑваш историне виҫ тӗслӗ йапала тӑрӑх пӗлме пулаҭ: пӗрисем—*авалхи сӑмахсем*, теприсем—*авалхи йапаласем*,—лешсене ҫӗлхе палӑкӗсем (памӑҭниксем), кусене йапала палӑксем (памӑҭниксем) йеткерӗсем теҫҫӗ,—унтан тата *авалхи ҫырусем*, вӗсене *токкумӗнтсем* теҫҫӗ.

Авалхи сӑмах памӑҭникӗсем ак ҫаксем: тӗрлӗ калавсем, пуплевсем, анектотсем, ваттисенӗн сӑмахӗсем, йумӑхӗсем, йуптарса каланисем, авалхи тӗрлӗ халапсем, йурӑсем, шӑхвӑртса каланисем, тата урӑххисем те нумай. Ҫаксем пурте, историшӗн пулсан, пит усӑллӑ пулма пултараҫҫӗ. Вӗсен тӑрӑх епӗр ҫӑвашсем камран пулнине, мӗнле халӑхпа туртурлӑ пулса пӗрле пурӑннине, вӗсенӗн пурӑнӑҫне, ӑсталӑхне, пурӑнӑҫ йӗркине, пурӑнӑҫ тытӑмне, тӗнне-шухӑшне, пурне те пӗлме пултаратпӑр. Акӑ илӗпӗр „Йаккушпа Велӳш“ ҫинҫен калакан йумахах. Ҫав авалхи йумах пире ҫӑвашсенӗн тӗп аслашшӗсем ҫӗр ӗҫнемӗншӗн йерсе кайнине пит лайӑх кӑтартса параҭ. Илӗпӗр тата „*Тӑхӑр Танкӑлтакпа пӗр Мамӑлтака.*“ Ку йумах пире авалхи ҫӑвашсем йепле сутуилӳ туса ҫӳренине кӑтартса тӑраҭ. Ҫавӑнпа пӗр историк калаҭ: «Народные предания с их мифическим характером для историка драгоценный источник, каждый историк, не принимающий в расчет народных преданий при своем труде, сам отнимает у себя средство дать душу своему произведению, осветить ею тем светом, при котором совершались описываемые им события,“ [1]) тет. Ҫӑвашла вӑл: халӑх каласа хӑварнӑ халапсем, миф майлӑскерсем, историкшӗн пит хаклӑ, кирлӗ йапаласем; историксем тӗрлӗ ӗҫсем ҫинҫен каласа кӑтартнӑ ҫух, хӑйсем ҫырнине ҫӗрӗ ҫун-ҫӗре кӳртес тенӗ ҫух, ҫав халӑх каласа хӑварнисене ним вырӑнне хумасӑр хӑварсан, вара вӗсем хӑйсене хӑйсем пысӑк сийен тӑваҫҫӗ, тени пулаҭ. Ҫапла авалтан йулнӑ сӑмах палӑкӗсем пурте ҫӑваш истори ҫине ҫутӑ ӳкерме пултараҫҫӗ. Анҫах ку йышши палӑксене ҫак таранҫҫен пирӗн пит сахал пуҫтарнӑ, пуҫтарманпа пӗрех. Вӗсене пуринҫен ытла *Никколай Ивановиҭ Ашмарин* тӑрӑшса пуҫтарнӑ. Вӑл ӗҫе тума ӑна вӗреннӗ ҫӑвашсем нумай пулӑшнӑ. Вӗсемех тата ҫавӑн пек палӑксене

[1]) Беляев И. Д. Сказания о начале Москвы. Русск. Вестник, 1868 г., Март, стр. 5

Н. В. Никкољскийе нумай çыра çыра панӑ. Ку вĕсене Хусанти университтете панӑ, теççĕ, анђах ку сӑмах тĕрĕси, тĕрĕс мари, ӑна пĕлместпĕр.

Тĕрлĕ калавсемпе йумахсенђен пуçне, сӑмах палӑкĕсем тата урӑх йышшисем те пур: вĕсем—авалхи ђӑваш сӑмахĕсем. Çак сӑмахсем—палӑксем ђӑн авалтанпах ђӑвашсемпе йунашар пӯрӑннӑ халӑхсенĕн ђĕлхисенђе тӑрса йулнӑ. Вӑл йепле пулнине ак çакӑнтан ӑнласа илме пулаť.

Ђӑвашсем вырӑс аллине кĕрсе ӳксен, вĕсем вара ирĕклĕ те, ирĕксĕр те вырӑсран тĕрлĕ йапала, тĕрлĕ шухӑш, тĕрлĕ пĕлӳ йышӑннӑ. Вĕсене йышӑннӑ майĕпе йађĕсене те йышӑннӑ. Çапла ђӑваш ђĕлхине вырӑс сӑмахĕсем нумай кĕнĕ. Ак вĕсем вырӑсран шыв кӯмели ђĕрес вырӑнне тимĕр савӑт туйаннӑ, вырӑсĕсем ӑна „ведро" теççĕ, ђӑвашсем те ӑна çав йатпах калаççĕ, хӑйсенĕн ђĕлхи картине кӯртсе, кӑшт çеç урӑхлатса „витре" теççĕ. Ун пек йут сӑмахсем ђӑваш ђĕлхинђе нумай: ђус—тес, пиђĕке—бочка, пӑтавкка—пудовка, кĕренкке—фунт (гривенка), уçмушка—осьмушка, йешђĕк—ящик, кӑшаљни—крещение, ђиркӳ—церковь, тата урӑх та нумай[1]). Çак сӑмахсем пурте вырӑс халӑхин куљттурне лайӑх кӑтартса тӑраççĕ. Авалхи ђӑваш сӑмахĕсем те çармӑçсен, муртвасен, перĕмсен, маťарсен ђĕлхисене çавӑн пек кĕре-кĕре йулнӑ та, халиђенех пурӑнаççĕ. Вĕсем авалхи ђӑваш пурӑнӑçне пур йенђен те лайӑх ӑнлантарса пама пултараççĕ, мĕншĕн тесен, етем сӑмахĕ пурте пĕрпĕр йапалана, пĕрпĕр шухӑша пĕлтерсе тӑраť, ним пĕлтермен сӑмах пулман. Çавӑнпа пĕр пĕлĕвçĕ сӑмаха «миниатюрная грамота»—пĕђĕкçĕ çеç çыру, тет[2]). Вӑл çырӑва халӑх çуралсанах çырма пуçланӑ. Пит нумай вĕреннĕ çынсем (Вихман, Мункађђи, Пассонĕн, Реççĕнĕн, Солотнитски, Ашмарин) çав авалхи ђӑваш сӑмахĕсене нумайĕшне пит тĕплĕ тĕрĕслесе тухнӑ та, вĕсем ђӑнахах авалхи ђӑвашсенђен тӑрса йулнине кӑтартса панӑ. Çавӑнпа ђӑваш историне тĕплĕрех çырас текенĕн вĕсене те пĕлсе тӑрас пулаť.

---

[1]) Н. И. Ашмарин. Материалы для иследования Чувашского языка. Казань 1898 г. Часть I, стр. V—VI.

[2]) Будилович А. С. Первобытные славяне в их языке, быте и понятиях по данным лексикальным. Киев. 1878 Часть I, стр. VI.

## 5. Йапала палăкĕсем.

Çак вăхăта çитиҁҁен йулнă авалхи йапала—палăккисем ак çаксем: авалхи хула-тусем, çуртйĕрсем, хула вырăнĕсем (вил-хуласем), вилнĕ çын тăприсем,—вĕсене ҁăвашсем улăп тăприсем теççĕ.—ĕлĕкхи çăвасем, килçуртра тыткалакан йапаласем, çар хатĕрĕсем, ытти пур тĕрлĕ хатĕрсем те, йапаласем те. Мăн Атăлпа Ҁулман Атăл тăрăхĕнҁе авалхи йапаласем пит нумай; пирĕн Ҁăваш Респулĕкĕнҁе те вĕсем сахал мар. Вĕсем те историшĕн калама та çук паха, мĕншĕн тесен, йапала—вăл конкрет факти,—çавăнпа вăл авалхи пурăнăçа куçа кĕретех кăтартса тăрать. Вăл йапала палăккисене ҁăваш хушшинҁе килçуртрах курма пулать. Акă пĕр килкартинҁех хăш ҁухне сăра лаççи те, хура пўрт те, шур пўр те пулаççĕ. Вĕсем çине пăхсан, епĕр ҁăваш килçурҁĕ йепле улшăнса йусанса пынине куратпăр: малтан лаç пек пўрт пулнă, унтан хура пўрт, вара тин шур пўрт. Илĕр савăтсапасенех, вĕсем Ҁăваш Тĕп Муçейĕнҁе нумай: унта турат куçĕнҁен тунă куркасем те, варанккасем те пур, алпа çавăрса туни те пур, тата хитрелетсе, ерешлентерсе пĕтернисем те пур. Çавăн пек куркасене, варанккасене пурне те хăш-хăш ҁăваш килçуртĕнҁе халĕ те тĕл пулма пулать. Мĕне пĕлтерет вăл? Акă мĕне: пурăнан етем кирек кам та кив йапаларан хăнăхса çитнĕ хатĕртен ҁас уйăрăлаймасть, çĕнĕ, йусу хатĕр туйансан та, киввине вăл нумайҁҁен усрать. Çапла вара пĕр карташĕнҁех кивĕпе çĕнĕ пĕрле пулаççĕ: хура пўртпе шурă пўрт, ҁул пуртăпа тимĕр пуртă, турат куçĕнҁен тунă куркапа çавăрса тунă курка, тата ыттисем те. Пуринҁен ытла çавăн пек пăрахăça тухмасăр пурăнакан ватă йапаласене авалтанпа тĕпленсе пурăнакан, шар курман ҁăваш килçуртĕнҁе курма пулать. Вĕсене унта: ват асаттесен йапалисем, тесе хисеплесе усраççĕ. Ун пек йапаласенех тата йурлă пурăнакан ҁăвашăн килçуртĕнҁе те курма пулать, мĕншĕн тесен, вăл, вăйĕ çитейменне кура пăрахăça тухнă кив йапаласене тыткалакаласах пурăнать: пуйанни тимĕр акапа сухаланă ҁух, вăл авалхи ҁăваш сухипех сухалать. Çапла виттĕртерех пăхсан, ҁăваш хушшинҁе авалхи йапаласене темĕн тĕрлине те тупма пулать. Кусем çĕр çийĕнҁисем. Унтан тата çĕр айĕнҁисем те пур. Çĕр айĕнҁисем: улăп тăпри айĕнҁисем, вил-хула айĕнҁисем, кив çăва çинҁисем. Вĕсем те пирĕн ҁăваш хушшинҁе сахалах мар. Анҁах ку таранҁҁен вĕсене пĕтĕмпе тĕрĕслесе те

тухайман. Ҕăваш Çĕр-Шывне пĕлме тăрăшакан Ушкăн 1922-мĕш çулта вăл ĕçе тума тытăнҕĕ[1]), тĕпҕӳ хутне те („опросный лист“, анккет) çаптарҕĕ, вăл хута Ҕăваш Респуплĕкĕ хушшине пур çĕре те салатрĕ, ҕăвашсенҕен пур йалсенҕен те тенĕпе пĕрех хуравсем (ответсем) килҕĕç, анҕах вĕсене майлаштарса çиçтемлесе çитерейменха. Йапала палăккисене тинкерсе пĕлме тытăнни 70 çултан ытла мар. Уншăн малтан хрантсуссенĕн, нимĕҕсенĕн, тата финсен пĕлĕвçисем нумай тăрăшнă, унтан вырăссем те ҕылай тăрăшнă, пуринҕен ытла Хусанти универçитетре вĕрентекен прфессăрсем çак ĕçпе ҕылай хăтланнă. Вĕсем авалхи вил-хулана *Пăлкара* кайа-кайа, çĕре ҕакалаттара-ҕакалаттара нумай йапала тупнă. Вăл йапаласене халĕ нумайĕшне Ҕăвашсенĕн Шупашкарти Тĕп Муçейĕнҕе те курма пулаť.

Ку палăксене пуçтарса, тĕпҕесе, сăнаса пĕлме тăрăшакансенҕен паллăраххисем ак çаксем:

*1. Лиххатҕăв (Лихачев)*. Вăл „Бытовые памятники Великой Болгарии—Аслă Пулкари пурăнăçĕ çинҕен пĕлтерекен палăксем“ йатлă кĕнеке çырнă. Ку кĕнеке çумне çав йапаласене ӳкернĕ карттинсене те вырăнаçтарнă.

*2. Шпилевски (Шпилевский)*[1]). „Древние города и другие болгаро-татарские памятники в Казанской губернии—Пăлкарсемпе тутарсен Хусан кĕпĕрнинҕи авалхи хулисемпе ытти памăтникĕсем“ йатлă кĕнеке çырнă. Ку кĕнекере тĕрлĕ маттериал пит нумай.

*3. Савелйĕв (Савельев)* пит лайăх кĕнеке çырнă. Йаҕĕ „Мухамеданская нумизматика—Пахмат тĕнпе пурăнакансенĕн укçа-тенкисем“. Кунта авалхи ҕăвашсем çинҕен пит тĕплĕ çырнă.

4. Таљкрен (Тальгрен) хрантсусла кĕнеке çырнă. Кĕнекин йаҕĕ „Collection Zoussailov au musee National de finlande a Helsingfors—Хелçинкфорсри Натси Муçейĕнҕе тăракак Саусcайлăвăн коллексисем“. Сауссайлăв вăл Хусан хуçи пулнă, авалхи ҕăвашсенĕн йапалисене пит нумай пуçтарнă. Анҕах ҕейе прикашҕĕкĕсем ăна пит лартнипе, унăн пурăнăçĕ пĕтнĕ, вара мĕн пуçтарнă йапалисене те унăнне сутнă. Вĕсене вырăссем илме кăмăл çитереймен те, финсем илнĕ. Çавăнпа халљ çав авалхи ҕăваш йапалисем Хелçинкфорсри муçейре тăраççĕ.

[1]) Отчеты Общества Изучения Местного Края Чувашской Автономной Области за 1921—23 годы, Чебоксары 1924 г. Стр. 29, 47.

5. Авалхи ђăвашсенђен тăрса йулнă çăва палăкĕсем çинђен пирĕн ђаплă профессăр Н. И. Ашмарин хăйĕн „Болгары и Чуваши“ йатлă кĕнекинђе тĕплĕ каласа çырса панă.

Çаксемсĕр пуçне, авалхи ђăвашсенĕн йеткерĕсем çинђен çыракансем тата пур: Пономарĕв, Высотски, Смолин, урăххисем те. Кирлĕ тĕлте вĕсем кăтартса панисем ђăваш историшĕн пит паха, пит вырăнлă пулаççĕ.

Çак тĕрлĕ йеткерсем пулăшнипе çеç иртсе кайнă ђăваш пурăнăçин çулсене-йĕрĕсене тупса, ђылай ăнласа илме пулаť.

## 6. Çырусем (токкумĕнтсем).

Ку таранђђен каланă палăксем пурте историшĕн хаклă, пит кирлĕ, пит йурăхлă йапаласем, анђах çыру палăкĕсем, токкумĕнтсем, вĕсенђен те пахарах. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен, историйе токкумĕнтсем тăрăх çыраççĕ. Токкумĕнт вăл тахçан ĕлĕк пурăннă етемĕн, йе пуçĕнђи шухăшин, йе вăл тунă ĕçĕн хут çине ÿкнĕ йĕрĕ пулаť. Пур шухăшăн та, пур тунă ĕçĕн те йĕрĕсем палăрса йулмаççĕ, палăракан йĕрсемех нумайĕшĕ çухалаççĕ. Йĕрсĕр иртсе кайнă шухăш та, ĕç те историшĕн ним те мар, çукпа пĕрех. Çавăнпа та хут пĕлмен вăхăтра пулнă етем шухăшĕсем çинђен те, ĕçĕсем çинђен те, пĕлтерекен токкумĕнтсем çук пирки, епĕр тÿррипе сăмах татса калама пултараймастпăр. Çакна кура, пĕр историк калаť: „Ничто не может заменить документов; нет их, нет и истории“ [1])—токкумĕнт тĕшне нимĕн те тăраймасť: токкумĕнтсем çук пулсан, истори те çук пулаť, тет.

Ђăвашсенĕн ђăн авалхи тĕп-аслашшĕсем çинђен çыракансем ытла сахал пулман. Вĕсем çыраççине йе куçпа курса, йе çынтан ламран-лам ыйтса пĕлнине çырса хăварнă. Кунта вĕсем çинђен пурин çинђен те тĕпĕ йĕрĕпех каласа пĕтереймĕпĕр, паллăраххисем çинђен анђах калăпăр.

Ђăвашсенĕн ђăн авалхи аслашшĕсем çинђен (хунсем çинђен) ђăн малтан Киттай историкĕсем çырнă; ђăвашсем çинђен хăйсем çинђен те вĕсем асăннисем пур пулĕ теççĕ. Ђăвашсене киттайсем „пилĕрсем“ тенĕ. Авалхи Киттай историкĕсем хушшинђе ђăн паллăраххи Сы-ма-ђан пулнă. Вăл 2000çул ĕлĕк пурăннă, «Истори çинђен çырнисем» (Исторические Записки) йатлă кĕнеке çырса хăварнă. Ун тăрăх епĕр хун ăрăвĕсем

[1]) Ланглау и Сепобос. Введение в изучение истории. С-Петербург. 1899 г. Стр. 13.

Киттай çывăхнелле хăçан пыни çинђен лайăх пĕлме пултаратпăр. Ђăваш историне тĕплесе çырас пулсан, çав киттайсен историкĕсем çырнисене пĕлмесĕр май килмест пулĕ. Пирĕн ђăваш историкĕсен ӳлĕм вĕсем çинелле тишкерсех пăхмалла пек туйăнаť.

Ђăн авалхи ђăвашсем çинђен хăйсем çинђен çыракансем ытла нумайах пулман. Вĕсенĕн хушшинђе ђăн паллăраххисем ак çаксем:

1. Крек çынни Херотот. Вăл 2400 çул ĕлĕк пурăннă. Херотот хăй ĕмĕрĕнђе нумай çĕре çитсе курнă, Хура тинĕсрен çурçĕрелле пурăнакан халăхсем хушшине те килсе курнă. Вăл хăй курни-илтни çинђен темиçе кĕнеке çырса хăварнă. Çавсенђен пĕринђе (4-мĕшĕнђе) вăл ђăвашсем çинђен те пĕр-ик сăмах çырса хăварнă. Ун тăрăх епĕр авалхи ђăвашсем йепле пурăнăçпа пурăнни çинђен, пăртак та пулсан, пĕлме пултаратпăр.

2. Херототран кайран çыракан крексемпе римсем ђăвашсем çинђен ытлашши нимех те çырмаççĕ, анђах вĕсенĕн пĕр сăмахĕ те хăш ђухне темрен те паха пулаť, мĕншĕн тесен, вăл сăмах, хĕвел шелепи, тĕттĕм çĕре пырса кĕрсен, çутатса йанă пек, ĕмĕр тĕттĕмлĕхне сирсе йарса, авал пулнă ĕçсене кăтартса пама пултараť. Çавăнпа авалхи крексем (Овитийсем, Флакксем) çырнисене пирĕн ђăваш историкĕсен ӳлĕм хытăрах пĕлме пикенесех пулаť.

3. IV—V ĕмĕртен пуçласа ђăвашсем çинђен, пуринђен ытла анатрисем çинђен, ак çаксем ђылай çырнă: Кетрин, Феофан, Иортан, тата урăххисем те. Анатри ђăвашсенĕн историне çавсем çырни тăрăх анђах пĕлме пулаť.

4. Вĕсем çинђенех тата ермен çынни Муççи Хоренски те хăйĕн „Ермен Историйĕ“ (История Армении) йатлă кĕнекинђе пĕр-ик тĕлте çыраť. Унăн кĕнеки тăрăх çеç епĕр анатри ђăвашсем турисенђен хăш вăхăтра уйăрăлса кайнине пĕлетпĕр.

Тури ђăвашсем çинђен пуринђен ытла арапсем çырнă. Вĕсен хушшинђе паллăраххисем ак çаксем:

*1. Фатлан.* Вăл арап çынни, 922-мĕш çулта авалхи ђăвашсенĕн шĕкĕр-хулине Пăлкара хăй килсе курнă. Ăна унта арапсенĕн патши Пахтатри „халиф“ йанă. Ђăваш хунĕ (патши) ун ђухне Пахмат тĕнне кĕнĕ те, вăл тĕне хăй патшалăхĕнђе хытăрах сарасшăн пулнă, миђĕтсем те, крепĕçсем

те тутарасшăн пулнă. Арапсене халиф Пăлкара çавăнпа йанă. Арапсем унта мĕн ђухлĕ пурăннине пĕлмеççĕ. Сахалах пурăнман пулĕ, мĕншĕн тесен, миђĕтсем, креппĕçсем тăвасси, тата тĕн сарасси вăл пĕри те ђас пулакан ĕç мар. Çакăнтан шухăшласан, Фатлан авалхи ђăвашсенĕн пурăнăçне те, йăлисене те лайăх пĕлме пултарнă. Ђăнах та Фатлан ун çинђен пурин çинђен те халифне пит<sup>ă</sup> тĕплĕ хут (токлат) çырса панă. Фатлан токлатне çĕтнĕ тесе шухăшласа пурăнађђĕç ку таранђђен. Вăл мĕн мĕн çырнине тепĕр Йаккут йатлă арап çырнă тăрăх анђах пĕлеђђĕç. Анђах пĕр 6—7 çул пулаťи, пулмаťи, Перççире пĕр кĕнеке çуртĕнђе (пиплиоттĕкре) Фатлан çырнă токлата тупнă. Çапла ĕнтĕ Пăлкари патшалăхĕ çинђен, ђăвашсем çинђен çырнă ђăн авалхи хут çухалман, пур. Анђах ăна халиђђен вуласа тухса, тĕрĕслесе, кĕнеке туса, çаптарса кăларман. Çавăнпа ун çинђен ним калама та çук. Фатлан çырнине Йаккут кĕнекинђен илсе тĕрĕслесе тухаканни Френ пулнă. Ăна вырăсла куçарса çырнине Пљушшар словарĕнђе тупма пулаť.

2. *Тастă.* Ку çыруçă та халиф патшалăхĕнђе пурăннăскер пулнă. Вăл «Книга драгоценных сокровищ»—„Хаклă мул кĕнеки“ йатлă кĕнеке çырнă. Унта пирĕн авалхи ђăвашсем çинђен те, вĕсенĕн кÿршисем çинђен те калаť. Тастă çинђен хăшĕ калаççĕ: кĕнекине вăл Фатланран малтан çырнă теççĕ, хăшĕ тата кайран теççĕ. Çаксенђен хăшĕ тĕрĕсрех, ăна халĕ пĕлме çук. Анђах йепле пулсан та, вăл 913—930-мĕш çулсенђе çырнă теме пулаť. Вăл çырнине Хвољссон вырăсла куçарса, 1869-мĕш çулта кĕнеке туса кăларнă. Вăл кĕнекен йађĕ: „Известия о хозарах, буртасах, болгарах, мад‘ярах, славянах и руссах Абу-Али Ахмеда Бен-Омар Ибн-Даста“. Хвољссон кунта Тастă каланисене ытти çыруçăсем çырнисемпе танлаштарса та кăтартаť. Унăн кĕнеки ђăваш историшĕн пит паха.

3. *Массути.* Вăл Пахтат хулинђе çуралнă, хăй вăхăтĕнђе ђăн нумай вĕреннĕ çынсенђен пĕри пулнă. Вăл çамрăкранпах тĕнђе курса çÿреме пит йуратнă та, нумай çĕре çитсе курнă. Массути калаť: „я углубился в запад настолько, что потерял память о востоке, и зашел так далеко на восток, что забыл совершенно про имя запада„—епĕ хыçал йенне таçта çитех шала кайрăм та, мал-йенне асран йатăм, мал-йенне те инçе кайрăм та, кай йен йатне мантăм, тет.

Çапла Массути ђылай çĕре çитсе куркаланăскер, пит нумай пĕлекенскер, хăй пурăнăçĕнђе ђылай кĕнеке çырса хăварнă. Анђах унăн кĕнекисем пуртепе пĕрех çĕтсе пĕтнĕ. Йулнисенђен пĕри „Ылттăн Улăх“ йатлă. Вăл кĕнекере Массути хăй курса çÿренĕ çĕр-шывсем çинђен, халăхсем çинђен, вĕсенĕн историйĕсем çинђен каласа çырнă. Унта ђăвашсем çинђен те каланă. Массути ђăвашсем çинђен те, тата Атăл тăрăхĕнђе пурăнакан ытти халăхсем çинђен те хăй куçĕпе курнине çырман, тĕрлĕ çынсенђен ыйтса пĕлнине анђах çырнă. Çавăнпа вăл çырни пурте шанђăклах мар. Авалхи ђăвашсем çинђен калани Хвољссон çырнă кĕнекере те пур, тата Карккави çырнă „Сказания Мусульманских писателей“ йатлă кĕнекере те пур. Массути 950-мĕш çулта вилнĕ.

4. *Истахри.* Вăл перс пулнă, Истахра йатлă хулара Перçеппăлре çуралнă. Вăл та Пахмат тĕнне тытса пурăнакан халăхсем патне нумай çĕре çитсе курнă. Вăл 959-мĕш çул тĕлнелле „Климăт Кĕнеки“[1]) йатлă кĕнеке çырнă. Ку авттăр та Атăл çине хăй килсе курман. Çавăнпа вăл çырнине пурне те тĕрĕс теме пулмасть. Кун çинђен те Карккави кĕнекинђе вулама пулать.[2])

5. *Паљхи.* Вăл „Книга видов земли“—Çĕр тĕсĕн кĕнеки“ йатлă кĕнеке çырнă. Унта ђăвашсем çинђен ђылай каланă. Паљхи йе 940-мĕш, йе 951-мĕш çулта вилнĕ.

6. *Хаукаљ.* Вăл Пахтатра çуралса ÿснĕ, Истахрипе пĕр вăхăтра пурăннă. Вăл пĕђĕклех кеокрафи кĕнекисем вулама пит йуратнă. Çавăнпа унăн тĕрлĕ çĕре çитсе курас кăмăл та çамрăклах уçăлнă. Ђăнах та вăл, çитĕнсе çитсен, тĕрлĕ çĕре çитсе курнă. Вăл 976—7-мĕш çулсенђе „Книги путей и государств“ Патшалăхсемпе çулсен кĕнекине çырнă. Унта авалхи ђăвашсем çинђен те ђылай каланă[3]).

7. *Муккатеççи.*—950-мĕш çулта пĕр кĕнеке çырнă. Унăн йађĕ: „Книги лучшего резделения в познании климатов“—Климăтсене пĕлме ђипертерех уйăракан кĕнекесем“ йатлă.

---

[1]) Авалхи кеокрăфсем çĕре, пољусран пуçласа, екваттăра çитиђђен, касăмăн-касăмăн уйăрнă. Ăна вĕсем кун тавăрăннă ђухнехи йара куппа çĕр вăрăмĕшне кура уйăрнă. Касăмне климăт тенĕ. Арапсем çĕре 7 климăта уйăрса çырнă.

[2]) Гаркави. Сказания Мусульманских писателей. Спб. 1870 г. Стр. 187—203.

[3]) Çавăнтах, стр. 214—236.

Муккатеççи кĕнекине мухтаççĕ. Пĕри ăна ђăн ђаплă кеокрăф тет. Хăй çитсе курман çĕршывсем çинђен вăл ыттисенђен ыйтса пĕлсе çырнă. Кунăн кĕнекинђе те Пăлкар çинђен калани пур[1].

8. *Пекри.* Арап сынни пулнă. Вăл кунтан инçетре, Испаңире, пураннă. Пекри пек нумай вĕреннĕ çын сахал пулнă. Вăл кĕнекесем нумай çырса хăварнă. Çав тĕрлĕ кĕнекесем хушшинђе ђăн ђапли „Книга путей и стран"—Çулсемпе тĕрлĕ çĕршывсем çинђен калакан кĕнеке". Çак кĕнекере Пекри авалхи тĕрлĕ хуласем çинђен, хуларан хулана кайакан çулсем çинђен, тĕрлĕ халăхсем çинђен çырат. Унта авалхи ђăвашсем çинђен каланисем те ђылай. Пекри 1094-мĕш çулта ватăлса вилнĕ[2].

9. *Анталуçи-Карнатти.* Вăл 1135-мĕш çулта авалхи ђăвашсенĕн шĕкĕр хулине Пăлкара хăй килсе курнă. Хăй курни-илтнисем çинђен кĕнеке çырса хăварнă. Унта ђăвашсем çинђен те, вĕсенĕн çĕр-шывĕ çинђен те нумай калат. Вилессе Анталуçи 1169-мĕш çулта вилнĕ.

10. *Тшеваликки.* Вăл Пăлкар хулине килсе курнă, кĕнеке çырса хăварнă. Вăл Пăлкар çинђен çырнине ытти арап çыруçисем те асăнаççĕ. Тшеваликки 1145-мĕш çулта вилнĕ.

11. *Йаккут.* Вăл 1186-мĕш çулта çуралнă, 1229-мĕш çулта вилнĕ. Вăл „Большой словарь"—Сăмахсенĕн пысăк кĕнекине çырнă. Вăл кĕнекере авалхи ђăвашсем çинђен нумай каланă, унта Фатлан çырнине те кӳртнĕ.

12. *Каçвини.* Ку 1175-мĕш çул тĕлнелле „Географический Словарь—Кеокрафи сăмахĕсен кĕнекине" çырнă. Кунта авалхи ђăвашсенĕн шĕкĕр-хули çинђен çырни пур. Анђах Каçвини ђăвашсемпе славăсене уйăрма пĕлмен. Унăн çав айăп пур.

13. *Апул-Фет.* 1273—1331-мĕш çулсенђе пурăнса вилнĕ. Вăл нумай вĕреннĕ ђаплă çын пулнă. Çири çĕрĕнђе пурăннă. 1321-мĕш çулта вăл „Кеокрафи" йатлă кĕнеке çырнă. Унта Пăлкар хули çинђен çырни пур.

---

[1] Гаркави. Сказания Мусульманских писателей. Спб. 1870 г. стр. 383.

[2] Записки Императорской Академии Наук. Т. XXXI, кн. 2, прилож. № 3. Известия Аль-Бекри и других авторов о Руси и славянах. Часть 1. (Статьи и разыскания А. Куника и барона В. Розена).

14. *Варти.* 1349-мӗш ҫулта вилнӗ, „Жемчужина чудес —Тӗлӗнтерекен ӗнҍӗ" йатлӑ кӗнеке ҫырса хӑварнӑ. Унта Пӑлкар ҫинҍен асӑнни пур.

15. *Паттут.* Ку ҫыруҫӑ 1302-мӗш ҫулта ҫуралнӑ, 1377-мӗш ҫулта вилнӗ. Вӑл йатарласа Пӑлкара килсе курнӑ. Унта 3 кун пурӑннӑ. Хӑйӗн кӗнекинҍе вӑл хула ҫинҍен каламасӑр хӑвармасть.

16. *Тимешки.* Вӑл XIV-мӗш ӗмӗр пуҫламӗшӗнҍе пурӑннӑ, „Космокрафи" йатлӑ кӗнеке ҫырса хӑварнӑ. Ҫав кӗнекере вӑл авалхи ҍӑвашсем Пахтат хулине ҫӳрени ҫинҍен калать.

17. Перс ҫыннисем: *Рашшит Етин.* (+1319 ҫ.), *Ел-Аҫҫир* (XIV ӗм.), *Апуҍ-Каҫи* ҍӑваш ҫӗр-шывне тутарсем ҫӗмӗрсе туртса илни ҫинҍен калаҫҫӗ.

18. Хыҫал йенҍи ҫыруҫӑсем тури ҍӑвашсенҍен инҫетре пурӑннӑ. Ҫавӑнпа вӑл ҫыруҫӑсем вӗсем ҫинҍен ҫырмаҫҫӗ. Анҍах ҍӑваш патшалӑхӗ пӗтес умӗн те, пӗтсен кайран та, хӑшхӑш ҫынсем ҍӑваш хушшипе иртkелесе ҫӳрекеленӗ. Ҫапла 1335-мӗш ҫул пулас умӗн каттоликсенӗн миҫҫионерӗ *Йулийан* монах ҍӑваш хушшипе мал йеннелле иртсе кайнӑ. Вӑл хӑй курни-илтни ҫинҍен хут ҫине ҫырса каласа панӑ.

Йулийан вӑл пӗр йулташӗпе пӗрле мушарсен тӗп ҫӗрне, (халҍхи Пушкӑрт ҫӗрне) кайнӑ, анҍах ҫул ҫинҍе лешӗ пӗр хулара вилнӗ, вара ку пӗҍҍенех тепӗр хулана ҫитнӗ те, унта пӗр мулла патне тарҫа кӗнӗ. Кайран лешинпе пӗрле Пӑлкар патшалӑхне ҫитнӗ, унтан Пушкӑртсем патне кайса курнӑ. Кайалла тавӑрӑннӑ ҍухне, вӑл шыв тӑрӑх муртвесем виттӗр кайнӑ. Ҫапла Йулийан ҍӑвашсем ҫинҍен те, пушкӑртсем ҫинҍен те, муртвесем ҫинҍен те ҫырать. Ытти ҫыруҫӑсем ҫинҍен кунта каламасан та йурать.

Авалхи ҍӑваш ҫинҍен тата вырӑс *леттопиҫӗсем* ҫинҍе ҫырнисем те пур. „Летопись (леттӑпӗҫ) тени вӑл „ҫулсерен мӗн мӗн пулнисене йӗркипе ҫырнӑ кӗнеке" тени пулать. Ҫав кӗнекесене вырӑс манахӗсем ҫырнӑ. Ҫак манахсем пӗр вырӑс ҫеҫ „ырӑ таса халӑх" тенӗ, ытти халӑхсене пурне те „таса мар, ирсӗр халӑхсем" тесе шутланӑ. Ҍӑвашсене вӗсем, Пахмат тӗнне тытнӑшӑн, пушшех йуратман, „пассурмансем" тенӗ. Ҫавӑнпа вӗсем ҍӑвашсем ҫинҍен ҫырма пӗрре те кӑмӑл туман, ҫырмасӑр хӑварма май килмен ҍух, анҍах ҫыркаланӑ,

ҫырсан та, пурне те тӳррипе ҫырман.[1] „Малтанхи леттопис — Начальная летопись“ текенни пӗр мар: пӗринђе ҫырнийех теприн ђе пађах ҫук, пулсан та, йе кӗскетсе, йе вӑрӑмлатса ҫырнӑ. Ҫапла Никкӑн леттӑппӗҫӗ Лавренти леттӑпӗҫӗнђен вӑрӑмрах, Таттишђӗв ҫырнинђе тата лешсенђе каламаннисем нумай. Ђӑваш историне ҫыракансенӗн ҫакна асран йама йурамаст̆.

XVI-мӗш ӗмӗрте вырӑс аллине кӗрсе ӳкнӗ ђӑвашсем ҫинђен калакан токкумӗнтсене тӗрлӗ архивсенђе тупма пулат̆. Вӑл архивсем хушшинђе ђӑн паллисем Мускавпа Ленинкратра. Провинтсинђи архивсенђен ђӑвашсемшӗн хаклӑраххисем Ђул-Хулара, Хусанта, Улђйанӑвскра (Ђӗмпӗрте), тата Сараттура пур. Пуринђен ытла ђӑвашсем ҫинђен ҫырнӑ токкумӗнтсем Ђул-Хулара ђылай пулмалла. Халӗ епӗр вӗсенђе мӗн пурри-ҫуккине тӗрӗссипе пӗлейместпӗр, мӗншӗн тесен, вӗсене никам та ку таранђђен тӗрӗслесе тухман. Ђӑваш респуплӗкӗнђи токкумӗнтсене халӗ Ђӑваш Тӗп-Архивӗ пуҫтарат̆. Епӗр пӗлетпӗр: авалхи токкумӗнтсем ђӑваш хушшинђе ђылай пулас пулат̆, анђах вӗсене ђӑвашсем темшӗн ахалех пытарса усраҫҫӗ. Апла тунипе никама та нимӗн усси те ҫук. Вӗсем ђас-ђасах вут-кӑварпа пӗтеҫҫӗ,

[1]) «Христианское мировозрение летописца с'узило его географический кругозор относительно восточно-европейской равнины, заставило его опустить в своем труде очень много важных географических и этнографических сведений о нехристианской части восточной Европы,—сведений, которые без всякого сомнения были повсеместны в его время, и, конечно, должны были быть ему вполне доступны. Известно, как относится летописец к славянству, непосредственно вошедшему в состав Русского государства в эпоху его языческого быта и к инородческим соседям Руси, связанным с нею с самого начала общею историческою жизнью, и язычникам финского и литовского происхождения: он ограничивается относительно их краткими и сухими указаниями, хотя из них и видно, как основательны и точны были его сведения; но магометанский мир, с которым Русь стояла в тесной географической связи, Болгары и Хозары, не заслужили от него ничего, кроме кратких упоминовений, да и то только в крайне настоятельных случаях, при невозможности обойти их молчанием. Побережья же Каспийского моря, так хорошо изведанные Руссами в знаменательных походах XV-го в., для него как бы не существуют, точно также как Арабы, с которыми Русью велись столь обширные торговые сношения. Весьма вероятно, что такому умолчению Начальной Летописи о представителях магометанства на крайнем юго-востоке европейской равнины могли быть и другие частные причины. Барсов Н. П. Очерки исторической географии. Варшава. 1885 г. Стр. 6.

тата нимĕн пĕлмен çынсем вĕсене выртăнсăрах та çуркаласа пĕтереççĕ. Çавăн пек тĕрлĕ авалхи палăксене, йеткерсене, токкумĕнтсене пурне те Ђăваш Тĕп Муçейне парас пулаť. Унта вĕсем тĕплĕн упранса тăраççĕ, вĕсене унта вуласа тухса пĕлме те тăрăшаççĕ.

## 7. Ђăваш историн палăкĕсене пикенсе пуçтарас пулаť.

Ытти халăхсенĕн пĕлĕвçисем хăйсенĕн историне пĕлтерекен палăксене тахăçанах пуçтарнă, вĕсене тахăçанах пит тĕплĕ пĕлсе çитнĕ. Вĕсенђен хăшĕ пĕр йышши палăксене кăна пĕлесшĕн тăрăшнă, теприсем—тепĕр йышшисене, вичçĕмĕшсем—тата урăх йышшисене. Çапла вĕсенђен хăшĕ мĕн ĕмĕрĕ иртеђђенех авалран йулнă йапаласене шыраса, тупса пĕлсе пынă, вĕсене *аркхеолоксем* теççĕ; хăшĕ авалхи укçатенкĕсене пуçтарса, вĕсене тĕрĕслесе пĕлме тăрăшнă, кусене *нумисматçем* теççĕ; тата хăшĕсем авалхи çырусене шыраса тупса вуланă, çаксене *палеокрафсем* теççĕ; çавăн пек тĕрлĕ пĕлĕвçĕсем тата урăх йышшисем те нумай пулнă. Вĕсем хăйсенĕн ĕçне питĕ таса пĕлнĕ, çавăнпа вĕсем йĕрлесе, тĕпђесе, сăнаса пĕлни историшĕн питĕ хаклă, пит усăллă.

Ытти халăхсенĕн çапла, анђах пирĕн ђăвашсенĕн вăл апла мар: пирĕн ку ĕçсене пĕрне те туса çитермен, туса çитерме мар, пуçласа та йарайман. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен, вĕреннĕ çынсем пирĕн ђăвашăн, сахал пулнă, пулманпа пĕрех: пире нумай вĕренме паман. Халĕ тин, револђутси хыççăн, ђăваш йаш-кĕрĕмне вĕренме ирĕк çитрĕ. Çавăнпа ĕнтĕ малашне вĕренекен çамрăксенĕн ђăваш историйĕн авалхи палăкĕсене (памăťнĕкĕсене) çине тăрсах сăнаса пĕлсе гухмалла пулаť, мĕншĕн тесен, *вăл ĕçе туса пĕтермесĕр ђăваш историне тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлме ниймпле май та урăх тупăнас çук.*

## 8. Ђăваш историне çыракансем.

Авалхи ђăвашсенĕн шĕкĕр хули Пăлкар йатлă пулнă. Унăн йађĕпе вĕсене хăйсене те пăлкарсем тенĕ. Çак пăлкар ђăвашĕсем çинђен ђипер йĕркелесе, çиçтемлесе çыра пуçлани ытла нумайах пулмасť.

Вырăс историкĕсенђен кунта ђăн малтан Таттишђĕве асăнас пулаť. Вăл 1686-мĕш çулта çуралнă, вилессе 1750-мĕшĕнђе вилнĕ. Таттишђĕв вăл хăй ĕмĕрĕнђе тĕрлĕ çĕрте пурăннă: Урал тăвĕсем çинђе, Ĕлĕмпĕрте (Оренбург) тата

Аçтăрханта. Çавăнпа вăл Атăлпа Урал таврашĕнђе пурăнакан вак халăхсене лайăх пĕлнĕ. Вăл тата нумай вĕреннĕ ăслă çын пулнă. Вăл «История Российская с самых древнейших времен». йатлă 5 томлă кĕнеке çырнă. Ăна вăл 20 çул ытла çырнă. Ђăн малтанхи томне вăл вилсен, тин 1768-мĕш çулта пиђетлесе кăларнă, йулашкине, 5-мĕшне, 1848-мĕшĕнђе çеç. Хăйĕн историне вăл тĕрлĕ вырăс леттопиçĕсенђен илсе çырнă. Вĕсенђен нумайĕшĕ халĕ çук, çĕтнĕ. Вырăс историксем ăна нумайђђен шанмасăртарах тăнă, халĕ ĕнтĕ шанаççĕ. «Добросовесность Т., раньше подвергавшаяся сомнениям . . . в настоящее время стоит выше всяких сомнений» тет пĕри [1]). Вăл: ĕлĕк Таттишђĕв тӳрлĕхĕ тĕлĕшĕнђен пулсан иккĕленеђђĕç... халĕ ĕнтĕ пĕртте иккĕленни çук, тени пулаŧ. Хăйĕн историнђе Таттишђĕв пур историксенђен малтан ђăвашсене пăлкарсенђен йулнă халăх тесе пĕлтерет, пăлкарсем çинђен те вăл нумай тĕлте калаŧ. Ђăваш пурăнăçĕнђе пулнă хăш-хăш авалхи ĕçсене епĕр Таттишђĕв историйĕ тăрăх анђах пĕлме пултаратпăр.

2) *Френ.* Ку çуралнă 1782-мĕш çулта, вилнĕ 1851-мĕшĕнђе. Вăл нумай вĕреннĕ пит ђаплă орийентталист, нумисмат. Ăна орийентталист тесе Йевроп халăхĕсенђен мал йенђе пурăнакан халăхсенĕн ђĕлхисене, историйĕсене, тата пурăнăç йĕркисене тĕплĕ пĕлнĕрен калаççĕ, нумисмат тесе çав халăхсенĕн укçи-тенкисене пĕлнĕшĕн. Ђăнах та вăл, Хусанти Университтетре профессăр пулнă ђух, авал Атăл таврашĕнђе пурăннă халăхсенĕн пурăнăçне нумай йĕрлесе тĕпђесе шыранă, авалхи арапсем çырнă хутсене тупа-тупа вуласа, кĕнекесем çырнă: авалхи «вырăссем» çинђен пăлкарсем çинђен, хусарсем çинђен, тата ытти халăхсем çинђен те. Хусантан Ленинкрата куççан, унта вăл Наук Аккатеминђе Аçи Муçейне уçнă. Çапла калама çук ăнăçлă ĕçленипе Френ ытти пĕлĕвçĕсен куçне те çав мал йенђи тĕрлĕ халăхсем çинелле пăхтара пуçланă. Френ çырасса нимĕђле çырнă, вăл çырнине хăшне-хăшне вырăсла куçарса, тĕрлĕ шурналсенђе пиђетлесе кăларнă. Авалхи ђăвашсем çинђен вăл 1816—17-мĕш çулта «О древнейшей монархии волжских болгар—Атăл çинђи пăлкарсенĕн ђăн авалхи патшалăхĕ çинђен» йатлă кĕнеке çырнă. Епĕр вăл кĕнекене, темĕн ђухлĕ

[1]) Брокгауз—Ефрон. Энциклопедический словарь. Спб. 1901 г. Т. XXXII-А Стр. 674.

шыраса та, тупса вулаймарăмăр. Пит шел те, анђах нимĕн тума та пулмасť.

3) *Ертмăн.* Ку 1795-мĕш çулта çуралнă, вилессе 1862-мĕш çулта вилнĕ. Вăл Хусанти универçиттетре Френ вырăнне профессăр пулнă. Ертмăн Френ ђухлĕ пултараймэн, анђах вăл та Хусанта 1817-мĕш çулта, март уйăхĕнђе, авалхи ђăвашсем çинђен пĕр статйа çырса хăварнă. Унăн йаđĕ: «История булгаров" Пулкарсенĕн историйĕ. Çак статйине вăл 1821-мĕш çулта „Сын отечества" йатлă шурналăн 6-мĕш №-ђе пиђетлесе хăварнă. Ертмăн, ку статйана çырнă ђух, Френ куçĕнђен пăхса çырнă. Апла пулсан та, вăл çырни авалхи ђăваш историйĕшĕн паха, мĕншĕн тесен, вăл çĕнĕ маттериалсем те нумай кўртнĕ.

4. *Каçтĕв М.* Вăл мăн Атăлпа Ђулман Атăл пулкарĕсем çинђен—„О булгарах волжских или камских" йатлă статйа çырнă. Ăна 1827-мĕш çулта «Вестник Европы» йатлă шурналăн нойапĕрпе теккапĕр уйăхĕнђе тухнă №№-сенђе пиђетлесе кăларнă. Ку статйара та ђăваш историшĕн кирлĕ йапаласем пăртак пур.

5). *Кеппен П.* 1836-мĕш çулта „Журнал Министерства Народного Просвещения" йатлă шурналăн XII-мĕш пайĕнђе „О волжских болгарах" йатлă статйа пиђетлесе кăларнă. Ку пĕђĕк статйара та кирлĕ тĕлсем пур.

6). *Крикорйĕв В. В.* 1836-мĕш çулта „О волжских болгарах" йатлă статйа çырнă та, ăна икĕ çĕрте пиђетлесе кăларнă: Энциклопедический Лексикон'ăн VII-мĕш томĕнђе, тата „Библиотека для чтения" йатлă шурналăн 1836-мĕш çулхи II-мĕш №-ђе. Ку статйара вăл, Френ кĕнекинђен илсе, авалхи Фатлан çырнине вырăсла куçарнă. Статйа хакне халиђђенех çухатман.

7). *Пересĕн.*—Хусанти универçиттетре профессăр пулнă. Вăл „Булгар на Волге" йатлă кĕнеке çырнă та, 1853-мĕш çулта пиђетлесе кăларнă. Пересĕн çырни халĕ те йурăхлă йапала.

8). *Колуповски П.* 1888-мĕш çулта „Киевская Старина" йатлă шурналăн XXII-мĕш томĕнђе „Болгары и хозары" йатлă статйине пиђетлесе кăларнă. Вăл статйара Колуповски Пăлкар ђăвашĕсен историне, хăй вăхăтĕнђе мĕнле маттериалсем пулнă, çавсем тăрăх çыраť. Тĕплĕ статйа.



ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

9. *Проф. И. И. Çмирнов* хăйĕн „Волжские болгары“ йатлă статйине Товнар-Саппољски кăларнă „Русская история в очерках и статьях“ йатлă кĕнекене кӳртнĕ. Ку статйана вăл XIX-мĕш ĕмĕр вĕçĕнђе тĕрлĕ ăслăлăхçăсем пуçтарса, тĕрĕслесе тухнă маттериалсем тăрăх çырнă. Вăл авалхи пăлкарсем ђăваш пулнине те лайăх кăтартса парать. Статйана ђĕрĕ, вирлĕ, тĕплĕ ăспа çырнă. Ђăваш историшĕн хаклă йапала.

10) Авалхи ђăвашсенĕн шĕкĕр-хули Пăлкар çинђен çыракан историксем те ђăваш истори çинђен асăнмасăр иртмен. Вĕсем ђылай паллăраххисем ак çаксем: Паллас, Çвинйин, Невоструйĕв, тата урăххисем те.

11) Вырăс историне çыракансем те авалхи ђăвашсем çинђен, пĕр-ик виç сăмах та пулсан, каламасăр хăвармаççĕ, хăшĕ-хăшĕсем ђылайах çыраççĕ. Ун пеккисем ак çаксем: Карамçин, Соловйов, Покотин, Трађђевски, Кљуђђевски, Платтонăв, Пахалей, тата ыттисем те.

12) Ђăваш историкĕсенђен пĕр К. И. Комиссарăв çеç[1]) ђăн авалхи ђăвашсенĕн ђăн авалхи историйĕ çинђен пĕр кĕнеке çырса кăларнă. Вăл кĕнекене вулама-итлеме илемлĕ ђĕлхепе çырнă, унта ђăвашăн ђăн аваллăхне хытă йĕрлесе çӳрени курăнать. Анђах унăн пĕр кăлтăкĕ пур: ђăвашсем пăлкарсенђен пулни çине иккĕленерех пăхни, тата ђăвашсенĕн аслашшĕсем пеђђенексем пулнă тени. Ку пĕртте тĕрĕс пулман. Ăна халĕ пурте пĕлеççĕ.

Çак кĕнекесенĕн пуринĕн те пĕр çитменлĕхĕ пур: вĕсем пурте, пăлкарсем çинђен çырнă ђухне, вĕсем çине вилсе пĕтнĕ халăх çине пăхнă пек пăхаççĕ. Хаљхи ђăвашсем ĕлĕк пăлкарсем пулнă текенĕсем те, кĕнекисене çырнă ђух, темĕскершĕн ун çинђен йăлтах манаççĕ, мĕншĕн тесен, вĕсем, çырнă ђух, ĕлĕкхипе хаљхине нихăçан та танлаштарса пăхмаççĕ. Шухăшласа пăхсан, ђĕрĕ тăракан халăхран хăйĕнђен пуçне, унăн ĕлĕкхи пурăнăçĕ çинђен нимĕнле токкумĕнт те, нимĕнле йапала та вирлĕрех каласа парасла пек туйăнмасть. Пĕр проф. Çмирнов çеç, пăлкарсем çинђен каланă ђух, вĕсем çине тĕллесе пăхать те, унтан хаљхи ђăвашсем çине те

---

[1]) 1920-мĕш çулта „Жизнь национальностей“ йатлă шурнал хăйĕн пĕр №-ђе пирĕн „Краткий очерк истории чуваш“ йатлă пĕр пĕђĕк статйана пиђетлесе кăларђĕ. Вăл статйана епĕр Ђăваш Тĕпĕçтăвкомĕ хушнипе çырнăђђĕ. Унтан тата 1925-мĕш çулта „О происхождении чуваш“ çапăнса тухрĕ.

пăхса илет, вара тин хăйĕн сăмахне татса каласа хурать. Ку таранђђен çырнă кĕнекесенђе кăлтăксем пулсан та (етем алли-ури тунă ĕçре кăлтăксăрри мĕн пур!), вĕсене епĕр пит хакла хуратпăр, мĕншĕн тесен, вĕсенђе кăларса каласа хунă шухăшсенђен пуçне, тата историшĕн кирлĕ тĕрлĕ маттериалсем пит нумай. Çавăнпа вĕсенĕн хăйсенĕн хакне ђас çухатас çук. Пирĕн шухăшпа вĕсене пурне те пĕрлештерсе, пĕрик кĕнеке туса, пиђетлесе кăларсан, пирĕн анђах çуралакан ђăваш историне ӳссе çитĕнме вĕсем пит нумай пулăшас пек туйăнать. Çак кĕнекене çырнă ђухне, епĕр вĕсенĕн маттериалĕсемпе нумай усă курасса ĕмĕтленетпĕр.

## 8. Ђăваш историйĕн пайĕсем.

Ђăваш халăхĕн пурăнăçĕ шыв пек тан йухса пыман. Ђăн малтан ђăвашсем аслă çеçен хирсенђе ирĕкре кĕтӳсем кĕтсе пурăннă; унтан, Атăл таврашне килсе вырнаçса, уйрăм патшалăхпа пурăннă, вăл патшалăха, Пăлкар патшалăхĕ тенĕ; унтан тата тутарсен аллине кĕрсе ӳксе, 300 çул ытла хĕсĕкре пурăннă; унтан кайран вырăс аллине кĕрсе ӳксе, 366 çул ытла тата хĕсĕкрех пурăнăçпа пурăннă; ђи йулашкинђен, Октăпĕр Револђутсийĕ пулсан, ирĕке тухнă та халĕ Аслă Сойусри ытти халăхсемпе пĕрле сотсиалисла пурăнăçа тума пикенсе тăрăшать. Çапла ĕнтĕ ђăваш историне 5 пай туса çырма пулать:

1. Ђăваш халăхĕн ђăн авалхи пурăнăçĕ çинђен;
2. Пăлкар патшалăхĕнђи пурăнăç çинђен;
3. Тутар аллинђи пурăнăç çинђен;
4. Вырăс аллинђи пурăнăç çинђен;
5. Аслă Револђутси хыççăнхи пурăнăç çинђен.

## II.

### Ђăваш камран пулнă.

1. Ђăваш халăхĕ çинђен ĕлĕк мĕн шухăшланă.
2. Ђăваш камран хунаса кайнине йепле пĕлме пулаť.
3. Ђăваш ђĕлхи ун çинђен мĕн калаť.
4. Ђăваш йăлисем, тата хатĕрĕсем мĕн калаççĕ.
5. Антрополоки мĕн калаť.
6. Паллă пĕлĕвçĕсем мĕн калаççĕ.
7. Пăлкарсем камсем пулнă.
8. Хунсем тесе йепле халăхсене каланă.

---

# II. Ђăваш камран пулнă.

## I. Ђăваш халăхĕ çинђен авал мĕн шухăшланă?

Çĕр пиђĕ пит аслă. Пăхсан, унăн вĕçĕ-хĕрри курăнмаст. Çак аслă çĕр çинђе темиçе тĕрлĕ халăх пурăнат: вырăссем, тутарсем, çармăçсем, нимĕђсем, акăлђансем, йаппунсем, киттайсем, йеврейсем, тата урăх та нумай, шутласа та кăларас çук. Анђах вĕсем темĕн ђухлĕ пулсан та, пĕлĕвçĕсем вĕсене ђĕлхе тăрăх йăхăн-йăхăн уйăраççĕ. Çапла вĕсем акăлђансене вырăссене, нимĕђсене, тата Кайри Йевропра пурăнакан ытти халăхсене те нумайĕшне пĕрле *арь йăхĕ* теççĕ; тутарсене, тĕрĕксене, пушкăртсене, вĕсемпе пĕрле тата ытисене те нумайĕшне *тĕрĕк йăхĕ* теççĕ, кусем пуринђен ытла Атăлтан мал йенелле Аçи варне çитех сарăлса пурăнаççĕ; киттайсене, тунхуссене, монхолсене, тата ыттисене те пĕрле *монхол йăхĕ* теççĕ; арапсене, йеврейсене *çим йăхĕ* теççĕ; ирçесене, мăкшăсене, çармăçсене, вĕсемпе пĕрле тата ытти тĕрлĕ халăхсене нумайĕшне *фин йăхĕ* теççĕ.

Пирĕн ђăвашсем ĕнтĕ мĕнле йăхран пулнăши?

Пирĕн ђăваш халăхĕ мĕнле йăхран тухса ĕрђесе кайни çинђен 250 çул хушши тĕрлĕ пĕлĕвçĕсем тĕрлĕ калаçнă: хăшĕ вĕсене тĕрĕксем тенĕ, хăшĕ финсем, йĕ финленсе кайнă тĕрĕксем тенĕ. Ђăваш хушшине килсе курнă малтанхи çўревçĕсем Холланти çынни Витсĕн (Виндсен), Швет çынни Стреленпĕрк (Страленберг), унтан Миллер аккатемик ђăваш халăхне тĕрĕк йăхĕнђен тухнă халăх тенĕ. Стреленпĕрк ђăваш ђĕлхине Çĕпĕрти тутарсенĕн, тата йаккутсенĕн ђĕлхипе йури танлаштарса пăхнă та, пурте вĕсем пĕр майлă калаçнине курнă, ђăваш таврашĕнђи ытти халăхсене вăл фин йăхĕсем тенĕ. Стреленпĕрк çырнине пурте пĕлнĕ, анђах çапах та ђăвашсенĕн ђĕлхи тĕрĕклĕ ђĕлхесемпе пĕр майлă пулсан та, пĕлĕвçĕсем нумайђђен вĕсене фин йăхĕ тесе пурăннă! [1]) Ку

---

[1]) Записки Императорской Академии Наук. Т. XXXII, ч. I, стр. 118—119.

шухăша пурчнђен ытла çирĕплетсе, вăй кўртсе йараканни Шлетсĕр (Шлецер) пулнă. Унăн аллине ђăн малтанхи ђăваш краматтĕкĕ пырса кĕрсен, вăл ăна пăхса тухнă та, тин хăй тĕрĕс каламанни çинђен пĕлтернĕ. Анђах автториттетлĕ çын калани вăл, тĕрĕс пулмасан та, нумайа пырат̆. Çавăнпа нумай пĕлекен Френ те, тен ун хыççăн кайса пулĕ, ђăваш ђĕлхине «смесь наречий»—тĕрлĕ ђĕлхесем хутшăннипе пулнăскер тенĕ [1]). Халĕ те пĕлĕвçĕсем нумайĕшĕ ђăвашсене финсенĕн çумне хушма пăрахаймаççĕ. Ленинкратри Вырăс Муçейĕнђе ĕçлекенсем 1923-мĕш çулта кăларнă кĕнекере ђăвашсем çинђен тĕрĕкленнĕ финсем тесе çырнă: «подвергшиеся сильному влиянию турецкой группы народностей» тенĕ [2]). Карамçин та, [3]) Ратлов та ђăвашсем çинђен çаплах шухăшланă [4]). Профессăр Н. И. Ашмарин те ĕлĕкрех çапла шухăшланă, кайран тин вăл ђăвашсем малтан таса тĕрĕк ђĕлхипех калаçнă та, кайран, финсем хушшине килсе кĕрсен, вĕсенĕн ђĕлхи урăхланса кайнă тесе шухăшланă. «Нечужеродцы исказили перенятое ими тюркское наречие, а тюрки (чуваши) утратили чистоту своего родного говора, приняв в свою среду чуждый элемент в лице финнов Поволжья» тет вăл [5]).

Çапла тĕрлĕ шухăшлани вăл ĕлĕк ђăваша лайăх пĕлменнинђен килнĕ. Халђ ĕнтĕ аплах тавлашмаççĕ, мĕншĕн тесен, халђ ђăвашăн ђĕлхине те, пурăнăçне те, пур йăлисене те ĕлĕкхинђен нумай лайăх пĕлеççĕ. Çавăнпа пĕлĕвçĕсем ђăваш мĕнле йăхран ĕрђесе кайнине лайăх пĕлсе çитнĕ.

## 2. Ђăваш камран хукаса кайнине йепле пĕлме пулат̆.

Халăхăн тĕп йăхне пуринђен ытла калаçакан ђĕлхе кăтартса тăрат̆. Вăй кĕрсе çитнĕ ђĕлхе вăл ђас улшăнми çирĕп тăракан йапала. Халăхăн патшалăхĕ пĕтсен те, тĕнĕ улăшăнсан та, йăлисем пăрахăçа тухсан та, ђĕлхи ђасђасах пĕтмесĕр йулат̆. Ђăвашсенĕн ĕлĕк хăйсенĕн патшалăхĕ, хăйсенĕн тĕнĕ, тĕрлĕ йăлисем пулнă. Вĕсенĕн патшалăхĕ пĕтнĕ,

---

1) Çавăнтах.

2) Этнографический Отдел Русского Музея. Петроград, 1923 г.

3) Карамзин. История Государства Российского. Спб. 1818 г. Примеч. 74, стр. 43.

4) Зап. Импер. Акад. Наук. Т. XXXII,

5) Ашмарин Н. И. Материалы для исследования чувашского языка. Казань. 1898 г. Стр XXI—XXIV. Опыт исследования чувашского синтаксиса. Казань. 1903 г. Часть I., стр. VI.

авалхи тĕне пăрахса, темиçе тĕн те улăштарнă, йăлисем нумайĕшĕ пăрахăçа тухнă, пĕр ђĕлхи çеç ку таранах çирĕп тăрат. Улăшăнасса вăл та пурăннăçемĕн улăшăнат, анђах хăй тĕсне йăлтах йамаст. Çавăнпа ђĕлхене халăхăн палли теççĕ. Халăхăн хăйĕн уйрăм ђĕлхе пулмасан, вăл вара уйрăм халăх пулаймаст. Халăхăн ђĕлхи çухалсан, ăна хăйне те çухалнă теме пулат. Çав халăхăн ђĕлхи пĕтнĕ тени вăл халăх хăй те пĕтнĕ тени пулат. Унăн йађĕ пулсан та, хăй çук пулат, мĕншĕн тесен, унăн ђĕлхипе калаçакан пулмаст. Ав ĕлĕк Тунай шывĕ патĕнђе пăлкарсем пурăннă. Вĕсенĕн ђĕлхи ђăвашла ђĕлхе пулнă. Пурăнсан пурăнсан, вĕсем хăйсенĕн ђĕлхине пăрахса, славă ђĕлхине йерсе кайнă. Халĕ вĕсене, ĕлĕк пăлкар пулнă пулсан та, славă халăхĕ теççĕ, мĕншĕн тесен, пăлкарсем вĕсем, славăсемпе хутăшса кайса, ђăнах та йăлтах пĕтнĕ. Çавăн пекех тата Сĕве шывĕн сулахай йенђе XVIII-мĕш ĕмĕрте тутар тĕсĕ те пулман, ђăваш йалĕсем анђах пулнă. Анђах пурăна киле, çав йалсенђе пурăнакан ђăвашсем хăйсенĕн тăван ђĕлхине пăрахса тутарла вĕренсе кайнă та, халĕ вĕсене тутарсем теççĕ, мĕншĕн тесен, вĕсем тутара тухнă. Çапла ĕнтĕ халăхăн ђĕлхи çухалсан, вăл хăй те çухалат. Ђĕлхесĕр халăх çĕр çинђе тупма çук. Ђĕлхе вăл халăхпа пĕрлех çуралат. Çавăнпа та ĕнтĕ пĕр халăха тепĕр халăхран пуринђен малтан ђĕлхе тăрăх уйăраççĕ.

Нумайђђен ђăваш ђĕлхи çинђен тĕрлĕ калаçнă. Хăшĕсем ăна финле ђĕлхе тенĕ. Епĕр ăна куртăмăр. Анђах ђăваш ђĕлхипе финле ђĕлхесем хушши пит инçе. Ун çинђен ытлашши вакласа калаçмасан та йурат, пĕр ђĕлхе-ăсти (филолăк) калани те çитĕ. Вăл калат: „доказать финно-угорское происхождение чувашского языка невозможно“[1])— ђăваш ђĕлхи укăрпа финсенђен пуçланса кайнине ни йепле те кăтартса пама пулас çук, тет.

Ђăваш ђĕлхине тĕрĕкле ђĕлхесемпе пĕр шута, пĕр хисепе кўртме те май çук, мĕншĕн тесен, унăн пысăк уйрăмĕсем пур. Акă çак ђăвашла сăмахсенех илер те, тĕрĕкле ђĕлхесемпе танлаштарса пăхар:

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| *Ђăвашла*: | вăтăр, | пăр, | вар, | капăр, | есир (сер), | тир. |
| *Тĕрĕкле*: | утыз, | буз, | ўзек, | керпез, | сез, | тез. |

Кунтан мĕн курăнат? Ђăвашла Р пулсан, тĕрĕкле З пулат.

[1]) Доклады Российской Академии Наук. 1924. Стр. 295.

Илер тата ак çак сăмахсене:

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| *Ђăвашла:* | хĕл, | хĕвел, | кĕмĕл, | алăк, | тул. |
| *Тĕрĕкле:* | хыш, | койаш, | кöмöш, | ишек, | тыш. |

Кунта ђăвашла Л пулсан, тĕрĕкле Ш пулаť. Çапла ĕнтĕ 54 тĕрĕкле ђĕлхесем хушшинђе пĕр ђăваш ђĕлхи çеç Р-лă, Л-лă ђĕлхе, ыттисем пурте З-лă, Ш-лă ђĕлхесем. Кунсăр пуçне вĕсенĕн хушшинђе тата урăх пысăк уйрăмсем те сахалах мар. Çак фактă вăл пит пысăк фактă, мĕншĕн тесен, унăн йĕрĕпе кайсан, епĕр ђăвашсенĕн тĕп аслашшĕсене шыраса тупма пултаратпăр.

## 3. Ђăваш ђĕлхи мĕн калаť.

Ђăнах та сăнаса пăхарха: çак епĕр пурăнакан Атăл таврашĕнђе ĕлĕк йепле халăх Л-па Р-лă ђĕлхепе калаçнă-ши? Ун пек калаçакан халăх пулнăши, пулманши? Ун пек халăх пулнă. Вăл халăх—пăлкар халăхĕ пулнă.

Çав пăлкарсем, çын вилсен тусан, виле тăпри çине ђул йупа лартнă, йупи çине хăйсенĕн ђĕлхипе арап пуквисемпе[1]) çын мĕн йатлине, вăл хăш çулта вилнине, тата вăл мĕнле çын пулнине кăтартса çырнă. Кунсăр пуçне тата çав ђулсем çинех хăйсенĕн туррине хисеплесе, Коран кĕнекинђен тĕрлĕ сăмахсем илсе çырнă. Ку сăмахсене арап ђĕлхипе çырнă. Çавăн пек ђулсене ђăвашсем *палăк* (пелĕк) теççĕ.

Çавăн пек ђулсем Мăн Атăлпа Ђулман Атăл тăрăх пит нумай. Ђылайђђен вĕсене асăрхамасăрах пурăннă. Анђах пĕр 200 çул ытларах пулаťи, пулмасти, вĕсене пĕлĕвçĕсем асăрханă та, вĕсем çинђе мĕн çырнине пĕлесшĕн пулнă. Çакăншăн пуринђен ытла Клапротпа тата ытти пĕлĕвçĕсем те нумайĕшĕ тăрăшнă, анђах вĕсене тĕпĕ йĕрĕпе пĕлсе вуланни Н. И. Ашмарин пулнă.

Вăл çак ђулсем çине çырнă çырусенĕн тĕпне йĕрне шыраса тупнă: вăл арап сăмахĕсем хушшинђе ђăваш сăмахĕсене нумай тупнă. Ђăвашла пĕлмен пĕлĕвçĕ, çав сăмахсене пĕлмен пирки ăнланаймасăр, нумайђђен аптăранă, апла та, капла та шухăшланă. Н. И. Ашмарин, ђăвашла пĕлекенскер, вĕсем мĕне пĕлтернине лайăх каласа панă. Вăл тупнă ђăваш сăмахĕсем ак çаксем: кун, ернекун, ерне, уйăх, çул, ул (ывăл), хĕр, хуçа, иккĕ, тăваттă, пиллĕк, улттă, çиђђĕ, саккăр, тăххăр, вăтăр, çĕр, тата урăххисем те ђылай.

[1]) Вăл пуквăсемпе хаљ тутарсем çыраççĕ.

Çак сăмахсенђен «саккăр, тăххăр, вăтăр, çĕр, хĕр» сăмахсене уйрăмăн илсе пăхсан, пăлкар ђĕлхи Р-лă ђĕлхе пулни тӳрех курăнат̆. Ђăнах та ытти тĕрĕксем вĕсенĕн вĕçĕнђи Р-не пăрахса, унăн вырăнне З калаççĕ: секиз, доккуз, отыз, йӧз, хыз, теççĕ. „Пилĕк“ тенĕ сăмах тата пăлкар ђĕлхи Л-лă ђĕлхе пулнине кăтартат̆, мĕншĕн тесен, тĕрĕксем Л вырăнне вăл сăмахра Ш тăваççĕ: „биш“ теççĕ. Çапла ĕнтĕ кунтан мĕн курăнса тăрат̆? Пăлкар ђĕлхи тĕрĕкле ђĕлхесем пек пулман, вĕсенђен нумай урăхла ђĕлхе пулнă. Ђăваш ђĕлхипе танлаштарсан, вăл лапах унăн картине кĕрет: сăмахĕсем те, вĕсенĕн кӳлеписем те йăлтах ђăвашла. *Çапла ĕнтĕ ђĕлхе тĕлĕшĕнђен пулсан, пăлкарсене тӳрех пĕр иккĕленмесĕр, ђăвашсенĕн аслашшĕсем теме пулат̆.*

Тата ытти йенђен пăхсан та, пăлкарсем ђăвашсенĕн аслашшĕсем пулни лайăх курăнса тăрат̆. Илер ак ђăваш ђĕлхине кĕрсе йулнă арап сăмахĕсенех.

Халăхпа халăх хутшăнса пурăннă ђух, вайсăртараххи, куђттурсăртараххи, куђттурлинђен тĕрлĕ йапала туйанат̆. Лешин ђĕлхине вара кунăн ђĕлхинђен нумай сăмахсем пырса кĕреççĕ, халĕ ђăваш ђĕлхине вырăс сăмахĕсем кĕнĕ пек. Çавăн пек сăмахсенђен те ђăваш камран пулнине ђухласа илме пулат̆.

Авалхи пăлкарсем Муххамет тĕнне тытса пурăннă (вăл тĕне халĕ тутарсем тытса тăраççĕ). Пăлкарсем Муххаметне хăйне *Пахмат* тенĕ. Çавăнпа вырăссем пăлкарсенĕн тĕнне „вера бохмича“ тенĕ. Çак тĕне пăлкарсене арапсем килсе вĕрентнĕ, вĕсем вађђи миђĕтсем, шкулсем уçнă та, унта арапла вĕрентнĕ. Çавăнпа пăлкар ђĕлхине арап сăмахĕсем нумай кĕнĕ. Ђăнах та, пирĕн ђăваш ђĕлхинђе таса арап сăмахĕсем тем ђухлех. Тĕслĕхшĕн калăпăр: авал, халăх, лайăх, тĕнђе, селĕм, хырăç, ĕмĕр, капăр,—çаксем пурте арап сăмахĕсем. Ун пек сăмахсем ђăваш ђĕлхинђе 100 ытла. Вĕсене никам та йутран килсе кĕнĕ сăмахсем тесе шутлас çук, мĕншĕн тесен, вăл сăмахсем пирĕн ђĕлхене пит авал килсе кĕнĕ те, епĕр вĕсем йутран килсе кĕнине туйми пулнă. Ђăнах, та пăлкарсем Пахмат тĕнне кĕни 1000 çул ытла пулат̆ ĕнтĕ. Авалхи тĕне кĕмен ђăвашсенĕн Пахмат тенĕ йат та пулнă. Ытти арап сăмахĕсем тата сутуилӳ тунипе нумай кĕнĕ: пайта, ахах, ерек, хак, сум, тата ыттисем те пурте çавăн пек сăмахсем. Хăшĕсем шухăшлаççĕ: çав сăмахсем

ђăваш ђĕлхине тутарсенђен килсе кĕнĕ пулĕ, теççĕ. Апла шухăшлани вăл тĕрĕс мар, мĕншĕн тесен, пĕр пек арап сăмахĕсене тутарсем пăсарах калаççĕ, ђăвашсем пĕртте пăсмаççĕ. Примерсем:

арапла: харам хавас хак вакыт
ђăвашла: харам хавас хак вăхăт
тутарла: йăрăм йăуăс как бахыт

Кун пек примерсем тата нумай. Вĕсем çине пăхсан паллах: тутарсем арап сăмахĕсене пăсарах калаççĕ. Ђăвашсем вăл сăмахсене тутарсенђен йышăннă пулсан, çавăн пекех пăсса каланă пулĕђђĕç. Ђăвашсенĕн пăсăкĕ çук, çавăнпа вăл сăмахсене вĕсем тахăçан авал арапсенђен тӳрех таса халлĕн йышăннă. Çапла ђăваш ђĕлхинђи арап сăмахĕсем те ђăвашсемпе пăлкарсем пĕр пулнине лайăх кăтартса тăраççĕ.

Авалхи пăлкар халăхĕ тата пит пысăк сутуилӳ туса пурăннă. Вĕсем патне сут тума таçти хуçасем те çӳренĕ. Арапсенђен пуçне, пуринђен ытла кăнтăрти перссем нумай килнĕ. Çав перссемпе хутшăнса пурăннă пирки, пăлкар ђăвашĕсен ђĕлхине перс сăмахĕ нумай кĕнĕ. Ђăнах та пирĕн ђăваш ђĕлхинђе перс сăмахĕ сахал мар. Ун пек сăмахсем ак çаксем: тараса, хуçа, сутакан, пурçăн, сум, хысна, паха, ураса, ерне, шăматкун, Пихампар, нађар, тата та нумай. Хаљхи ђăвашсем пăлкарсем пулман пулсан, çак сăмахсем те ђăваш ђĕлхинђе пулман пулĕђђĕç, мĕншĕн тесен, урăх çĕрте ниçта та ђăвашсемпе перссем тĕл пулма пултарайман.

Ç а п л а ё н т ĕ ђ ă в а ш ђ ĕ л х и н ђ и п е р с с ă м а х ĕ с е м т е ђ ă в а ш с е м п е п ă л к а р с е м п ĕ р п у л н и н е к ă т а р т с а т ă р а ç ç ĕ.

Авалхи пăлкарсем тата куљттурлă халăх пулнă. Вĕсемпе йунашар пурăнакан тĕттĕм халăхсем вĕсенђен пур ырă йапалана йышăннă,—тĕрлĕ ĕçе вĕреннĕ, пурăнăç йĕркине кĕнĕ. Çав йапаласемпе пĕрле çав халăхсенĕн ђĕлхине пăлкар сăмахĕсем те нумай кĕнĕ. Паçăр анђах каларăмăр: ђăвашсем халĕ, вырăссенђен пĕрпĕр йапала йышăнсассăн, çав йапалана вырăслах калаççĕ, терĕмĕр. Çапла ђăваш ђĕлхине вырăс сăмахĕ пит нумай кĕрет: витре—ведро, сут—суд, кантур—контора, влаç—власть, тата урăх та тем ђухлех. Çавăн пек пăлкар сăмахĕсене те йунашар халăхсем нумай йышăннă. Çав сăмахсем пĕтĕмпех—ђăваш сăмахĕсем. Акă илĕпĕр матйарсене. Вĕсем халĕ куљттурлă халăх, Карпат тăвĕсен леш йенђе,

ђăвашсенђен пит инçетре пурăнаççĕ, анђах авал, пĕр пин çул ĕлĕкрех, вĕсем тĕттĕм халăх пулнă, кунта, Атăлпа Урал таврашĕнђе, пăлкарсемпе йунашар пурăннă. Çавăн ђухне вĕсем пăлкарсенђен çĕрĕçлеме, выљăх-ђĕрлĕх усрама, килçуртпа пурăнма вĕреннĕ. Çавăнпа вĕсенĕн ђĕлхине пăлкар сăмахĕсем кĕмесĕр тăма пултарайман. Ђăнах та маťйар ђĕлхинђе ђăваш сăмахĕ пит нумай, тĕслĕхе ак çаксене калăпăр: ака, çурла, йăран, хăмăл, капан, хăмла, кил, сак, арăм, арман, хуран, ĕне, пăру, çăпала, çурта, тата урăх та нумай. Пăлкарсем ђăваш пулман пулсан, пĕр ђăваш сăмахĕ те маťйарсен ђĕлхинђе пулман пулĕђђĕ, мĕншĕн тесен, хаљхи ђăвашпа вĕсем нихăш тĕлте те, нихăçан та хутшăнса пурăнмаççĕ.

Ĕнтĕ ку та хаљхи ђăвашсемпе пăлкарсем пĕр халăх пулнине лайăх кăтартса тăраť.

## 4. Ђăваш йăлисем, тата хатĕрĕсем мĕн калаççĕ.

Пирĕн ђăвашсем пăлкар халăхĕ пулнине ђĕлхерен пуçне тата йăласем лайăх кăтартса тăраççĕ. Вĕреннĕ çынсем лайăх пĕлеççĕ: малта пыракан халăхсем те нумайĕшĕ авалхи йăлисене пĕтĕмпех пăрахаймаççĕ, нумайĕшĕ çирĕп тытса тăраççĕ. Вырăссем мĕн ĕмĕртенпех çимĕк тăваççĕ, ђăвашсем ђӳк тăваççĕ, халĕ те пăрахаймаççĕ. Кайра пыракан халăхсем çавăн пек авалхи йĕркесене тата çирĕпрех тытса туса тăраççĕ, мĕншĕн тесен, тĕп аслашшĕсем кăларнă йăлисем вĕсенĕн пурăнăçне йĕркене кӳртсе пыраççĕ. Çапла авалхи йăласем, пĕр сыпăкран тепĕр сыпăка куçа куçа пырса, хытса çитеççĕ те, вĕсенĕн ӳттирĕпе ђунне виттĕр çапаççĕ, вара етемĕн тепĕр наттурĕ вырăннех пулаççĕ. Ун пек халăх йăлисене нимĕн туса та пĕтерме пулмасť, вăйпа пĕтерме хăтлансан та, сухатма йăвăр.

Çавăнпа ку халăх мĕнле халăхпа туртуллине пĕлмешкĕн ăслăлăхçăсем йăласене танлаштара - танлаштара пăхаççĕ. Ђăнах та икĕ халăхăн ђĕлхерен пуçне, тата йăлисем те пĕр майлă пулсан, вара вĕсене тӳрех пĕр кăкран, пĕр тымартан тухнă халăх теме пулаť.

Ђĕлхерен шутласан, ђăвашсем пăлкар халăхĕпе пĕр пулнине епĕр куртăмăр. Халĕ тата йăлисене танлаштарса пăхар, мĕн пулĕ.

Пăлкарсем сумласа хисеплекен умĕнђе çĕлĕке хывса хул хушшине хĕстерсе тăнă; авалхи тĕнпе пурăнакан ђăвашсем

те çавăн пек хăтланаççĕ: вĕсем турриие кĕлтунă ђух, çĕлĕксене хул хушшине хĕстерсе тытса тăраççĕ. Авалхи пăлхарсем хăнисене ырă сунса укçа-тенкĕ панă; пирĕн ђăвашсем те туй тунă ђух, йе ĕçкĕ-çикĕре укçасем паркалаççĕ. Авалхи пăлхарсем тата, хăйсенĕн хăнисене пăхса, ĕçтерсе, çитернĕ ђух, аш татăкĕсене кашни хăнине аллине парса тыттарнă; ку йăла ђăвашсен те пур: вĕсем ĕçкĕ-çикĕре „мăн турамăш куркине“ ĕçес умĕн кашни хăнана ал вађђи тыттараççĕ.

Авалхи пăлкарсенĕн тĕрлĕ йăлисенђен тата çакна асăнас пулат: приђак тăвас пулсан, вĕсем хăйсенĕн умне хĕç тăратнă [1]). Кун пек йăла ђăвашсенĕн те ĕлĕк пулнă. Вăл ак çакăнтан паллă: ђăваш йаш-кĕрĕмĕсене салтакра вырăс çарĕн улпуђĕсем приђака икĕ хĕç урлă кўртнĕ [2]). Йулашкинђен тата пĕр çак йăла çинђен çеç пĕр-ик сăмах хушса калас пулĕ. Пăлкарсем, хăйсенĕн ђаплă хăнисене апатланă ђух, кашнин умне уйрăм сĕтелсем лартнă. Ку йăла та ĕлĕк ђăвашсенĕн пулнă: вĕсем те, туй тунă ђухне, тĕпелри сĕтелрен пуçне, пĕр пўртрех кĕрўшĕ умне те, хĕрĕ умне те, уйрăм сĕтелсемпе апат лартнă [3]). Çапла ĕнтĕ ку йĕркесем те авалхи пăлкарсемпе хађхи ђăвашсем пĕр пулнине ђипђиперех кăтартса тăраççĕ.

Кусемсĕр пуçне, ђăвашсем пăлкарсем пулнине тата ак çакăн пек йапаласем те лайăх кăтартса тăраççĕ. Ђăвашсем кĕл туса ђўкленĕ ђухне, кĕллисенђе «Пăлкарта выртан ырăпа» «Пўлерте выртан ырра» асăнаççĕ. Унтан тата вĕсенĕн хушшинђе авалхи Пăлкар хулине тутарсем туртса илни çинђен тĕрлĕ калавсем, „авалхисем каласа хăварнисем“ нумай çўреççĕ. Вĕсене хăшне-хăшне хут çине ўкере-ўкере кĕнекесем туса кăларнисем те пур. Унтан тата пăлкарсемпе ђăвашсене илсен, ак çакна та манас пулмаст. Авалхи пăлкарсем, ун çинђен малта каларăмăр,—пысăк сутуçăсем пулнă. Савелйĕв каланă тăрăх, вĕсем йармăк тăва-тăва суту-илў тунă. Вăл йĕрке пирĕн ђăваш хушшинђе ку таранђђенех тытăнса тăрат. Çуркунне пулса, иртсе кайсан, çăва кĕрсен, ђăваш хушшинђе ĕлĕкрех кашни йалта тенĕ пек йармăксем пулађђĕç. Вĕсене „пуху“ теђђĕç. Унта вара йалăн-йалăн

---

[1]) Гильфердинг А. Собрание сочинений. Спб 1868 г. Т. I, стр. 27; 70 (67-й вопрос папе).

[2]) Северный Архив 1827 г. № 11, стр. 232.

[3]) Çавăнтах, № 9, стр. 65.

пуҫтаранаҕҕӗҫ те, выҕаса-кулса, суту-илӳ тӑваҕҕӗҫ. Ку йӑла Тунай ҫинҕи пӑлкар хушшинҕе те пур. Унти пӑлкарсем йепле йармӑксем тӑва-тӑва ирттернисем ҫинҕен Аҕпӗрт Ҭумон пит лайӑх каласа кӑтартнӑ [1]). Ҕӑвашсем пӑлкарсемпе пӗр кӑкран тухман халӑх пулнӑ пулсан, тата вӗсем пӑлкар патшалӑхӗнҕе авалтанпа пурӑнман пулсан, ҫакӑн майлӑ йапаласем ҕӑваш хушшинҕе пӗрре те пулман пулӗҕҕӗҫ.

Малалла тата ак ҫакна та калас килет. Ҕӑваш хушшинҕе ку таранҕҕенех тыткалакан хатӗрсем нумайӗшӗ ӗлӗкхи пӑлкарсенӗнни пекех. Илӗпӗр ака пуҫ тӗрекӗсене, йе суха тимӗрӗсене,—вӗсене авалхи пӑлкар таврашӗнҕе ҫӗр айӗнҕен нумай тупнӑ,—ҫав тӗренсемпе тимӗрсем тӗсӗнҕен те, кӳлепинҕен те йӑлтах авалхи ҕӑваш хатӗрӗсем пек. Авалхи ҕӑваш ҫависем те,—вӗсене халӗ ҕӑвашсем „вӑрӑ ҫави“ теҫҫӗ,—пӑлкар ҫависем пекех. Ҫапла авал ҕӑваш хушшинҕе тыткаланӑ хатӗрсем нумайӗшӗ пӑлкар хатӗрӗсемпе пӗр пекех, вӗсене уйӑрма та ҫук. Паллах: вӗсем, ҕӑвашӑн аслашшӗсенҕен тӑрса йулнӑ йеткерӗсем. (Пӑх 1—2 ӳкерҕӗксене).



I-мӗш ӳкерҕ. Пӑлкар йапалисем.

## 5. Антропполоки мӗн калаҭ.

Ҕи йулашкинҕен тата пӑлкарсемпе ҕӑвашсем ҫинҕен антропполоки мӗн калаҭ, ҫавна пӑхар. Хаҕхи ҕӑвашсемпе авалхи пӑлкарсенӗн пуҫ купҕашкисене пӗр Похтанӑв (Богданов) йатлӑ пӗлӗвҫӗ виҫе-виҫе илсе танаштарса пӑхнӑ. Ҫапла туса, вӑл акӑ мӗн тупнӑ: 1) авалхи Пӑлкарта пурӑнакан ҫынсенӗн пуҫӗсем, вӑтам шутпа шутласан, 100 ҫынтан

[1]) Русская. Старина, 1888 г. т. I. стр. 380.

76-шин ђăсăкла (долихоцефалсемпе субдолихоцефалсем) пулнă, ђăвашсенĕн—77-шин; 2) авалхи пăлкарсем пуринђен ытла сарлака питлĕ-куçлă пулнă, ђăвашсем те çавах. Çапла çаксенђен шутласан, хаљхи ђăвашсемпе авалхи пăлкарсем ўт-пў тĕлĕшĕнђен пĕр пекрехех пулнă. Анђах вĕсене лап пĕр пекех теме пулмасть, мĕншĕн тесен, авалхи пăлкарсенĕн çăвар мађђисем сарлакарах (широконебность), куç харшисем



**2-мĕш ўкерђ.** Пăлкар çулăвĕсем. Вĕсем ђăваш хушшинђе халĕ те пур.

айаларах (низкоорбитность) пулнă. Çавăн пек уйрăмсем тата урăххисем те пур. Вăл уйрăмсем пуринђен ытла ђăвашсем темиçе çĕр çул хушшинђе тĕрлĕ халăхсемпе хутăшкаланăран, тата пурăнăç та пĕрмай улăшăнса пынăран пулнă пулас пулать. Çапла антропполоки йенђен лайăхрах, тĕплĕрех, пат татăклах пĕлес тесен, авалхи пăлкарсемпе ђăвашсенĕн авалхи çăвисене (масарĕсене) ђавала ђавала, шăммисене иле-иле пăхас пулать, тата хаљхи ђăвашсене те антропполоки йенђен сăнаса тухас пулать.

Ку ĕçе вăрăма йамасан, историшĕн пит аван пулĕђђĕ.[1])

Çапла ĕнтĕ ђăваш камран пулнă тесессĕн, ђĕлхепе йăласем, тата авалхи тĕрлĕ йапаласемпе антропполоксем кăтартнă тăрăх, епĕр пĕр иккĕленмесĕр ђăвашсем пăлкарсенђен пулнă теме пулта ратпăр.

## 6. Паллă историксемпе ђĕлхе пĕлĕвçисем ун çинђен мĕн калаççĕ.

Тĕплĕ историксем те, паллă линквиссем те (ђĕлхе пĕлекенсем) ђăвашсене пăлкарсем теççĕ. Кунта пурне те асăнмасан та, хăшне-хăшне асăнăпăр. Таттишђĕв ђăвашсене пăлкарсенђен тăрса йулнă хура халăх—„оставшее (от болгар) поселянство" тет [2]). Профессăрсем: Савелйĕв [3]), Трапевски [4]), Пахалей [5]), Похотин [6]), И. Çмирнов [7]), М. Сокколов [8]), тата ыттисем те нумайĕшĕ ђăвашсене пăлкарсенĕн йăхĕ теççĕ. Аккатемик С. Ф. Платтонăв вĕсем çинђен ак çапла калать:

---

[1]) Богданов вывăђĕсем ак çаксем:

„Население древних булгар по тем кладбищам, кои были рассмотрены в этой статье, было по преимуществу длинноголовое (долихоцефалическое и субдолихоцефалическое)...

„2. Булгарские древние черепа представляют гораздо больший процент широкоскулистых монголовидных физиономий, чем булгарские турецкие, и в этом отношении они ближе к чувашам, как по преимуществу широкоскулые".

„3. Если принимать брахицефалию за признак, характеризующий славянские черепа, то жители древних булгар не были славяне. Они не были также чувашами (по крайней мере такими, какими мы их имеем в наших черепах), так как представляют с ними отличие во многих характеристичных признаках (по преобладанию низкоорбитности, по широконебности и проч).

„4. Для действительно удовлетворительного решения вопросов о жителях древних булгар, требуются: а) систематические раскопки в различных местностях Булгар для получения удовлетворительных серий черепов определенных эпох и определенных местностей и сравнение их с черепами близ лежащих доисторических могил Казанской губернии (курганы и проч.); б) систематические иследования черепов несомненно чувашских и поверка полученных результатов измерениями над живыми чувашами". Антр. Выст. 1879 г. т. III стр. 377.

[2]) Татищев, История России, т. I, стр. 458.

[3]) Савельев П. Мухамеданская нумизматика..., стр. X ст. IX

[4]) Трачевский А. Русская история. Спб. 1895 г. ч. I, стр. 13.

[5]) Багалей Д. И. Русская история. 1914 г. т. I, стр. 187.

[6]) Погодин А. Л. История Сербии. Спб. 1909 г., стр. 9.

[7]) Довнар-Запольский. Русская история—ч. I, стр. 28.

[8]) Соколов М. Из древне истории болгар. стр. 92.

„их потомки, чуваши, представляют теперь слабое и малоразвитое племя“—вĕсенĕн йăхĕсем, ђăвашсем, халĕ имшер, сахал вĕреннĕ халăх[1]), тет. Ытти историксем те нумайĕшĕ ăна çаплах калаççĕ. Вĕсене кунта асăнмасан та йурать.

Ђăваш ђĕлхине кура, линквиссем те ĕнтĕ ђăвашсене пăлкар йăхĕ теççĕ. Пăлкар ђĕлхи ђăваш ђĕлхипе пĕр пулнине ђăн малтан тутар пĕлĕвçи Хуççейн Фейс-Ханов кăтартса панă[2]), унтан проф. Н. И. Илмински[3]), аккатемик Куник[4]) проф. Н. И. Ашмарин[5]), проф. Н. Ф. Каттанăв[6]), тата ыттисем те нумайĕшĕ. Вĕсенђен пĕри, Н. Н. Поппе, калать: „близость чувашского языка к булгарскому настолько велика, что мы можем считать нынешний чувашский язык потомком булгарского языка, а чувашей потомками деревенского населения булгарского царства“—пăлкар ђĕлхипе ђăваш ђĕлхи хушши ытла та çывăх, çавăнпа епĕр хаљхи ђăваш ђĕлхине пăлкарсенђен йулнă ђĕлхе теме, ђăвашсене хăйсене Пăлкар патшалăхĕнђи йалсенђе пурăннă халăхран йулнă халăх теме пултаратпăр, тет[7]). Йулашкинђен тата аккатемик Н. Я. Марр каланине илер. Вăл ђăвашсене: „творцы восточно-европейских национальных об‘единений, хазарского и болгарского“—Мал-йенђи Йевропра хазарсемпе пăлкарсене пĕрлештерсе натси тăваканнисем тет[8]).

Çапла ĕнтĕ ђăваш халăхĕн аслашшĕ пăлкар халăхĕ пулать. Çавăнпа пăлкарсенĕн историйĕ вăл ђăваш историйĕ пулать.

## 7. Пăлкарсем—камсем пулнă.

Епĕр пĕлетпĕр: ђăваш ђĕлхи, урăхла каласан, пăлкар ђĕлхи, тĕрĕкле ђĕлхесенђен пуринђен те уйрăм тăрать. Лешсен Ш-па З пулсан, ђăвашсенĕн Р-па Л пулать. Ку йенђен пăхсан, ђăваш ђĕлхи вăл Аçи варринђе пурăнакан монхолсен

---

[1]) Проф. С. Ф. Платонов. Лекции по русской истории — Петроград. 1917 г., стр. 54.

[2]) Известия Русск. Археол. Общ. 1863 г, т. IV, стр. 395.

[3]) Çавăнтах, т. V, стр. 80.

[4]) Записки Импер. Акад. Наук. 1879 г., т. XXII, кн. 2, стр. 118—161.

[5]) Ашмарин Н. И. Болгары и чуваши. Казань. 1902 г.

[6]) Катанов Н. Ф. Чувашские слова в болгарских и татарских памятниках. Казань. 1920 г.

[7]) Поппе Н. Н. О родственных отношениях чувашского и тюрко-татарских языков. Чебоксары. 1925 г. стр. 9—10.

[8]) Марр Н. Чуваши-яфетиды на Волге. Чебоксары. 1926 г. стр. 53.

ђёлхи йеверлĕ. Вăл ђёлхере те тĕрĕксенĕн Ш-па З пулсан, Р-па Л пулаť. Акă примерсем:

| | | |
|---|---|---|
| тĕрĕкле: | таш | бузагы, бузау (кăркăсла) |
| ђăвашла: | ђул | пăру |
| монхолла: | ђылахун | бирагу |

“хун“—сăмахăн вĕçĕ. Кунтан паллах: хăш-хăш сăмахсем ђăвашла монхолсенĕн сăмахĕсемпе пĕр пек, пĕр майлă. Çакăн пек сăмахсем—вĕсем ђăн авалхи сăмахсем. Вĕсем монхолсемпе тĕрĕксем уйăрăлса урăхланса кайађђен пулнăскерсем. Вĕсем тăрăх епĕр тŭрех: ђăвашсенĕн ђăн малтанхи аслашшĕсем монхолсемпе пĕр кăкран, пĕр тымартан тухнă теме пултаратпăр. Ун ђухне Ш-па З-лă ђёлхесем пулман, Л-па Р-лă пĕр тĕп ђёлхе çеç пулнă.

Çак тĕп ђёлхерен вара, пĕр тĕшрен икĕ хунав тухнă пек, икĕ тĕслĕ ђёлхе тухса кайнă: пĕри—хаљхи монхолла калаçакан халăхсенĕн тĕп ђёлхи, тепри—хаљхи тĕрĕксемпе ђăвашсенĕн тĕп ђёлхи. Ку акă ăçтан паллă. Пирĕн ђăваш ђёлхинђе тĕрĕкле сăмахсем пит нумай, вăл анђах мар, ђăваш ђёлхин ĕрĕнки те, йĕрки те тĕрĕкле ђёлхесенни пекех, вĕсенĕн йеверлех. Çавăнпа тĕрĕк ђёлхи çинђен ђăвашла тŭрех куçарма пулаť. Ак илер пĕрпĕр тутар йурринех,—тутар ђёлхи—вăл тĕрĕкле ђёлхе.

| **Тутарла:** | **Ђăвашла:** |
|---|---|
| Йакăрăп ђăктăм урамка, | Ђупрăм, тухрăм урама, |
| Килкен алма саттуђĕ, | Килнĕ улма сутакан; |
| Кăсăл алма кăс кулăнта, | Хĕрлĕ улма хĕр аллинђе, |
| Кăсă йĕкĕт кулăнта. | Хĕрĕ йĕкĕт аллинђе. |

Ку мĕне пĕлтерет? Кунтан мĕн калама пултаратпăр епĕр? Ђăвашла ђёлхепе тĕрĕкле ђёлхесем пĕр йеверлĕ, пĕр ĕрĕнкĕллĕ пулни—вăл хаљхи ђăвашсемпе тĕрĕксенĕн аслашшĕсем тахăçан авал, монхолсенђен уйăрăлса кайсан кайран, нумайђђен пĕрле пурăннине, пĕр тĕп ђёлхепе калаçнине пĕлтерсе тăраť. Çав тĕп-ђёлхепе калаçнă ђухне, Ш-па З-лă сăмахсем пулман, урăхла каласан, тĕрĕкле ђёлхе пулман, пĕр тĕп ђёлхе çеç пулнă. Темĕн ђухлĕ вăхăт иртсен,—епĕр ăна пĕлместпĕр, халĕ пĕлме те пултараймастпăр,—çак тĕп ђёлхерен вара тата икĕ тĕрлĕ ђёлхе пулса кайнă: пĕри авалхи Р-па Л-а пăрахмасăрах йулнă, тепри вăл сасăсем вырăнне Ш-па З калакан тĕрĕксенĕн тĕп ђёлхи пулнă. Пурăна киле, çак

Ш-па З-лă ђĕлхерен вара тата çĕнĕ хунавсем, çĕнĕ ђĕлхесем, тухнă: вĕсем хаљхи тутарсен, кăркăссен, алттайсен, пушкăртсен, тата ытти тĕрĕксенĕн ђĕлхисем.

Çакăнтан ĕнтĕ акă мĕн курăнса тăрат: хаљхи тĕрĕк ђĕлхисем пурте пирĕн авалхи ђăваш ђĕлхинђен кĕçĕнрех, çамрăкрах[1]). Апла пулсан, пирĕн авалхи тĕп-ђăвашсем хăйсенĕн тĕп-аслашшĕсенђен хăçан уйăрăлса, уйрăм пурăнăçпа пурăна пуçланăши? Ку ĕç Ш-па З-лă калаçу тухађђен çеç пулма пултарнă, мĕншĕн тесен, унтан кайран пулнă пулсан, ђăваш ђĕлхипе тĕрĕкле ђĕлхесем хушшинђе çав тери паллă уйрăм пулман пулĕђђĕ. Нумай пĕлĕвçĕсем те çаплах шухăшлаççĕ. Вĕсенђен пĕри ак çапла калат: „чуваши представляют собою потомков славных волжских булгар, отделившихся от прочих народов Средней Азии в период, предшествовавший образованию тюркской народности"[2])—ђăвашсем вĕсем Атăл çинђи ђаплă пăлкарсенĕн йăхĕ, çав пăлкарсем Вăта Аçире пурăнакан ытти халăх хушшинђен тĕрĕк халăхĕ пуçланађђен малтан уйăрăлса кайнă, тет.

Вăта Аçире мĕн етем астăвассах, мĕн ĕмĕртенпех, хунсем пурăннă. Çапла ĕнтĕ пирĕн ђăваш халăхин тĕп-аслашшĕсем хунсем пулнă пулат. Тĕрĕксенĕн историне пĕлекен пĕр ăслăлăхçă та ăна çапла шухăшлат. Вăл калат: „Древнейшими историческими предками чувашей..... по всей вероятности придется признать хуннов"[3]) тет, вăл: ђăвашсенĕн ђăн авалхи тĕп-аслашшĕсем..... хунсем пулнине пĕтĕм шанђăкпа йышăнмалла пулат пулĕ, тени пулат.

## 8. Хунсем тесе йепле халăхсене каланă.

Хунсем çинђен киттайсен ђăн авалхи историкĕ çырса хăварнă. Вăл: Хи йăхĕ патшара ларнă ђухне, куçса çÿрекен хунну йатлă вăйлă халăх çурçĕрпе хĕвеланăçĕ хушшинђен Киттай çывăхнелле килсе тухнă, тенĕ[4]). Хи йăхĕ Киттайра патшана кĕни, хаљхи вăхăтран шутласан, 4000 çул ытларах

[1]) Первый Всесоюзный Тюркологический С'езд. 26 февраля—5 марта 1926 г. (Стенографический отчет), Баку—АССР. 1926 г. стр. 115.

[2]) Письмо Н. Н. Поппе в Чувашиздат от 17/VII—1925 г.

[3]) Тюркологический С'езд, стр. 23.

[4]) Погодин А. Л. Из истории славянских передвижений. Спб. 1901 г. Стр. 30—31.

ĕлĕк пулаť. Апла пулсан, хунсенĕн историйĕ Киттай историйĕпе пĕр вăхăтрах пуçланса кайнă. Вĕсене 4000 çул ĕлĕк пĕлме пуçланă.

Киттай историкĕсем каланă тăрăх, çав çурçĕр йенђи сăртлă çĕрте ђăн ĕлĕк тĕрлĕ ăрусем пурăннă. Вĕсем пурте пĕр тĕслĕ пĕр майлă ђĕлхепе калаçнă. Вĕсенĕн ун ђухне нимĕнле саккун та (йĕрке те), мăшăрланас йĕрке те, тŷре-шара травашĕ те, çирĕп влаç та (тытăм та) пулман[1]). Киттайсем хăйсем ун ђухне пурăнăçа тĕплентерсе çитернĕ. Çавăн пирки вырăнтан вырăна куçса çŷрекен хун ăрăвĕсем вĕсене ирĕксĕрех тискерĕн туйăннă пулас пулаť. Çитменнине тата лешсем вĕсенĕн çĕрĕ çине пыра пыра кĕрсе, вĕсене темĕн ђухлĕ сăтăр тунă. Çавăнпа киттайсем хунсене йуратман.

Тарăхнипе мăшкăласа вĕсем çав сăртлă çеçен-хирсенђе пурăнакан ăрусене малтан «шађ-шун» (Chan yonq) тенĕ, вăл сăрт çинђи тискер етемсем тени пулаť, унтан—«Куй-фан» (Киеі-janq) тенĕ, ку „шуйттансем“ тени пулаť, кунтан кайран—«Хађ-йун» (Hіеп-yuп) тенĕ, ку – „канаљсем“ тени пулаť, тата кайрантарахран—«Хун-ну» (Hionq-nou) тенĕ, ку—„усал ђурасем“ тени пулаť, ђи кайран—«ту-кŷ» (Thou-kiouei) тенĕ, вăл „харсăр йытăсем“ тени пулаť[2]).

Крексем те çавăн пек авал, крек мар етемсене, тиркесе пурне те пĕр шутпа хурса, «варвăрсем» тенĕ, Вăл «калаçма пĕлменскерсем, лапăртатаканскерсем» тени пулаť. Вырăссем те вырăсла калаçман халăхсене ĕлĕк «немец»—нимĕђ тенĕ. Вăл „ђĕлхесĕр“ тени пулаť. Хунну тени вăл ĕнтĕ çавăн пек мăшкăласа хунă тентентсиллĕ йат.

Хунсем хăйсене ђăнђăнах йепле каланине хаљ пĕлмеççĕ. «Хун, кун, хон, кон» тесе авалхи ђăвашсем хăйсенĕн патшине каланă. Кам пĕлет, тен вĕсенĕн тĕп аслашшĕсем те хăйсенĕн пуçлăхĕсене çапла каланă пулĕ те, киттайсем çавăн тăрăх вĕсене «хун-ну» теме пуçланă пулĕ.

Тата куна та манмалла мар: Вăта Аçире пурăнакан халăхсенĕн ђăн авал халăх йађĕсем пулман, ăру йађĕсем анђах пулнă. Çавăнпа пĕрпĕр хăватлăрах ăру пуçлăхĕ, ытти ăрусене çĕнтерсе, çийеле тухсан, çав ăрусене, пурне те пĕр шута

[1]) Çавăнтах.

[2]) Иностранцев К. Хунну и Гунны. Труды Тюркологического Семинария. Ленинград. 1926 г. Стр. 11,52.

хурса, унăн йађĕпе ђĕне пусланă. Çапла Ђинхис-Хан, монхол йăхĕнђен пулнăскер, Вăта Асире тĕрлĕ халăхсене хăй аллине илсен, вĕсене пурне те монхолсем теме пусланă. Халĕ те йут патшалăхсенђе Раççейрен пынă çынсене, вырăс пулмасан та, пурне те „вырăс“ теççĕ. Çавăн пек авалхи «хунсене» те киттайсем, пĕрпĕр ђапа тухнă Хун йатлă ăрăва курса, „хуннусем“ теме пусланăи тен? Халĕ ăна пĕлеймеççĕ. Анђах йепле пулсан та, „хуннусем“ тесе вĕсем Аçи варринђе пурăнакан уйрăм ăрусене каланă. Мĕнле ăрусене?

Пĕр хунсем çинђен çыракан вырăс историкĕ ун çинђен ак çапла калат; «имя хунну дается тому народу, из которого произошли все позднее встречаемые в истории Средней Азии народы турецкого племени»[1] тет. Вăл: Аçи историйĕнђе (пурăнăçĕнђе) тĕл пулакан тĕрĕклĕ халăхсенĕн тĕп аслашшĕсене хунну тесе калаççĕ, тени пулат. Тепĕр историк каланă тăрăх, çав халăха ĕнтĕ киттайсем 4000 çул ĕлĕк „шаң-йун“— „сăртлăхра пурăнакан тискер етемсем“ тенĕ, мĕншĕн тесен, вĕсем ђăнахах та Киттай айлăмĕнђен çурçĕр йенђи сăртлă çеçен хирсенђе пурăннă. Çак хунсенђен ĕнтĕ тахçан авал,— ăна халĕ пĕлме çук,—ђăвашла калаçакан тĕп-халăхсемпе тĕрĕкле калаçакан тĕп-халăхсем пулса кайнă.

Ун ђухне вĕсем йепле пурăннăши? Вĕсенĕн пурăнăç йĕрки пурăнăç тытăмĕ, пурăнăç вăй-хăвађĕ йепле пулнăши? Çаксем çинђен пурин çинђен те каласа париђђен малтан, Аçи варринђи хунсенĕн çĕршывĕ çинђен пĕрик сăмах та пулсан каласа парас пулат, мĕншĕн тесен, çĕршыв вăй-хăвађĕ вăл пĕтĕм етем пурăнăçне виттĕр çапса тăрат. Çавăнпа ăна пĕлмесĕр, етем пурăнăçĕн историне те ăнласа илме хĕн пулат.

---

[1]) Иностранцев, стр. 11.

## III.

### Вӑта Аҫире пурӑнни.

1. Вӑта Аҫири ҫеҫен хирсем.
2. Хунсем йепле пурӑнӑҫпа пурӑннӑ.
3. Хунсенӗн ҫурҫӗсем йепле пулнӑ.
4. Тӗрлӗ хатӗрсене авалхи хунсем мӗнтен тунӑ.
5. Килйышӗпе ӑру йепле пурӑннӑ.
6. Хунсенӗн тӗнӗ йепле пулнӑ.
7. Хунсем йепле сарӑлса пынӑ.
8. Ҫӑвашсем Киттай таврашӗнҫе пурӑннӑ йӗрсем.

## III. Вăта Аçире пурăнни.

### 1. Вăта Аçири çеçен хирсем.

Аçи вăл тĕнђери ытти çĕрсенђен пуринђен те ђăн аслă çĕр. Унăн хăпарса тăракан çӳлĕ вырăнĕсем—вĕçĕн вĕçĕн тăсăлса тăракан тусем. Вĕсенĕн тăррисенђе нихăçан ирĕлсе пĕтми йур выртаť.

Çав тусем Аçи варринђи çĕре темĕн пысăккăш, темĕн çӳллĕш карта пек йĕри тавра карталаса тăраççĕ: çурçĕр йенђен Алттай тăвĕсемпе Сайан тăвĕсем, тата Пайкал тăвĕсемпе Йаплон тăвĕсем мал-йенђен—Хинкан тăвĕсем, кăнтăр йенђен—Куен-Лђуђ тăвĕсем, хыçал йенђен—Ťађ-Шаь тăвĕсем.

Çак тусем варринђе сăртлă уй-хирсем сарăлса выртаççĕ. Вĕсем пур тинĕссенђен те инçетре тăраççĕ. Карта пек тăракан çӳлĕ тусем тинĕс çинђен вĕрекен çилсене хăйсем урлă каçарса йамаççĕ. Çавăнпа тинĕс çинђен килекен йĕпе-сапа та Аçи варне çитсе ӳкеймест. Çакна кура, Аçи варринђе çанталăк пит уйар тăраť. Çӳлте çăмăр пĕлĕђĕсем хутран-ситрен анђах тухкалаççĕ. Çӳлте тăракан хĕвел çулла пĕрмай хĕртсе тăраť; хĕлле, хĕвел айалта ђух, шăнтса тăраť. Çапла ĕнтĕ Вăта Аçире ђăн конттинент климăђĕ, ђăн тип-çĕр çанталăкĕ хĕлле унта хайар сивĕсем пулаççĕ, çулла вăйлă шăрăх тăраť.

Вăта Аçире сывлăшра тусан вĕçсе çӳрет: çĕртен çӳлелле ăна хăрăк çилсем çĕклентерсе хăпартса йараççĕ. Çулла вара пĕтĕм çанталăка шупкарах тĕтĕм карса илнĕ пек пулаť, хăш ђухне хĕвел те, сӳнсе ларнă пек, курăнми пулаť. Лăпкă çанталăкра тусанĕ айала анса лараť те, çилсем тухсанах тепĕр хут хăпарса вĕçсе çӳрет. Хĕлле çавăн пекех, хăш ђухне çил тăман тухса, урса, алхасса кайаť.

Аçи варринђе йĕпе-сапа сахал пулнă пирки, йухăн шывсем те унта сахал; пулсан та, вĕсем йурлă ту тăррисенђен йухса анаççĕ те, ђи тинĕсе çитех пымаççĕ, кайсан кайсан, йе хăйăрлă çĕрте сăрхăнса пĕтсе лараççĕ, йе пĕр-пĕр кӳлле пырса кĕреççĕ.

Çанталăк уйар тăнă пирки, Аçи варринђе çеçен хирсемпе пушă хирсем пит нумай. Çеçен хирсенђе хытă курăксем, кăлкансем, ерĕм утисем анђах ӳскелеççĕ. Вĕсем те аслăшпе ӳсмеççĕ, тĕллĕн-тĕллĕн кăна ӳскелеççĕ, курăк тĕмĕсем хушшинђе çара çĕр анђах выртаť. Çуркунне, йурсем ирĕлсенех,

çеçен-хирти куракксем ђасрах шăтса тухаççĕ те, сарăлса ђеђеке лараççĕ, вăрăсем кăлараççĕ, унтан çу пуçламĕшĕнђех типсе хăрса кайаççĕ: вĕсенĕн тымарĕсемпе кăкĕсем анђах ђĕрĕ тăраççĕ, тата вăррисем хытă хупăллăскерсем, ђĕрĕ халлĕн йулаççĕ. Пушă хирсенђе ўсен-тăран йăвăç-курăк тата сахалтарах. Вĕсем те çуркунне ђас шăтса тухакан курăксем, йе тĕмĕн-тĕмĕн ўсекен вĕтĕ çулçăллă, вăрăм тымарлă йăвăçсем анђах.

Çав хушăра вăрмансем нўрĕклĕ ту хĕррисенђе анђах пулкалаççĕ, тата шыв хĕррисенђен пăт-пат тĕл пулкалаççĕ. Унта вара тĕрлĕ кайăксем пурăнаççĕ.

Çеçен хирсенђе çивĕђ шăллă кайăксем, арлансем, йуссем, ђыркассем пит нумай; хĕлле пулсан, вĕсем хăйсенĕн шăтăкĕсенђе ыйха кайаççĕ. Авал унта шултăра выђăхсем те сахал пулман, вак выђăх та нумай пулнă: тĕвесем, лашасем, ашаксем, ĕнесем, сурăхсем, кађакасем ирĕкре кĕтў-кĕтўпе çўренĕ. Хĕлле пулсан, вĕсем çўхе йур айĕнђи курăках ђĕрнисемпе ђавађава çисе тăранса пурăннă. Вăта Аçире халђ те çавăн пек ирĕкре çўрекен кайăкла выђăхсем нумай. Çак çеçен-хирсем Вăта Аçире пĕтмеççĕ, вĕсем хăйсене хупăрласа тăракан тусем хушшипе тăсăлса ирĕкелле тухаççĕ те, пур йенелле те сарăлса кайаççĕ. Пуринђен ытла вĕсем Алттай тăвĕсемпе Куеђ-Лђуђ тăвĕсем патĕнђен сарăлма пуçлаççĕ те, вара Атăл патнех çитеççĕ, кунта та пĕтмеççĕ, тата хыçалалла сарăлса тăсăлса кайаççĕ те, Тунай шывĕ патне пырса тĕкĕнеççĕ, унтан унăн леш йеннелле каçса, малалла тата ђылай кайаççĕ. Çурçĕрелле вĕсем сĕм вăрманлăхсем ђикки таран кайаççĕ.

Çак аслă çеçен-хирсенђе тахçан ĕлĕкреннех тĕрлĕ етем ывăлĕ-хĕрĕсем пурăннă. Ђăвашсенĕн тĕп аслашшĕсем, хунсем, те Вăта Аçири çеçен хирсенђе пурăннă.

## 2. Хунсем йепле пурăнăçпа пурăннă.

Хунсенĕн пурăнăçĕ примиттивле пурăнăç пулнă, анђах çапах та вĕсем кайăкла етемсем пулман, кулђттур картине кĕре пуçланă етемсем пулнă. Вĕсенĕн пурăнăçĕпе техниккине ђăваш ђĕлхипе тĕрĕк ђĕлхисем лайăх кăтартса тăраççĕ. Хунсем ун ђухне, çĕршыв мĕн панă, унпала тăранса пурăннă. Вĕсенĕн мĕн пур пурăнăçĕ çĕршыв ырăлăхĕпе çеç тытăнса тăнă. Вĕсем ирĕкре çўрекен кайăксене, выђăх-ђĕрлĕхсене тытнă, тĕрлĕ йăвăç-курăк çимĕçĕсене пуçтара-пуçтара, тымарĕсене кăлара-кăлара çисе пурăннă. Кайăксене вĕсем сăнăпа,

ухăпа, капкăнпа, тата вĕренпе (пăвăласа) тытнă. Çак кайăксене тытмалли хатĕр йађĕсем ђăвашла та, тĕрĕкле те пĕр майлă. Вĕсем ак çаксем:

| ђăвашла | тутарла | тĕрĕкле | алттайла | кăркăсла [1]) |
|---|---|---|---|---|
| кайăк | киик | — | кийик | — |
| капкăн | капкăн | — | капкан | капкăн |
| сăнă | сӳнкӳ | сӳнкӳ | соон | |
| ухă | ук, о | ок | ок | ок |
| йытă | ет | ит | ит | ит |
| тапă | тепĕ | — | теп | теп |

Унтан тата хунсем ун ђухне выђăх-ђĕрлĕх те усракаланă пулас пулаť, мĕншĕн тесен, выђăх-ђĕрлĕх йађĕсем те, вĕсене тыткаламалли йапала йађĕсем те хунсенђен ĕрђесе кайнă халăхсенĕн пуринĕн те пĕр пек, пĕр майлă.

| ђăвашла | тутарла | тĕрĕкле | алтайла | кăркăсла | йаккутла |
|---|---|---|---|---|---|
| ут | ат | ат | ат | ат | ат |
| ашак | ишек | — | — | — | ашак |
| ĕне | — | инек | инек | — | ынах |
| тĕве | теве | деве | тӧӧ | тӳйе | — |
| хĕсĕр | кăссăр | кăссăр | кăссăр | кăссăр | — |
| кĕт | кот | гӳдь | кӳт | кӳт | кӳт |
| кĕтӳ | кĕттӳ | — | кӳтӳ | ктӳ | — |
| йĕвен | йӳкен | — | ӳкен | йӳхӧн | ӳн |
| ђĕлпĕр | ђылпыр (сăнђăр) | — | ђылпыр | — | — |
| урапа | арпа | арапа | апра | апра | — |
| урхалăх | арккалăк (çурăм) | — | аркка | аркка | аркка |

Хăйсем усраса пурăннă выђăх-ђĕрлĕхрен вĕсем тĕрлĕ усă курма пĕлнĕ. Ăна çак пĕр пек сăмахсем кăтартса тăраççĕ:

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| аш | аш | — | аш | ас | ас |
| атă | итек | — | ӧтӳк | етик | — |
| уйран | айран | — | айран | айран | — |
| кĕçе | кейез | кече | киис | — | — |
| кĕрĕк | кӧрк | кӳрк | — | — | |
| су | сау | саг | саа | сау | — |
| сĕт | сӧт | сӳд | сӳт | сӳт | ӳт |
| çын(çăм) | йон | йон | — | йӳн | он |

1) Сăмахсене „Золотницкий Н. И. Чувашско-русский корневой словарь" çинђен илнĕ.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| ђăвашла | тутарла | тĕрĕкле | алтайла | кăркăсла | йаккутлă |
| тир | тире | дери | тере | тери | тири |
| хас | — | — | — | касы | — |
| хăйма | каймак | каймак | каймак | каймак | — |
| йĕке | ий | ик | — | — | иик |
| | (аçерпайтжан) | | | | |

Çапла ĕнтĕ хунсем кĕтÿсем те усрană пулаť. Сунэрçă етемсем пек, вĕсем, выçă хырăмпа лара тăра пĕлмесĕр, апат хыççăн, ăçта килђĕ, унта çапкаланса çÿремен, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçа куçа, кĕтÿсем йертсе çÿренĕ. Киттай историкĕсем калană тăрăх та вĕсем выђăх-ђĕрлĕх усраса пурăннă, шыв варĕсем тăрăх сарăлса выртакан улăхсенђе лашасем, ашаксем, тĕвесем, ĕнесем, сурăхсем кĕтсе çÿренĕ [1]).

Унтан тата авалхи хунсем çĕр ĕçне те пăртак тукаланă пулас пулаť. Çавăнпа хун йăхĕнђен ĕрђесе кайнă халăхсенĕн пуринĕн те хăш-хăш тырă пулă йађĕсемпе вĕсене тумалли хатĕрсенĕн йађĕсем пĕр пек, пĕр майлă:

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| ђăвашла | тутар. | тĕрĕк. | алттай. | кăркăс. | йаккут. |
| ыраш | арыш | — | арыш | — | — |
| урпа | арпа | — | арпа | — | — |
| кантăр | кинтер | кенгир | кентир | кентир | — |
| пăрçа | пурђак | — | мырђак | пуртак | — |
| сĕлĕ | соло | — | сула | — | — |
| ала | илек | — | елек | елек | — |
| арман | термен | теирмен | теермен | — | — |
| килĕ | кил | — | — | кели | кăла |
| пăтă | путка | — | потко | — | — |

Киттай историкĕсем калană тăрăх, хунсем ђăнах та, кĕтĕвĕсемпе пĕрле пĕрпĕр çĕре пырса кĕрсен, ăна пĕр пек пайланă, вара йышшăн йышшăн ĕçленĕ [2]). Çапла хунсем çĕр ĕçпе пĕрмайах пĕр вырăнта хăтланман, вырăнтан вырăна куçа-куçа, çĕнĕ çĕре пăса-пăса тукаланă. Пĕр тĕлте тĕпленсе пурăнма вĕсенĕн майĕ те пулман, мĕншĕн тесен, пĕр йенђен темĕн ђухлĕ пуçлă кĕтÿсене пĕр вырăнта тăрантарса пурăнма май килмен, тата тепĕр йенђен Аçи варринђи çеçен хирсенђе тырă-пулă тăвасси çăмăл мар. Кунтан шухăшласан, хунсем тырă-пулла кăшт тыткаламалăх анђах тукаланă

[1]) Погодин А. А. Из истории славянских передвижений Спб. 1901. Стр. 31.

[2]) Литературный Сборник. Спб. 1885. Стр. 169.

пулас пулаҫ. Хунсенҫен ёрҫесе кайнӑ тӗрӗксемпе ҫӑвашсем, ҫӗре катса кӑпкалатмалли хатӗре пурте „кетмен“, йе „катмак“ теҫҫӗ [1]. Вӑл кетмен вырӑсла моттык пек пулнӑ. Ҫакӑ ӗнтӗ вӗсенӗн ҫӗр ӗҫлемелли ҫӑн авалхи хатӗрӗ пулнӑ. Авалхи хунсем ҫӗре алӑ вӗҫҫӗн ӗҫлени кунтан лайӑх курӑнса тӑраҫ. Алӑ вӗҫҫӗн тӑвас йапала ҫӑмӑл мар, тата апла ытлашши нумай тума пулмасҫ. Еппин хунсем те тырӑ-пулӑ йышлах тӑвайман тени тӗрӗс сӑмах. Тырӑсенҫен пуринҫен ытла ҫуртырри тунӑ теме пулаҫ, мӗншӗн тесен, вӑл ҫуркунне аксан, кӗркуннеҫҫен пулса ҫитет. Вырӑнтан вырӑна куҫса ҫӳрекеншӗн вӑл аван пулнӑ.

Ҫӗр ӗҫне ӗҫлеме вӗренме хунсенӗн майӗ те пулнӑ, мӗншӗн тесен, вӗсемпе йунашар пурӑнакан Киттай халӑхӗ тахҫантанпах ҫӗр ӗҫӗпе пурӑннӑ. Ҫав киттайсене хунсем тыткӑна та нумай илкеленӗ, тата лешсем хӑйсем те, ирӗккӗн пырса, хунсем хушшинҫе колоҫисем туса пурӑннӑ [2]) Вӗсем хунсене ҫӗр ӗҫне вӗрентме пултарнӑ. Тепӗр йенҫен шухӑшласа пӑхсан, хунсем хӑйсем те тырӑ-пулӑ туни пит усӑллӑ пулнине ӑнласа илме пултарнӑ теме пулаҫ. Вӗсенӗн куҫӗ умӗнҫех арлансем ирӗкре ӳсекен тырӑ-пулӑ пӗрҫисене, тӗшӗсене, хӗл каҫма, пуҫтара-пуҫтара хунӑ. Ҫапла пуҫтарнӑ тырра вӗсем хӑйсем валҫи пушата пушата та илкеленӗ пулмалла. Ҫав Вӑта Аҫире пурӑнакан халӑхсем нумайӗшӗ халӗ те ҫапла хӑтланаҫҫӗ [2]). Ахалҫ мар пулӗ, авалхи ҫӑвашӑн пӗр халапӗнҫе те етеме ҫӗр ӗҫлеме арлан вӗрентнӗ тесе каланӑ.

Йепле пулин те, хунсем ҫӗр ӗҫне питех йуратман, вӗсем вӑл ӗҫе пиҫсе ҫитеймен. Авалхи историксем каланӑ тӑрӑх, вӗсем ирӗкре ӳсекен курӑкпа аш-пӑша йуратарах панӑ. Ашӗ ҫемҫерех пултӑр тесе, вӗсем ӑна лаша ҫурӑмӗ ҫине хунӑ та ун ҫине йӗнер ҫине ларнӑ пек ларса ҫӳренӗ. Тумтирӗ вӗсенӗн тирсенҫен тукаланӑскер пулнӑ. Ӑна пӗрре тӑхӑнсан, татӑлса ӳкмесӗр ҫийӗнҫен пӑрахман. Вӗсем тумтир таврашне те, савӑт-сапасене те ҫуман: [3]) ҫусан, аҫа ҫапаҫ, тенӗ [4]).

[1]) Ҫавӑнтах, стр. 160.

[2]) Ҫавӑнтах.

[3]) Погодин А. Л. Из истории славянских передвижений. Стр. 11.

Пирӗн ҫӑваш хушшинҫе ку авалхи йӑлана „Ҫинҫе“ праҫникӗнҫе хытӑ тытса пурӑннӑ. Тӗллӗн-тӗллӗн вӑл йӗркене халӗ те пӑрахман: аҫа ҫапасран хӑраҫҫӗ.

[4]) Потанин Г. Громовник по поверьям и сказаниям племен Южной Сибири и Северной Монголии. Ж. М. Н. П. 1882 г., февраль, стр. 322.

Çапла ĕнтĕ хунсенĕн ђăн паллă ĕçĕ—кĕтӳç ĕçĕ пулнă. Вĕсем кĕтӳ-кĕтӳпе выљăх усраса тăранса пурăннă. Кайăкçă ĕçпе çĕр ĕçĕ вĕсенĕн ахаљрен анђах пулнă. Ун çинђен Аçи тăрăх темиçе хутђен çӳресе курнă Пршеваљски пит лайăх ăнлантарса парат̆. Вăл калат̆: «Если Центральная Азия часто представляет на целые сотни, даже тысячи квадратных миль абсолютную пустыню, за то в местах хотя мало-мальски возможных для обитания она населена от времен глубокой древности. Весьма выгодные условия для скотоводства, как-то: сухой климат, отсутствие снега зимой и докучных насекомых летом, обилие соли в почве, кормная, хотя с виду невзрачная трава, а местами и хорошие пастбища, наконец, сравнительно ничтожный здесь уход за скотом, все еще в глубокой древности манило человека—дикаря отдаться пастушескому быту... Вот почему в пустынях Центральной Азии, несмотря на баснословное местами обилие зверей, которых в древности несомненно было здесь еще больше, человек миновал первую ступень своего общественного развития, не сделался охотником, но обзавелся стадами домашнего скота и в зависимости от него поставил все свое существование. Охота явилась затем как подспорье, или как развлечение, не более»[1]) тет.

### 3. Хунсенĕн çурђĕсем йепле пулнă.

Пурăнасса хунсем çуртсенђе пурăннă. „Çурт“ тенĕ сăмах вăл алттайла „йуртта“ пулат̆. Вăл „пурăнас, вырăнаçас“ тенине пĕлтерет[2]). Тутарла „йорт“ пулат̆. Вăл пĕтĕм хуралтăна пĕлтерет[3]). Хунсенĕн çуртĕнђе тĕтĕм тухмалли шăтăк пулнă, ђăвашла вăл „тĕнĕ, тĕнĕк“ пулат̆, алттайла „тӳӳнӳк“, кăркăсла „тӳнӳк“[4]). Аçи варринђе пурăнакан кĕтӳç халăхсем ку таранђђенех „çуртсенђе—йурттасенђе“ пурăнаççĕ. Çав çуртсене шертесем лартса, хулăпа тыттарса, тултан та,

---

[1]) Пржевальский Н. М. Современное положение Центральной Азии. (в Русском Вестн. 1886 г. Т. 186, стр. 471—475.

[2]) Вербицкий В. Словарь алтайского и аладагского наречий тюркского языка. Казань. 1884 г. стр. 103.

[3]) Остроумов Н. Первый опыт словаря народно-татарского языка по выговору крещенных татар Казанской губернии. Казань. 1876 г. стр. 386.

[4]) Золотн., 89.

шалтан та, кӗҫҫепе витеҫҫӗ, тул йенђи кӗҫҫине, ҫӑмӑр кайасран, ҫупа хытараҫҫӗ. Ҫурт варринђе вуђах пулаҭ, ҫурт тӑрринђе тӗнӗ пулаҭ. Ҫак ҫурта салатса пӑрахса, ҫӗнӗрен туса лартма пит ҫӑмӑл. Пӗрпӗр ҫӗре кӗтӳпе пӗрле куҫса кайаставас пулсан, хӗрарӑмсемех вӑл ҫуртсене салатса пӑрахаҫҫӗ те, тӗве ҫине йе урапа ҫине тийесе хураҫҫӗ, вара кайаҫҫӗ, ҫӗнӗ вырӑна ҫитсен, каллех ӑна майлаштарса тӑратса лартаҫҫӗ. Авалхи хунсем, ђӑвашсемпе тӗрӗксенӗн аслашшӗсем, ҫакӑн пек „ҫуртсенђе“ пурӑннӑ пулаҭ. Ҫак „ҫуртсенђен“ пуҫне вӗсенӗн урӑх хуралтӑсем пулман. Ҫавӑнпа та Киттай историкӗсем: вӗсенӗн ни хула та, ни йал та пулман, теҫҫӗ[1]),

## 4. Тӗрлӗ хатӗрсене авалхи хунсем мӗнтен тунӑ.

Пурӑнӑҫра кирлӗ хатӗрсене хађхи етем тӗрлӗ йапаларан тӑваҭ: йӑвӑҫран, курӑкран, ђӗр-ђунсенӗн ҫӑмӗнђен, тӗкӗнђен, тирӗнђен, шӑмминђен, тата тӑмран, ђултан, тӗрлӗ тимӗр-тӑмӑртан. Ђӑн авалхи ҫынсем те ҫаплах тунӑ, пӗр тимӗр-тӑмӑра ҫеҫ вӗсем ђылай ӗмӗр иртсен тин тыткала пуҫланӑ. Ҫӗрекен, йе ҫунакан таврашран тунӑ йапаласем вӗсем тахҫанах пӗтнӗ; ҫунми-ҫӗрминтен тунисене халӗ ђасђасах ҫӗр айӗнђен тупкалаҫҫӗ. Ун пек авалхи йапаласем Ђӑваш Тӗп Муҫейӗнђе те ђылай. Ӗнтӗ авалхи хунсем хӑйсене кирлӗ хатӗрсене мӗнтен тукаланӑши? Йӑвӑҫ-курӑкпа тӑмран, ђултан, шӑмӑран, тата ытти таврашран пуҫне, вӗсем йапаласене тата тӗрлӗ тимӗр-тӑмӑртан тума та пӗлнӗ. Ӑна хунсенђен ӗрђесе кайнӑ халӑхсенӗн ђӗлхисем лайӑх кӑтартса тӑраҫҫӗ. Ђӑнах та, тимӗр-тӑмӑр йађӗсем нумайӗшӗ вӗсенӗн пӗр пек, пӗр майлӑ. Сӑмахшӑн калӑпӑр: ђӑвашла—*йӗс*, тутарла—„йиз“, кӑркӑсла—„йез“, алттайла—„йес“, монхолла—„джес“[2]); ђӑвашла—*пӑхӑр*, тутарла „бакыр“, алттайла „бакрас“[3]); ђӑвашла—*тимӗр*, тутарла—„тимер“, тӗрӗкле—„демир“, алттайла—„темир“, йаккутла—„тимир“[4]), кӑркӑсла—

---

[1]) Погодин А. Л. Из истории словян. передвиж., стр. 11.

[2]) Золотн., стр. Йӗсӗн йађӗ вӑл авал Йевропра пурӑнакан халӑхсенӗн те ђӑвашла майлӑ: латтынла: „aes“, хотла (готла)—„aiz“, санскритле те—aẏas“ Стеблев А. Н. Очерки культурной истории России с древнейших времен. Москва. 1913 г. Ч. I, стр. 36.

[3]) Золотн., стр. 16. Хӑш-хӑш ҫӗрте пӑхӑра-йӗсе йе „тӑмпак“, йе „туй“ теҫҫӗ. Ђусем иккӗшӗ те „бронза“ теппе пӗлтернӗн туйӑнаҭ.

[4]) Золотн., 82.

тимĕр, ђăвашла—*ылттăн (ылттăм)*, тутарла, кăркăсла, алттайла—„алттын“, йаккутсем тата „алттан“ тесе пăхăра калаççĕ[1]). Çапла хунсем тимĕр-тăмăрсене тыткалама тахçанах пĕлнĕ теме пулаť. Апла пулин те ђултан тунă йапаласене Аçи варринђе пурăнакан халăхсем ђас пăрахайман. Киттайсемпе корей историкĕсем каланă тăрăх, Манђшурире пурăнакан халăхсем хаљхи ерĕн XI-мĕш ĕмĕрне кĕриђђенех ђул хатĕрсемпе усă куркаласа пурăннă[2]). Çакăнтан шухăшласа кайсан, ђăн авалхи хунсем, тимĕр-тăмăр тавраш не тыткаланă пулсан та, ђул хатĕрсенђен йăлтах уйăрăлса çитеймен пулмалла.

## 5. Килйышĕпе ăру йепле пурăннă.

Çемйе тĕлĕшĕнђен пулсан, ђăн авалхи хунсенĕн тĕллипалли пулман пек туйăнаť. Ђăваш ђĕлхинђе те, ытти тĕрĕк ђĕлхисенђе те çемйене пĕлтерекен пĕр пек, пĕр майлă сăмах çук. Апла пулсан, мăшăрланса çемйепе пурăнас йăла ђăваш хушшинђе, ытти хун ăрăвĕсенђен уйăрăлса кайсан, кайран пуçланса кайнă. Унђђен вĕсем, пур кайăкла етемсем пекех, выљăхла пурăннă: вĕсенĕн хушшинђе мăшăрланас йĕрке пулман. Хĕр вăрлас йĕрке ĕнтĕ çак вăхăтра тухса кайнă пулас пулаť. Вăрласса йут ăрусенĕн хĕрĕсене кайа кайа вăрланă пулмалла, мĕншĕн тесен, авалхи ђăвашсем тађ çывăх хурăнташ-ăрусене илнине хытă тиркесе пурăннă. Вăрланă ђухне темĕн ђухлĕ вăрçă-çапăçусем те пулкаланă пулмалла; ђăваш çамрăкĕсем халĕ те хăш ђухне, никамран ыйгмасăр тумасăр, каварланаççĕ те, пĕрпĕр хĕре харсăрлăхпа. намăсласа, макăртса, вăрласа авланаççĕ. Тата пĕр 100—150 çул ĕлĕкрех ђипер йăлапа тăвакан туйа та ђăвашсем çар хатĕрĕсемпе кайнă. Авалхи ђăвашсем туйа кайни çинђен пĕри тӳрех ак çапла каланă: „а у которых есть верховые лошади, те надевают на себя сабли, берут ружья, луки и колчаны со стрелами“[3])—йулан утлисем хĕç çакса йараççĕ, пăшалсемпе укçусем, йĕнĕ тулли ухăсем илеççĕ, тет.

[1]) Золотн, 11.
[2]) Труды II Археролог. С'езда. СПб. 1876 г. Вып. I, стр. 14.
[3])Северный Архив. 1827, № 9, стр. 63.

Кађђа кайакан хёрсем йёрсе хўхленĕ ђухне, хайсем кайакан йал йышне «çиђ йутсем», ађине „çиђ йут ађи" тесе хўхлеççĕ. Ак примерсем:

Ђупрăм, антăм çырмана,
Шăма кёпçи пулĕ тесе;
Шăма кёпçи пулмарĕ,
Шăршлă кёпçи пулайрĕ.
Тăван тесе ђупрăм та,
Çиђ йут ађи пулайрĕ.

* * *

Хура вăрманти хурђăка
Хайне çўреме çул тупман.
Çак çиђ йут ађисем
Манран пуçне хёр тупман.

* * *

Çиђ йут йышлă, еп пĕђђен,
Манăн хута кам кĕрес[1])?

Хёре хапхинђен илсе тухса кайнă ђух, саламатпа çапни те, кёрў аттине хывтарни те, тата авалхи туй йăлисем ыттисем те нумайĕшĕ Аçи çĕрĕнђе кайăкларах пурăнăçпа пурăннă ђухнехине лайăх кăтартса тăраççĕ. Ку йёркесем хунсенђен ĕрђесе кайнă халăхсенĕн нумайăшĕн пĕр майлах.

Хунсем вакăн-вакăн ушкăнпа пурăннă. Ушкăнсем вĕсем йышсем пулнă. Кашни йыш хăй ĕçĕн, хăй тĕллĕн пурăннă. Çапла тĕрлĕ йышсем пĕрпĕринпе пĕрлешсе, ђăмăртанса, пĕр патшалăх, пĕр халăх пулайман. Киттай историкĕсем тўрех калаççĕ: хунсенĕн нимĕнле саккун та, тўре-шара таврашĕ те, çирĕп влаç та пулман[2]), теççĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕм тесен, вĕсенĕн техникĕ нађар пулнă пирки, хуçалăх та ун ђухне нађар пулнă. Çавăнпа вĕсенĕн хушшинђе патшалăх пек тĕреклĕ пĕрлешў те пулма пултарайман. Тăшмансемпе хăрушă кайăксенђен хăраса пурăннăран çеç вĕсем пĕрпĕринђен ытла инçе уйăрălса кайман, мĕншĕн тесен, пĕђђен çĕнтерейменнине нумайăн çĕнтернĕ те, хăраман. Çапла вĕсем саланмасăр тăнă. Çĕршыв ырăлăхĕ пĕр çĕрте иксĕлсе çитсен, вĕсем тепĕр

1) Такмак Аттиск из Известий Общества рхеологии Истории и Этнографии при имп. Казан. унив. 1903 г. т. XXX. Стр. 3—7.

2) Погодин А. Л. Из истории славянских передвижений, стр. 31.

çĕре, т у л ă х вырăна шыраса, кайнă, май килсен тата пуйан халăхсене çаратнă. Ун пек ђух вара пĕр йевĕрлĕ йышсемпе ăрусем пĕрлешнĕ. Çапла пĕрлешĕве ђăвашсем «нĕсĕл», «нĕслĕк» тенĕ, йаккутсен халĕ те «наслек» пур.

Халĕ каланине пурне те ђĕлхе лайăх кăтартса тăрат̆. Илер „йыш“ сăмаха. Золотницкий ун çинђен ак çапла калат̆: «Это джагат татар. *еш*, алтайск. *еш*, Казан. татар. *иш*, Турец. *эш*, и на этих языках значит: товарищ, сверстник, спутник уйгур. ешлер—друзья, свои» тет. Ђăвашла каласан, вăл ку тшакат. тутарла—*йеш*, алтайла—*йеш*, Хусан тутарле—*иш*, тĕрĕкле—*еш*, çак ђĕлхесенђе вăл: й у л т а ш, т а н т ă ш тенине пĕлтерет, уйхурла й е ш л е р тени т у с с е м, х а м ă р ă н с е м тенине пĕлтерет, тени пулат̆. Ђăвашла „йыш“ тени те тăванпĕтенсене мар, пĕр ушкăнта пĕрле пурăнакан çынсене пĕлтернĕ: кил-йыш—килте пурăнакан çынсене, йал-йыш—йалта пурăнакансене. Кунтан ĕнтĕ паллах «йыш» тени вăл вырăсла «Общество» тенине пĕлтернĕ. Йышран пысăкки «ăру» пулнă. Вăл тутарла «ăру», кăркăсла «уруу», йаккутла «уру». Ăру тесе пĕр кăкран, пĕр тымартан, ĕрђесе кайнă йышсене калаççĕ. Вĕсем тĕрлисем пулнă: йышлисем те, йыщсăртараххисем те. Йышлисем вăйлă пулнă, йышсăррисем вăйсăр. Ăрусене ăрăва пуçласа йараканăн йађĕпе çавăн ăрăвĕ тенĕ. Хунсенђен ĕрђесе кайнă халăхсем пурте ăрăвĕ ăрăвĕпе уйăрăлса пурăннă, хăшĕ-хăшĕ халиђђенех çапла пурăнаççĕ[1]). Пирĕн ђăвашсем те авал ăрăвĕ ăрăвĕпе уйăрăлса пурăнни вăл тĕрлĕ йенђен курăнса тăрат̆. Ђӳклеме пăгтине çиме хурăнташсемпе çеç çийеççĕ; авал хулăм укçине тӳлесе татма хурăнташсем пулăшнă[2]), йупа уйăхĕнђе ваттисене пур хурăнташ ăрупа пĕрле асăнса иртгернĕ[3]); кĕлтунă ђухне те, «хурăнташ ăрăвăмпа ђӳк тăватăп, тенĕ[4]). Ђăвашсем ăрăва пуçласа йаракана «тӳпе паттăр», «тӳпи» тенĕ.

Çапла хунсем ăрăвĕ ăрăвĕпе уйăрăлса пурăннă. Кашни ăрăвĕн хăйĕн çĕршывĕ пулнă. Çапла пĕр ăрăвăн кĕтĕвĕсем

[1]) Ковалевский М. Родовой быт в настоящем, недавнем и отдаленном прошлом. Приложение к журналу „Вестник и Библиотека самообразования“ за февраль 1905 г. Стр. 234—312.

[2]) Северный Архив, 1827 г., № 9. стр. 59.

[3]) Çавăвтах, стр. 127.

[4]) Çавăнтах, № 11, стр. 222.

тепĕр ăрăвинпе хутăшса каймасăр çӳренĕ. Хăйсенĕн выђăхĕсем çине йе касса, йе хĕртсе кашни ăру хăйĕн паллине пуснă. Ăна тумха тенĕ. Çавăн пек ăру паллисем хăш пĕр тĕлте ђăвашсенĕн ку таранђђенех пур. Вĕсене ĕлĕк куланай карђĕсем çине те, анасем çине те тукаланă, халĕ те тукалаççĕ.

Патĕрйелпе Кĕçĕн Йелђĕк таврашĕнђе ак çакăн пек тумхасем пур:

Λ таса тĕрен
Δ урлă татнă тĕрен
Λ хăлхаллă тĕрен
У сенĕк
♀ алтăр
Г турђăка
Ж урапа (çăлтăр)
Ӿ така măйраки, тата урăххисем те.

Ăру паллисем ытти тĕрĕкле халăхсенĕн те пур. Ăрупаллисене тума пуçлани вăл кайрантарах пулнă йăла мар, тахăçан ĕлĕк тухнă йăла. Вĕсене тума пуçл анăђухне, çĕршыва валеçес йăла та пулман, кĕтӳсене те пайламан, вăл та, ку та, пурте ăрăвăн пулнă, пĕтĕм ăру аллинђе тăнă.

Пĕтĕм ăру „ваттăн" аллинђе пурăннă. Ђăвашсем халĕ те кил пуçне, çамрăкпа ватта тиркемесĕр, «ватти» теççĕ. Ватти вилсессĕн ун вырăнне ун хыçĕнђен аслăраххи йулнă. Ытти тăван-пĕтенĕсем вара пурте ăна пăхăнса пурăннă. Вăл мĕнле сут тунă, ĕçе çапла тунă, пĕрре те унăн сăмахĕнђен тухман. Анђах вăл сăмахне калађђен, малтан ăрури «ватăсене» пуçтарса, пуху туса канашланă. Вăл пухусенђе пурте пулма пултарнă. Ђăн малта, кĕрекере, ваттисем ларнă, унтан çамрăкраххисем, ђи кайра ђăн çамрăккисемпе хĕрарăмсем. Ку йăла хунсенђен тухса кайнă хăш-хăш халăх хушшинђе ку таранђђенех пур: йаккутсен, кăркăссенĕн, тата ыттисенĕн хушшинђе те[1]). Ђăвашсенĕн те вăл йăла пулнă. Унăн йĕрне халĕ туй тунă ђухне, йе ђӳк тунă ђухне çеç курма пулать, туйра те, ђӳкре те ваттисем шалта, кĕрекере, лараççĕ, йе тăраççĕ. Унтан тата пирĕн ђăвашсем хăйсенђен аслисене пурне те «пиђи» теççĕ. Ку сăмах «пи» сăмахран пулнă. «Пи»

[1]) Ковалевский М. Родовой быт, стр. 234—312.

тени вăл кђаç, пуçлăх, пысăк çын, тени пулаť. Вăл сăмах хунсеђен ěрђесе кайнă ытти халăхсенěн те пур: тутарсемпе кăркăссем, тата алттайсем аслă çынсене „бий, пий“ теççě, тěрěксем „бей“ теççě[1]). Çапла ěнтě ăру пуçлăхě ватти пулнă.

„Ваттисем“ вăл вăхăтра пысăк хисепре тăнă. Урăхла пулма та пултарайман, мěншěн тесен, темěн аслăшě çеçен хирсенђе пысăк кěтӳсене пěр вырăнтан тепěр вырăна çӳретессине, çулталăк хушшинђе ăçтан ăçта çитессине, хăш вăхăтра кайса, хăш-хăш тěллěн çӳремеллине, тата çеçен хирти пурăнăç йěркине тěпě йěрěпе вěсем анђах пěлсе астуса тăнă. Çапла вěсем ђăн ăслисем пулнă. Ђăвашсем халě те: ватă çын—тăватă çын, теççě. Çавăнпа ватти вилсен те, ăна манман, ăна „ырă“ тесе асăнса хисепленě. Çакăнтан вăл ваттисене хисеплес йěрке тухса кайнă.

## 6. Хунсенěн тěнě йепле пулнă.

Хун ăрăвěсем пурте çӳлти кăвак пěлěте турă тесе хисеплесе пурăннă. Авалхи хунсенěн пурăнăçě вăл ђăнах та пěтěмпех пěлěтпе çěр ирěкěнђен килнě: çăмăр пулсан, аслă çеçен хирсенђе курăк пулнă, вара пурăнăç çитнě, хун тутă та, питě те пулнă. Çавăнпа авалхи хунсем пěлěтпе çěр куçěнђен пăхса пурăннă. Унтан тата куна та манмалла мар: кирек мěнле ђěрђун та тěнђе çуттине йуратаť, унăн йеннелле туртăнаť. Етем те çавах: вăл та хăйне çуратса йанă çут тěнђене ытараймасť, йуратаť, унăн йенелле туртăнаť. Тěнђи тата калама çук аслă, унăн вěçě-хěрри етем куçне курăнмасť. Çавăнпа авалхи етем: тěнђе ěмěр тăраť, ăна ăспа пěлме çук тесе шухăшланă. Авалхи ђăвашсем çинђен пěри ак çапла çыраť: «по словам престарелых чувашских жрецов, вселенная и стихии не сотворены никем, а суть вечно пребывающие и непостижимые»[2]) тет,— вăл: ђăвашсенěн ђăн ватă кěлěçисем калаңă тăрăх, тěнђене те, вăй-хăватсене те (çтихисене) никам та пултарман, вěсем хăйсемех ěмěр тăраççě, вěсене пěлсе çитерес çук, тени пулаť. Çавăнпа, ђăн çӳлти пěлěтрен пуçне, хунсем тата тěнђери тěрлě йапаласемпе тěрлě вăй-хăватсене (çтиххисене) те хисепленě. Вěсем хушшинђе усаллисем те пур тесе шухăшланă: çавсем çын пěрре йарса пуснине те асăрхаççě, кăшт кăлтăк пулсанах, ăна тытаççě, етем куракан пур хěн-хурлăх вěсенђен килет, тенě

---

[1]) Зологин., стр. 132.

[2]) Северный Архив, 1827 г., ч. 27-ая, стр. 216.

Пуринђен ытла хунсене çутçанталăк тӳпи пек курăнса тăракан çӳлти кăвак пĕлĕт ĕмĕр тĕлĕнтерсе тăнă, мĕншĕн тесен, унăн куçĕ умĕнђех çӳлтен анакан ăшăпа çĕр пиђĕ ăшăннă, унтан килекен çутăпа вăл çутáлнă, унтан ӳкекен нӳрĕпе вăл ђĕрĕлнĕ, çĕнелнĕ. Çавăнпа та çӳлти пĕлĕт умĕнђе авалхи хун кăмăлĕ çемçелнĕ, шухăшĕ йăвашланнă, ирĕксĕрех унăн пуçĕ тайăлнă. Тата асар-писер çăмăр çунă ђух, çӳлтен, пĕлĕт çинђен, çиçĕмсем çиçеççĕ, пĕтĕм çанталăк кĕмсĕртетет, çĕр ђĕтресе тăрат̆, хăш ђухне, хура пĕлĕте çурса пăрахат̆ те, аçа çапса, çунтарса йарат̆. Çакăн пек ђух хунăн ђун-ђĕри ирĕксĕрех хăранă, таçта çӳлте, пĕлĕт çинђе, калама çук хăватлăскер, хайарскер пур пек туйăннă ăна. Вăл ăна „тенкри" тенĕ. Хунсенђен тухса кайнă халăхсенĕн пуринĕн те турă йађĕ ĕнтĕ çакă сăмахран пулса кайнă. Мĕн пур уйрăмĕ те вĕсенĕн ак çакă çеç: хăшĕ-хăшĕ «НК» вырăнне «К» çеç калаççĕ, йе тата «НК» сасса йăлтах кăларса пăрахаççĕ. Çапла пĕлĕте йаккутсем «танкара» теççĕ, алттайсемпе тутарсем «тенкре» теççĕ, ытти тутарсем «текри», «текер», «тер», «таре» теççĕ[1]), Аçăрпайђанти тĕрĕксем «тарă»[2]) теççĕ, ђăвашсем «турă» теççĕ. Авалхи ђăвашсем çӳлти кăвак пĕлĕте «турă» тени вăл пĕр ђăваш йурринђен те паллă. Унта:

Ей, турăçăм, турăçăм,
Ырă курас пулсассăн,
Шăнкăр уйар пул, турă!

тенĕ[3]). Ĕнтĕ паллах: ђăваш ку йурăра хăй «туррине, çӳлти кăвак пĕлĕте, уйар пулма йăлăнат̆. Çапла ĕнтĕ хунсенĕн ђăн çӳлти пĕлĕт ђăн аслă турри пулнă. Çавăнпа ăна «хан, хон, хун, кун» тенĕ. Вăл «патша, пуçлăх. асли» тени пулат̆. Пирĕн ђăвашсем те ĕлĕк çӳлти пĕлĕте «тур-хун» тенĕ пулас пулат̆, мĕншĕн тесен, вĕсенĕн «Турхунне» тенĕ йат пур, тата хăйсенĕн пĕр туррине (пихампара) вĕсем «кашкăр хунĕ» теççĕ[4]).

Турă, çӳлти пĕлĕт, пађ-пĕђђен пулман, унăн мăшăрĕ,— арăмĕ—ами—амăшĕ,—пулнă. Çапла аçа турă та, ама турă та пулнă. «Турă» тени пĕлĕте пĕлтернĕ, епĕр ăна куртăмăр, апла

---

[1]) Журнал Министерства Народного Просвещения. Часть CCXIX, стр. 119

[2]) Ашмарин, Н. И., проф. калапă. тăрăх.

[3]) Ашмарин, Н. И. Опыт иследования чувашского синтаксиса. Симбирск. 1923 г. ч. II, стр. 112.

[4]) Ашмарин, Н. И., проф. Отголоски Золотоордынской старины в народных iеоовани х чуваш. Казань. 1921 г.

пулсан, камши вăл пĕлĕт мăшăрĕ «ама турă»? Хунсенĕн патшисем хăйсене «пĕлĕтпе ҫĕр ҫуратса йанисем» тенĕ[1]). Кунтан ĕнтĕ паллах хунсенĕн шухăшĕпе, пĕлĕтпе ҫĕр пĕр мăшăр, вĕсем уйрăм тăмаҫҫĕ, пĕрле тăраҫҫĕ. Еппин ҫӳлти пĕлĕт турă пулсан, хура ҫĕр те турă пулаť, ҫӳлти турă «аҫа» турă пулсан, ҫĕр вара «ама» турă пулаť, мĕн пурри пурте вара вĕсенђен иккĕшĕнђен ҫуралнă пулаť. Ђăнах та авалхи ђăвашсем те ҫĕре «ама» тесе шутланă[1]). Вĕсем ĕлĕк, пĕрпĕр йалăн ҫĕрне вăрласа килес пулсан, туй туса, кĕрӳ лартса кайнă[2]); унтан тата, ҫĕр-пӳ пĕтĕ пулнине хисеплесе, ĕҫе тухас умĕн „Ҫинђе“ пăраҫникĕ тунă[3]), йулашкинђен „Ака Туй“ туса ирттернĕ.

Пĕлĕтпе ҫĕртен пуҫне хунсем тата хĕвелпе уйăха турăсем тесе пуҫҫапса пурăннă. Вĕсенĕн хунĕсем (патшисем) ирсерен хĕвеле пуҫҫапма тухнă, каҫсерен—уйăха[4]). Пирĕн авалхи ђăвашсем те хĕвелпе уйăха, тата пĕлĕт ҫинђи ытти ҫутăсене те хисеплесе пурăннă. Хĕвелпе уйăха вĕсем мăшăрлăскерсем тесе шухăшланă. Вăл ҫак авалхи сутуллă йумахран паллă: Ампарăшки, Йарăшки, кулса выртаť упăшки. Тупăшĕ унăн: хĕвелпе уйăх. Хĕвел вăл ҫунатлă, хӳреллĕ, хăлхаллă, унăн урисем те пур[5]). Ђăвашсем халĕ те тупа тунă ђухне: хĕвелшĕн те, уйăхшăн та! теҫҫĕ. Унтан таға авалхи ђăвашсем хăйсенĕн кĕлĕ·ҫурђĕсенĕн (ђиркӳсенĕн) тăрне ĕлĕк ункă туса лартнă[6]), вăл хĕвеле пĕлтернĕ[7]).

---

1) Иакинф. Записки о Монголии. Спб. 1828 г. Т. I, ч. 1-ая. Стр. 213.

2) Куп ҫинђен етнокрафсем ҫыркаланисем пур.

3) Ку пит интереслĕ праҫник ҫинђен ҫырнисем ђылай. Ун ҫинђен ҫак кĕнекесенђе тупма пулаť: 1) Каменский Н. Современные остатки языческих обрядов и религиозных верований у чуваш. Казань. 1879. Стр 17—19; 2) Проф. Е. Голубинский. Религиозные верования чуваш. Труды Киевской Духовной Академии. 1862 г. Т. I, стр. 229—261; 3. Магницкий В. Материалы к об'яснению старой чувашской веры. Казань. 1881. Стр. 34—37. Ђăвашсем тата ђасђасах кама та пулсан ĕнентересшĕн пулсан: «тупа та туршăн» теҫҫĕ. «Тупа» сăмах мĕнне пĕлтернине тӳрех ăнласа илме ҫук. Пирĕн шухăшпа вăл—авалхи киттай сăмахĕ. «Ту» тени киттайла «ҫĕр» пулаť. (Васильев В. Об отношении китайского языка к средне-азиятским. Ж. М. Н. П. 1872 г. IX, стр. 123). Апла пулсан, «тупа та туршăн» тени „ҫĕрпе пĕлĕтшĕн“ тени пулаť. Кунтан та ђăвашсем пĕлĕтпе ҫĕре мăшăрлăскерсем тесе ĕненни курăнса тăраť.

4) Иакинф, стр. 213.

5) Золотн., 153—155.

6) Паллас, I, стр. 189.

7) Хĕвел «ама турă» пулнă пулас пулаť, мĕншĕн тесессĕн, ђăваш хĕрарăмĕсем унăн мĕлкине ӳкернĕ кĕмĕл йе йĕс ҫаграшкана хăйсенĕн кăкăрĕ ҫинђе

Пӗлӗтпе ҫӗртен, ҫӳлти ҫутӑсенђен пуҫне, хунсем тата тӗнђери тӗрлӗ вӑй-хӑватсене те хисепленӗ. Ҫапла вӗсенӗн шыв турри те, вут турри те [1]), вӑрман турри те, ҫил турри те, тата урӑх турӑсем те темӗн ђухлех пулнӑ. Ҫав турӑсенђен пуринђен те вӗсем хытӑ сыхланса хӑраса пурӑннӑ, вӗсенӗн кӑмӑлне пӑртак та пулсан ҫавӑрас тесе, вӗсене выљӑх-ђӗрлӗхсем пуса-пуса ђӳкленӗ.

## Хун йӑхӗсем йепле сарӑлса пынӑ.

Кирек мӗнле халӑх та, пурӑнӑҫ малалла кайнӑҫемӗн ӗрђемесӗр тӑни ҫук. Кайӑк тытса пурӑнакан йӑхсем ҫеҫ хытах ӗрђеймеҫҫӗ, мӗншӗн тесен, вӗсене апатҫимӗҫ тупма хӗнтерех, тата пурӑнӑҫӗ те латти ҫук. Кӗтӳҫ халӑхсем хытӑрах ӗрђеҫҫӗ, мӗншӗн тесен, вӗсенӗн апатҫимӗҫ нумайрах та, тата вӑл ал айӗнђех. Ҫавӑнпа вӗсене пурӑнма нумай ҫӑмӑлтарах. Хун йӑхӗсем выљӑх-ђӗрлӗх усра пуҫласан, вара хытӑрах ӗрђесе, йышлӑланса пыра пуҫланӑ. Йышлӑланнӑ майӗпе ҫӗр тӑвӑрланнӑ, вара ирӗксӗрех вӗсенӗн, ҫӗр ӑҫталла ирӗк, унталла тапмалла пулнӑ. Тапассине вӗсем хӗвеланӑҫӗ йеннелле ҫеҫ тапма пултарнӑ. Ытти ҫӗрелле кайма вӗсене йе вӑрмансем, йе ҫӳлӗ тусем, йе тата вӑйлӑ халӑхсем пӳлсе, ђарса тӑнӑ. Ҫапла хун ӑрӑвӗсем тахҫан, авалах, Вӑта Аҫирен кай йеннелле, хӗвеланӑҫӗ йеннелле, сарӑлса пынӑ. Кунталла ҫӗршывсем лайӑх пулнӑ, тата никам та ытлашши пӳлсе картласа тӑракан пулман: унталла аслӑ ирӗк ҫеҫен-хирсем

---

ҫакса ҫӳренӗ (Копец. Dziennikv podrozy „Исторический Вестник"-ре, 1896 г. г. LXVI, (стр. 239). Унтан тата ђӑваш арӑмӗсем кӑкӑрӗ ҫине хӗвел мӗлкипе тӗрлесе те тӑваҫҫӗ. Ӑна „кӗскӗ" теҫҫӗ. Ђӑваш хӗрарӑмӗн пӗтӗм тумне илсен те, вӑл хӗвел турӑ майлӑ тумланни курӑнса тӑрать: унӑн хушпӑвӗ — кайӑк шӗлепки, саррисем — ҫунатсем, йаркӗђсем, шерепесем, ытти тӗрлӗ йӑлтӑркисем—хӗвел шелеписем, шӳлкеме—пӗсехи, унтан тата вӑрӑм хӳрине илсен, пирӗн умра лапах илемлӗ ҫап-ҫутӑ хитре кайӑкла хӗвел турӑ килсе тӑрать. „Кӗскӗ" тени вӑл сӑн ӳкнине пӗлтерет (куҫ-кӗски), унтан тата „кайӑк" тенине те пӗлтерет пулас, мӗншӗн тесен, ђӑвашсенӗн кайӑк-кӗсӗк (кайӑк-кӗшӗк) сӑмах пур.

[1]) Ҫӗр ҫинђи ҫунакан вута ђӑвашсем авал хӗвел ађи тесе шухӑшланӑ пулас пулать. „Хӗвел" сӑмах вӑл авалхи шумерсем „Гибиль" тенӗ сӑмахпа пӗр. „Гибиль" тесе вӗсем „вут туррине" каланӑ. (Рагозина З. А. История Халдеи с отдаленнейших времен до возвышения Ассирии. 3 изд. С. Петербург. Стр. 202).

сарӑлса выртнӑ. тата сапӑнђӑк вӑйсӑр фин йӑхӗсем анђах пурӑнкаланӑ. Ђӑваш ытти хун йӑхӗсенђен пуринђен те ђи кай йенђе пурӑннӑ терӗмӗр епӗр. Çавӑнпа хӗвеланӑçӗ йеннелле пуринђен малтан вӗсем сарӑлса пынӑ. Ђӑн малтан вӗсем Алттай тӑвӗсен çывӑхӗнђе, Ирттыш шывӗ пуçӗнђерехре пурӑннӑ пулмалла. Кайран, хун йӑхӗсем йышлӑланнӑçемӗн, вӗсем хуллен-хуллен сарӑла-сарӑлах, Урал шывӗсем патнелле çитнӗ, унтал Атӑл таврашне çитсе вырӑнаçнӑ. Çапла ӗнтӗ пӗтӗм хун ӑрӑвӗсемпе ђӑвашла ӑрусене илсен, вӗсем тахçан, авал, Вӑта Аçирен пуçласа, Мӑн Атӑл таранах сарӑлса пурӑннӑ.

Ђӑвашсем те, Вӑта Аçире пурӑнакан ытти халӑхсем те инçепе çывӑха çухрӑмпа шутлаççӗ. „Çухрӑм“ тени вӑл „çухӑр“ тенӗ сӑмахран тухнӑ. „Çухӑр“ тени „кӑшкӑр“ тенине пӗлтерет. Кунтан ӗнтӗ паллӑ—авал хунсем хӑйсенӗн çӗрӗсене çухӑрнӑ сасӑ илтӗннине шутланӑ[1]). Апла пулсан, вӗсенӗн çӗрӗсем ӗлӗк ђӑнах та пит аслӑ, пит ирӗк пулни кунтан лайӑх курӑнса тӑрать[2]).

Мӗншӗнха вӗсем çав тери аслӑ вырӑн йышӑнса пурӑннӑ? Вӑл пурӑнӑç йӗркинђен килет. Кайӑкçӑна çӗр аслӑрах кирлӗ, кӗтӳçе сахалтарах, çӗр ӗçӗпе пурӑнакана тата сахалтарах, ӳнерлӗхпе (промышђӑннӑçпа) пурӑнакана пуринђен сахал. Пӗлӗвçӗсем ӑна пит лайӑх шутласа кӑларнӑ. Вӗсем каланӑ тӑрӑх: 100 тӑваткӑл çухрӑм çӗр çинђе кайӑкçӑсем 2-ӗн, 3-ӗн пурӑнма пултараççӗ, кӗтӳçӗсем 300-ӗн, çӗр ӗçлекенсем—9000 таран, ӳнерçӗсем—30,000 таран[3]). Ђӑнах та кайӑкçӑ пурӑнӑçӗпе пурӑнакан ӳштексем (оçтаксем) халӗ пӗр 6—7000 çын 192.000 тӑв. çухрӑм çӗр йышӑнса пурӑнаççӗ. Çав ӳштексемех тата, пӗр 1000 çынтан ытла мар, Ваç-Йухан йатлӑ шыв тӑрӑх пурӑнаççӗ, вӑл шывӑн тӑрӑшшӗ 1000 çухрӑма йахӑн[4]). Çакӑнтан шутласа кайсан, кӗтӳç пурӑнӑçӗпе пурӑнакан хун ӑрӑвӗсем авал пит аслӑ вырӑн йышӑнса пурӑннинђен пӑртак та тӗлӗнмелли çук.

---

1) Золотн., 73.

2) Муртвесем çухрӑма «вайгельбе» теççӗ. Проф. Н. И. Ашмарин каланӑ тӑрӑх, вӑл «сасӑн вӗçӗ,—конец голоса» тени пулать. Муртвесем—финсем Финсем кайӑкçӑсем пулнӑ. Çавӑнпа вӗсем вӑрманлӑхсенђе темӗн аслӑшӗ вырӑнсем йышӑнса пурӑннӑ. Çавӑнпа вӗсем те çӗрӗсене сасӑ илтӗннине шутланӑ.

3) Трахтенберг О. В. и Гуковский А. И. Фазы общественного развития. Москва—Ленинград, 1926 г. Стр. 152.

4) Довнор-Запольский М. В. Русская история в очерках и статьях. Т. I стр. 10.

Аҫи варринђи пурӑнӑҫа сӑнаса курнӑскер калат̆: „Конечно вначале занимались лучшие степные местности, а затем, по мере размножения стад, равно как и самих номадов... кочевая жизнь захватывала все больший район, не пренебрегала даже скудными уголками пустыни и расплылась по ней во все стороны“[1]),—малтан вӗсем ҫеҫен хирти ђӑн ырӑ вырӑнсене йышӑннӑ, унтан кӗтӗвӗсем те, номађӗсем хӑйсем те ӗрђенӗ майӗпе... пысӑкран пысӑк района йара-йара илсе пынӑ, пуш уйри нађар вырӑнсене те хӑварман, ун тӑрӑх аслӑшпех сарӑлса пурӑна пуҫланӑ, тет.

Ҫапла хунсенђен ӗрђесе кайнӑ халӑхсем вӗҫӗ-хӗрри курӑнми аслӑ ҫеҫен хирсенђе ӑрӑвӑн ӑрӑвӑн уйӑрӑлса, ҫӳлти пӗлӗтпе ҫӗре, тата тӗнђери тӗрлӗ вӑй-хӑватсене пуҫҫапса пӑхӑнса пурӑннӑ. Вӗсенӗн кӗтӗвӗсем, ҫӑвӑр йаракан хурт пек, пӗр уйран тепӗр уйа куҫа-куҫа ҫӳренӗ. Вӗсенӗн хыҫҫӑн хунсем вӗтшакӑр ађипӑђисене урапасемпе, кӳмесемпе турттарса пынӑ. Ҫак авалхи тӗп йӑхсем хушшинђе ӗнтӗ ђӑвашла ӑрусем те пулнӑ. Вӑл ӑрусем ђи кай йенђе пурӑннӑ пулмалла, мӗншӗн тесен, вӗсем Атӑл ҫине пур тӗрӗксенђен малтан килсе вырӑнаҫнӑ.

## 8. Ђӑвашсем Киттай таврашӗнђе ҫӳренӗ йӗрсем.

Ђӑвашсем тахҫан авал Киттай таврашӗнђе ҫӳренӗ ђухнехи йӗрсем халӗ те пур. Ун пек йӗрсем—пирӗн ђӑваш ђӗлхинђе тӗл-пулакан сӑмахсем. Вӗсем ак ҫаксем: ђике, ђи, ҫын, ҫӗнӗ, туй, тинӗс (кит. „тинцзы“—шурлӑх, кӳлӗ), сухан, тата тен урӑххиҫем те пулӗ[2]). Унтан тата пирӗн ђӑвашсем халӗ те йурӑсенђе Киттай ҫӗршывне асӑнаҫҫӗ. Ак пӗр йурӑра ђӑвашсем мӗн калаҫҫӗ:

Вӗҫ, вӗҫ, аккӑш, вӗҫ, аккӑш;
Киттай хир варрине ӳк, аккӑш;
Киттай хир варринђе шур тулӑ,
Уйӑрат̆ске пире пӗр турӑ!

---

1) Пржевальский Н. М. Современное положение Центр. Азии. Русск. Вестн. 1886 г. Т. 186, стр. 475.

2) Ђӗлхе пӗлӗвҫисем ђӑваш ђӗлхипе Киттай ђӗлхипе тӗплӗрех танаштарса пӑхсассӑн, тен историшӗн темӗн ђухлӗ хаклӑ йапаласем тупӗђђӗҫ. Ӑна „Васильев, В. Об отношении китайского языка к средне-азиатским“ йатлӑ статйа тӑрӑх шухӑшлама пулат̆. (Пӑх: Ж. М. Н. П. 1872 г., IX, стр. 82—124).

тет[1]). Ђăнах та киттайсем мĕн авалтанпах шурă тулă тăваççĕ, Хаљхи ђăвашсем ăна хăйсем çисе курман пулсан та, авалхисенђен пĕлсе йулнă. Тепĕр йурринђе Киттай тавраш̆ĕнђе çўрени çинђен тўрех асăнат:

Хăпартăм çўлĕ ту çине,
Лартăм Киттай суљ çине,

тет. Ђăваш хушшинђе тата киттайсем çинђен темĕн ђухлĕ сăмах çўрет, вĕсем те тахăçан авалран тăрса йулнă сăмахсем пулас пулат. Ун пек елементсене пуçтарса тĕрĕслесе тухсан, тен вĕсем тăрăх ђăваш аваллăхĕ çинђен тата ытларах пĕлме пулĕђђĕ. Ку ĕçе епĕр тăвайманха. Малашне мĕн пулĕ. Çавăнпа урăх нимĕн калама та пултараймастпăр.

---

[1]) Н. И. Ашмарин. Сборник чувашских песен, записанных в губерниях Казанской, Симбирской и Уфимской. Казань. 1900 г. Стр. 20.

## IV.

### Ђăвашла ăрусемпе ђăваш ăрăвĕсем.

1. Ђăвашла ăрусем йепле пулса кайнă.
2. Ђăвашла ăрусем миçе пулнă.
3. Ђăвашла ăрусем йепле пурăнăçпа пурăннă.
4. Ђăвашсем çинђен Херотот мĕн çырат.
5. Ђăвашсенĕн кўршисем камсем пулнă.
6. Пысăк куљттурлă халăхсем.

## IV. Ђăвашла ăрусемпе Ђăваш ăрăвĕсем.

### 1. Ђăвашла ăрусем йепле пулса кайнă.

Хун йăхĕнђен ĕрђесе кайнă тĕрлĕ ăрусем пĕр çĕрте, пĕр пек çанталăкра, пĕр тĕслĕ ĕçпе, пĕр майлă пурăнăçпа пĕрле пурăннă ђухне, вĕсенĕн хушшинђе пысăк уйрăмсем пулман теме пулаť: вĕсенĕн пурăнăçĕ те, калаçан ђĕлхи те, пурте пĕр ĕрĕнкеллĕ пулнă. Анђах çав хун ăрăвĕсем, пурăннăçемĕн, хуллен-хуллен тĕрлĕ çĕрелле сарăлса çитсе, сапăнђăкăн пурăна пуçласан, урăхланса пынă, мĕншĕн тесен, çĕнĕ çĕрте, çĕнĕ ăрусем хушшинђе, çĕнĕ мелпе пурăна пуçласан, вĕсем урăхланмасăр пĕр пек тăма пултарайман. Пуринђен малтан вĕсенĕн калаçан ђĕлхи улăшăнса урăхланса пынă. Хунсенĕн тĕп ђĕлхи вăл ђăвашла—тĕрĕкле ђĕлхенĕн асламăшĕ пулнă. Ђăваш ăрăвĕсем Атăлпа Урал хушшине килсе вырăнаçсан, çав тĕп ђĕлхе хытах улăшăна пуçланă. Унтан нимĕн те тĕлĕнмелли çук. Хытса тĕрекленсе çитмен, çамрăкрах ђĕлхесем калама та çук ђас улăшăнаççĕ. Çўревçĕсем асăрханă: Африк çĕрĕнђе пурăнакан кайăкла етем ушкăнĕсем, пĕрпĕринђен уйăрăлса кайсан, кайран, пĕр-ик сыпăкранах, пĕрпĕрне ăнланайми пулаççĕ тет. Çырулла—кĕнекеллĕ ђĕлхесем çеç, вăрахăнтарах улăшăнса, йусанса пыраççĕ. Анђах вĕсем те хăш ђухне, калама та çук, ђас урăхланса кайма пултараççĕ. Ак илĕпĕр вырăс ђĕлхинех: Третйакковскипе Пушкин хушшинђе 100 çул та çук, анђах Третйакковски ђухнехи вырăс ђĕлхине Пушкин ђухнехипе танлаштарса та çитерес çук: вырăс ђĕлхи çав икĕ сын ĕмĕрĕ хушшинђех çав тери нумай улăшăннă. Ĕнтĕ хун ăрăвĕсен те, пĕрпĕринђен уйăрăлса кайсан ђĕлхисем улăшăнмасăр тăман.

Ђăваш ăрусенĕн ђĕлхи пуринђен ытла тĕрлĕ фин йăхĕсемпе хутăшса, хутшăнса пурăннинђен уйрăмланса пынă пулас пулаť, мĕншĕн тесен, пĕр халăхăн ђĕлхи тепĕр халăхпа пĕрле пурăна пуçласан, хытă урăхланаť. Хусана вырăссем туртса илнĕренпе пирĕн ђăваш ђĕлхийĕн сăнĕ-сăпађĕ улшăнса пынине халĕ пурте пĕлетпĕр. Çавăнпа ђăвашла ăрусем, пĕр нĕсĕлпе пурăнаканскерсем, фин йăхĕсем хушшине килсе кĕрсен те, вĕсенĕн ђĕлхи улăшăнмасăр тăманни паллах. Ђăнах та проф. Н. И. Ашмарин ђăваш ђĕлхине финленсе кайнăскер

тесе каланине епӗр малтах куртӑмӑр. Йепле пулсан та, Алттайпа Атӑл хушшинђе пурӑнакан хун ӑрӑвӗсем ђӑн авалах ӑрасналаннӑ ђӗлхепе калаҫнӑ. Вӑл ђӗлхе халхи ђӑваш ђӗлхи-йӗн тӗп ђӗлхи пулнӑ[1]).

Пӗр нумай пӗлекен ђӗлхе ӑсти (линквист) калат̆: „можно полагать, что... от Оби и Иртыша по Уралу до Камы и Волги и далее на юго-запад, быть может, до Дона, говорили на каком-то особом языке, имевшем большое сходство с нынешним чувашскнм языком“[2]) тет. Ђӑвашла вӗл: Оп шывӗпе Ирттыш шывӗнђен пуҫласа, Урал тӑрӑх кайсан, Ђӑлман Атӑлпа Мӑн Атӑл таранђђенех, тата кай йенпе кӑнтӑр йенелле, тен Тон шывӗ патне ҫитех пулӗ, темле уйрӑм ђӗлхепе калаҫнӑ, вӑл ђӗлхе хађхи ђӑващ ђӗлхипе пӗр пекрехех пулнӑ тесе калама йурат̆, тени пулат̆. Ҫапла ђӑн ӗлӗк Аҫи варринђе пурӑнакан пӗр ђӗлхеллӗ халӑхран харпӑр хӑй ђӗлхипе калаҫакан (икӗ тӗслӗрех калаҫакан) халӑхсем пулса кайнӑ: авалхи ђӑвашла ђӗлхепе калаҫакан ӑрусемпе авалхи тӗрӗкле калаҫакан ӑрусем. Ђӑвашла ӑрусем Ирттышпа Атӑл хушшинђе пурӑннӑ тӗрӗкӗсем Алттай леш йенђе, Аҫи варринђе, Киттай ђикки таранах сарӑлса кӗтӳсем кӗтсе ҫӳренӗ[3]).

Ку ӗҫ тахӑҫан авалах пулнӑ пулас пулат̆. Ӑна пирӗн ђӑваш ђӗлхине ђӑн авалтан кӗрсе йулнӑ тӗрлӗ финле сӑмахсем лайӑх кӑтартса тӑраҫҫӗ. Ун пек сӑмахсем ак ҫаксем: хӑмӑр, кӑткӑ, карас, ӑйӑр, ункӑ, пӑра, ӑвӑс, палан[4]), тата урӑх та нумай. Вӗсенђен хӑшӗ ђӑваш ђӗлхи ҫине липешле (ливсен) майлисем кӗнӗ (ӑвӑс, палан), хӑшӗсем естле майлисем (тӗк, хӑмӑр, ӑйӑр, ункӑ), хӑшӗсем литва майлисем (пӑри, йӑва) йе тата лоппарла, йе комилле, йе ут-муртла майлисем. Апла пулсан, вӗсем ђӑваш ђӗлхи ҫине ҫак халӑхсем Вӑта Атӑл таврашӗнђе пӗрле пурӑннӑ ђухне ҫеҫ кӗме пултарнӑ, мӗншӗн тесен, халӗ таҫта Палт тинӗсӗ хӗрринђе, йе Пӑрлӑ тинӗс таврашӗнђе пурӑнакан липеш, йе латтыш, йе лоппар сӑмахӗсене ђӑвашсем кайран урӑх ҫӗрген ниҫтан та йышӑнман пулӗђђӗҫ.

[1]) Н. Н. Поппе калат̆: мы можем не считать (Чувашский язык) турецким языком, но рассматривать его как язык, обособившийся еще до сформирования пратурецкого языка“ тет. Вестник Научного Общества татароведения, 1927 г. № 7, стр. 61.

[2]) Известия Российской Академии Наук. 1924, Стр. 297.

[3]) Иностранцев К. Хунну и Гунну. Ленинград. 1926. Стр. 94—97, 101.

[4]) Кеппен Ф. П. Материалы к вопросу о первоначальной родине и первобытном родстве индоевропейского и финно-угорского племени. Журнал Мин. Нар. Просвещ. 1886 г. Август, Октябрь и Декабрь.

Ку финле укăрла халăхсем пĕрпĕринђен уйăрăлса кайни вăл нумай авал пулнă. Хăш пĕр пĕлĕвçĕсем каланă тăрăх, ку ĕç пулни 2000 çул ытла пулаť. Еппин ђăвашсем Атăл çывăхне килсе вырăнаçни те унтан кайран мар, малтан пулнă пулаť.

Çапла тахăçан авалах пĕр хунла халăхран ђăвашла ђĕлхепе тĕрĕкле ђĕлхелле калаçакан ăрусем пулса кайнă: ђăвашла хунсемпе тĕрĕкле хунсем.

## 2. Ђăвашла ăрусем миçе пулнă.

Ђăвашла ăрусем нумай пулнă. Хăш-хăш авалхи çыруçăсем каласа хăварнинђен шухăшласа кайсан, вĕсем 10-ран кайа пулман теме пулаť. Вĕсенђен пĕри Кусар ăрăвĕ пулнă, тепри Пăлкар ăрăвĕ. Çаксем иккĕшĕ те ђаплă йăхсем пулнă. Кусарсенĕн пĕр хунĕ авал пĕр йеврей патне хăйсем çинђен ак çапла çырса пĕлтернĕ. „Ты спросил нас в твоем письме: из какого народа, из какого племени и какого колена ты (т. е. хазарский хакан) происходишь? Я сообщаю тебе, что я (веду свой род) от сыновей. Яфета, от потомства Тогармы. Так я нашел в генеалогических книгах моих предков, что у Тогармы было десять детей. Вот их имена: старший—Авор, второй—Турис, третий—Ава(о)з (Авор), четвертый—Угуз, пятый—Биза(е)ль, шестой--Тарна, седьмой—Х(К)азар, восьмой—Янур (Занур), девятый—Бугар и десятый—Савир[1])— есĕ хăвăн çырăвăнта пиртен ыйтатăн: есĕ мĕнле халăхран, мĕнле йăхран, мĕнле сыпăкран тухнă çын? тетĕн. Епĕ сана акă мĕн калатăп: епĕ (хам ăрăвăмпа) Йахвет ывăлĕсенђен, Токарма йăхĕнђен, тухнă. Епĕ хамăр асаттесен (кенеалоки) кĕнекинђе çакна тупрăм: Токармăн вун ађа пулнă. Вĕсенĕн йађĕсем ак çаксем: асли—Авор, иккĕмĕшĕ—Турис, виççĕмĕшĕ—Авор, тăваттăмĕшĕ—Укус, пиллĕкĕмĕшĕ—Писел, ултăмăшĕ—Тарна, çиђђĕмĕшĕ—Кусар, саккăрмĕшĕ—Йанур, тăххăрмĕшĕ—Пулкар, вуннăмĕшĕ--Савир, тенĕ. Ку çырăвра каланă тăрăх, кусарсемпе пулкарсем, тата ытти 8 йăх пурте пĕр кăкран тухнă пулаť. Апла пулсан, йађĕсем те вĕсенĕн авалхи ђăваш йађĕсемпе пĕр пекех пулас пулаť, мĕншĕн тесен, епĕр пĕлетпĕр—пулкарсем ђăваш пулнă.

Авалхи ђăваш йађĕсене К. В. Макнитски 10.000 йат ытла пуçтарнă. Вĕсене вăл авалхи тĕрлĕ хутсем тăрăх, токкументсем тăрăх шыра-шыра тупса пуçтарнă. Хусар патши çырнă

[1]) Берлин И. Исторические судьбы еврейского народа на территории русского государства. Петербург. 1919 г., стр. 86.

çырури йатсене ђăваш йађĕсемпе танлаштарса пăхсан, вĕсем ђăвашла йатсем пулни тӳрех курăнса кайаť[1]).

| | | |
|---|---|---|
| Токарма—ђăвашла: | | Тохар[2]), Тăварăм[3]) |
| Авир | „ | Авер[4]), |
| Турис | „ | Ториш, Торихха[5]), |
| Авар | „ | Авар[6]), |
| Уххус | „ | Оххоштер[7]), |
| Писаљ | „ | Писал[8]), |
| Тарна | „ | |
| Хасар | „ | Кусар[9]), |
| Йанур | „ | Йанурс[10]), |
| Пулкар | „ | Пулкар[11]), Пăлкар, Пăлхар. |
| Савир | „ | Савир[12]). |

Çапла ĕнтĕ ђăваш йађĕсемпе авалхи кусар йађĕсем пĕр пек, вĕсене пĕрпĕринђен нийепле те уйăрма пулмасť. Çавăнпа кусарсене те, вĕсемпе пĕрле ыттисене те ђăвашла халăхсем теме пирĕн тивĕç пур. Вĕсем пурте пĕрпĕринпе пĕрлешсе, çыхăнса тăрса, пĕр несĕл пулса пурăннă. Çавăнпа калаçасса та вĕсем пĕр майлах ђăвашла калаçнă пулас пулаť. Ђăнах та Паљхи тӳрех калаť: „язык болгар сходен с хазарским[13]) — пăлкар ђĕлхи кусар ђĕлхи пек, тет. Пăлкар ђĕлхи ђăвашла ђĕлхе пулнине, вăл тĕрĕкле ђĕлхесенђен уйрăм тăнине епĕр

[1]) Ђăваш йађĕсем икĕ тĕслисем пур: пĕрисем—ахаљ йатсем, теприсем—ахаљ йат çумне йе малтан, йе хыçалтан „пи, пик, пак, пек, пай, пей пел, пил, пан, пен, ван, вен, хан, хун, тар, тер“ хушнисем.

ПРИМЕРСЕМ:

| Ахаљ йатсем: | Хушса тунă йатсем: |
|---|---|
| Мурса | Пикмурса |
| | Пимурса |
| | Паймурса |
| | Мурсипак |
| Илту | Илтупай |
| | Илтупак |
| | Илтуван |
| | Илтухан |

тата урăххисем те нумай. „Пи, пик, пек, пак, пай, пей, пел, пил“ тени вăл кіђаç, аслă çын тени пулаť (Хвольсон, стр. 55—56; Ашмарин, Болгары и Чуваши, 60.), „пан, пен, ван, вен“ тени те аслă, пысăк çын тенийех; „хун, хан“ тени те аслă çын, кіђаç, патша тени (çавăнтах) (В. П. Васильев. Об отношении китайского языка к средне-азиатским. Ж. М Н. П., 1872 г., IX, стр. 121).

[2]) Магн., 83. [3]) Магн., 24, 37. [4]) Магн., 86 [5]) Магн., 24. [6]) Магн., 64 [7]) Магн., 64. [8]) Магн., 72. [9]) Магн., 52. [10]) Магн., 99. [11]) Магн., 34. [12]) Магн., 71.

[13]) Гаркави, сказания мусульм. писателей, стр. 219.


Тăвашла ăрусемпе кӳршисем.
2400 ҫул ĕлĕк.
йăлăм ҫикки.
хура вăрман ҫикки.
ҫеҫен-хирсен ҫикки.
Киттай хӳми.
Хура тинĕс
Хун арăвĕсем
Монголсем
Саксем

халĕ лайăх пĕлетпĕр. Кусарсен ђĕлхи те, Фатлан каланă тăрăх, çавăн пекех тĕрĕкле ђĕлхесенђен уйрăм ђĕлхе пулнă[1]).

### 3. Ђăвашла ăрусем йепле пурăнăçпа пурăннă.

Ђăвашсем ун ђухне ытти хунсем пекех кĕтÿçĕсем пулнă, ытти хунсем пекех кайăка та çÿренĕ. Çакна пурне те Ирттыш таврашĕнђе тупнă ђăн авалхи йапаласем лайăх кăтартса тăраççĕ. Вĕсем халĕ Ленинкратра Ермитташ йатлă Муçейре тăраççĕ. Вĕсем пысăк ылттăн тăхасем.

Кунта (пăх 3-мĕш ÿкерђĕк çине) вăрманта пĕр кайăкçă йăвăç çинђе пытанса лараŤ, пилĕкне хĕç çыхнă, выртакан лашине ђĕлпĕртен тытнă; лаши Вăта Аçири ирĕкре пурăнакан лаша пек, пысăк пуçлăрах, кĕске ураллăрах; лашине кайăкçă, иртен-çÿрен кайăк анкуртăр, ан асăрхатăр тесе, йури вырттарнă; йытти ђĕлхине кăларнă,—кусем пĕр ĕрет; тепĕр ĕретĕнђе капан тараŤ; кайăкçă лаши çинђе вĕçтерсе пыраŤ, капана ухăпа перет[2]). Ку йапала ĕнтĕ авал Алттай тавраш ĕнђе пурăнакан ђăвашла йăхсем йепле ухутара çÿренине лайăх кăтартса тăраççĕ.Ку кайăксен лаши те пур, йытти те пур. Çапла вĕсем выђăхђĕрлĕхсем те усранă.

Çав Ермитташрах тата тепĕр йапала пур. Ăна таса ылттăнран шăратса тунă. Ăна çав Ирттыш таврашĕнђех тупнă. (пăх 4-мĕш ÿкерђ. çине). Кунта çулçине лăсах йанă лăпсăркка йăвăç. Унăн кутĕнђе: виçĕ çын—2 арçын, 1 хĕрарăм, тата 2 лаша. Хĕрарăмин пуçĕнђе çÿлĕ калпак, вăл кĕпе çинђен сăхман пекки тăхăннă; унăн çухависем ђалăш; вăл çĕрте лараŤ. Арçынĕсен сухалĕсем çук, мăйăххисем пур. Вĕсенђен пĕри çĕре тăсăлса выртнă вырттаŤ, пуçне хĕрарăмăн ђĕрçи çине хунă; пуçĕнђе унăн кĕççерен тунă шĕвĕр тăрлă çĕлĕк; кĕлеткине кĕске кĕпе тăхăннă, унăн çийĕнђен пиртен тунă йушман, пилĕкне хытă çыхнă; урине кĕске кунђаллă атă тăхăннă. Тепĕр арçынĕ унăн хыçĕнђе лараŤ. Вăл та выртаканни пекех сухалсăр, шĕвĕр çĕлĕклĕ, икĕ лашана ђĕлпĕртен тытнă. Ку лашисем те—Çĕпĕр лашисемех. Вĕсенĕн çилхисене каснă, хÿрисене йавнă, йĕвен тăхăнтарнă, йĕнерленĕ, йĕнеррин йарaписем пур. Йăвăç çинђе ухă йĕппи çакăнса тăраŤ[3]).

---

[1]) Д. А. Хвольсон. Известия о хозарах, буртасах, болгарах, мадьярах, славянах и руссах Абу-Али Ахмеда Бен-Омар Иб-Даста Сиб 18с9 г. стр. 76 Известия Аль-Бекри и др. авторов Руси и славянах. Сиб. 1678 г. стр. 61.

[2]) Кондаков. Русские древности в памятниках искусства. Сиб. 1890 г. Вып. III, стр. 62

[3]) Çавăнтах, стр. 62—63.



**3-мĕш ӳкерҷĕк.** Авалхи ҭăвашла ăру ҫынни кайăка сыхлат, кайăка хăвалат.

Ку йапала та ĕнтĕ çав Иртгышпа Атăл хушшинҍе пурăннă авалхи ҍăвашла йăхсенĕн пурăнăçне кетартса тăрат̆.

Çак тăхасем çине ÿкернĕ çынсенĕн тумтирĕсене илемлетсе ерешлентерсе пĕтерни лайăх курăнат̆. Вĕсене авалхи ҍăваш



4-мĕш ÿкерҍĕк. Авалхи пайăрçасем таӑпа,ҫĕ.

тумтирĕсемпе танаштарса пăхсан, акă мĕн куратпăр: кусенĕн те, ҍăвашсен те ерешсĕне пĕр майлă туҍă та, пĕр пек тытнă.

Пуринҍен ытла çурăмĕсемпе çухависем пĕр майлă.

## 4. Ђăвашсем ҫинђен Херотот мĕн калаť.

Ђăваш йатне халĕ тĕрлĕ калаҫҫĕ: ђăвашсем хăйсем йе „ђуош“, йе вăрăмăн „ђăваш“ теҫҫĕ; ҫармăҫсем „суас“, тутарсем тата хăшĕсем «йуаш» теҫҫĕ. Ђăн авал ђăваш йатне *У* сасса тăсарах „ђууш“ тенĕ пулмалла, мĕншĕн тесен, вăрăмăн илтĕнекен *У*-ран, йе *О*-ран ђăвашсем халĕ «*ĂВА*» тăваҫҫĕ: ту—тăвас, ҫу—ҫăвас, теҫҫĕ. Ытти тĕрĕк ђĕлхинђе вăрăмăн илтĕнекен *У*, *Ӳ*, *О* пулсан та, ђăвашсем ун вырăнне „*ĂВА*“, йе «*ĔВЕ*» туса хураҫҫĕ:

Алттайла: тӧӧ, пуур, пуула, туул; ђăвашла: тĕве, пĕвер, пăвăла, тăвăл, тата ыттисем те ђылай [1]).

Пĕр 2400 ҫул ĕлĕк Атăлпа Урал хушшинђе ђăвашсенĕн йаđĕ кĕнеке ҫине ђăн первей ӳкет. Ăна ӳкерекенни Херотот пулнă. Вăл крек ҫынни пулнă. Крек ђĕлхинђе *Ђ*-па *Ш* пулман. Ҫавăнпа Херотот *Ђ* вырăнне *Т* (*Θ*), *Ш* вырăнне *СС* ҫырнă та, вара авалхи ђăваш йатне крекле *θrss—тӳсс* [2])—*твш* [3]) тесе ӳкернĕ. Ҫавăнтанпа вара крексенĕн ҫыруҫисем те, римсенĕн те «ђăваш—ђуаш» тенĕ сăмаха «ђусс—тусс» теме пуҫланă. Кун ҫумне вĕсем тата „гете“ (хетте) хушнă. Ку сăмах „халăх, йыш“ тенине пĕлтернĕ [4]). Ҫапла ђăвашсене авалхи ҫыруҫăсем туссахетте тенĕ. Вăл ĕнтĕ „ђăваш халăхĕ“ тени пулаť.

Ҫак сăмахах хăшĕ тата „фиссахетте“ тесе вулаҫҫĕ. Хăшхăш римсем авалхи ђăваш йатне тата урăхларах калана: «турсахетте» тенĕ. Халăх йаđĕсене пур халăх та хăй майлă ҫавăрса калаť. Ак ђăвашсемех „рус“ тенĕ сăмаха «вырăс» тесе хунă. Херотот ђăваш йатне «тусс» тенине паллă Расмуссĕн те [5]), ђаплă Мийр та йышăнаҫҫĕ [6]).

Ђăн авалхи ђăвашсем пурăннă ҫĕршыв ҫинђен Херотот ак ҫапла каласа пĕлтерет: „от них текут четыре больших реки.... Имена этих рек: Лик, Оар, Танаис и Сиргис“ тет [7]).

---

[1]) Вэрбяцкий В. Словарь алтайского и алададского наречий тюркского языка. Казань. 1884 г. стр. 379.

[2]) Марр Н. Я. Чуваши—яфетиды на Волге. Чебоксары. 1926 г. Стр 17. Петров М. П. О происхождении Чуваш. Чебоксары. 1925 г. Стр. 54—55.

[3]) Марр Н. Я. По этапам яфетической теории. Москва -Ленинград 1926 г. Стр. 366.

[4]) Семенкович, Мордва—гелоны. Зап. Моск. Арх. О-а т. XXVII

[5]) Ж. М. Н. П. 1865 г. Отд. Классич. Филолог стр. 61.

[6]) Пăх: Q. Maîr, Das Land d. Skythen bei Herodot. Sauz, 1884. Das land d. Skythen bei Herodot d. Daricos in demselben. Jbid 1885 г. Der feldzug d. Daricos gegen die Skythen. Jbid 1886 г.

[7]) Перевод П. Д. Из истории Геродота. Москва 1905 г. Стр 112.

Вăл: вĕсем патĕнђен тăватă пысăк шыв йухат..... Вăл шывсенĕн йађĕсем: Лик, Оар, Тан, Çирхис, тени пулат. Кунта Лик—Илек (Урал) пулат, Оар—Атăл, Тан—Танах (Дон), Çирхисне пĕлмеççĕ, тен вăл Анатри Атăла йухса кĕрекен Иркис пулĕ, йе тен урăх шыва каланă пулĕ. Авалхи крексем, хăйсем Атăл çывăхне çитсе курманскерсем, Тан шывне Атăлпа пĕр çĕртенех йухса килет пулĕ тенĕ, Херотот та çаплах шухăшланă. Çавăнпа Тан шывĕ ђăвашсем патĕнђен йухса килет тени вăл тĕрĕс мар. Çапла ĕнтĕ ђăваш çĕрĕпе виçĕ пысăк шыв çеç йухнă: Йейĕкпе (Уралпа) Атăл, тата тен Атăл йуппи Иркис. Кунтан ĕнтĕ паллах: 2400 çул ĕлĕк ђăвашсем çак шывсем хушшинђе пурăннă пулат.

## 5. Ђăвашсенĕн кÿршисем камсем пулнă.

Херотот каланă тăрăх, ђăвашсемпе («туссемпе») йунашар тĕрлĕ халăхсем пурăннă. Хура тинĕсрен пĕр 700 çухрăм çурçĕрелле Саксем (скифсем) пурăннă. Вĕсене крексем «çкифсем» тенĕ. Вĕсенĕн хăйсенĕн патшисем пулнă. Саксем мĕнле йăхран тухни çинђен ку таранђђенех тавлашаççĕ. Хăшĕ вĕсене кай йенђи Йевропра пурăнакан халăхсемпе пĕр кăкран, ари йăхĕнђен, тухнă теççĕ, хăшĕ тата ђăвашсем пек, тутарсем пек хун йăхĕнђен тухса ĕрђесе кайнă халăх пулнă теççĕ. Хăшĕ тĕрĕс, халĕ ăна пĕлме çукрах. Анђах хăш-хăш етем йађĕсем (Колаксай, Арпаксай, Таркиттай) вĕсенĕн ђăвашла—тĕрĕкле пек туйăнаççĕ. Унтан тата саксен ђăвашла майлă сăмахсем те пур. Упăшка тенине вĕсем «ойор» (ăйăр) тенĕ, çĕре турă тесе хисепленĕ те, ăна „апи" тенĕ [1]) «Апи» тесе тури ђăвашсем амăшĕсене калаççĕ. Çавăнпа саксем хушшинђе ари йышшисенђен пусне, ђăвашла-тĕрĕкле йышсем те пулнă пулмалла [2]).

Çкифсем çинђен Херотот ак çапла çырат: „скифы не имеют ни городов, ни укреплений, но передвигают свои

[1]) Герод т. История в девяти книгах. Перевод Ф. Г. Мищенка. Москва. 1888. Т. I. стр. 305, 329.

[2]) Ун çинђен пĕри ак çапла калат: «Представляется не мало солидных оснований отнести к одному общему этническому корню скифов и гуннов совместно с упомянутыми племенами Хун-ну, смешавшимися вместе и образовавшими то, что мы позднее стали называть тюрками» тет. ( аркер Э. Китай, его история, политика и торговля с древнейших времен до наших дней. Спб. 1903. Стр 33—34. Тата: Мищенко Ф. Г. Этнография России у Геродота (Ж. М. Н. П. 1896. Май. Стр. 69—89).

жилища с собою, и все они—конные стрелки из луков; пропитание себе скифы добывают не земледелием, а скотоводством, и жилища свои устраивают на повозках[1]).

...Впрочем такому положению скифов благоприятствует самая земля и помогают реки, а именно: земля у них ровная, изобилует травою и хорошо орошена [2])..... Скифская земля совсем безлесна" [3])—Ҫкифсенĕн хуласем те, кармансем те ҫук. Вĕсем хăйсенĕн ҫурҗĕсене хăйсемпе пĕрле илсе ҫӳреҫҫĕ. Вĕсем пурте укҫуран перекен утлă ҫар ҫыннисем. Апатҫимĕҫе ҫкифсем ҫĕр ĕҫлесе тумаҫҫĕ, выҗăх-җĕрлĕх усраса тăваҫҫĕ. Хăйсенĕн ҫурҗĕсене вĕсем урапа ҫинех лартаҫҫĕ.... Ҫав йĕркепе пурăнма вĕсене ҫĕршывĕ пулăшаť, акă йепле: ҫĕрĕ тӳрем, курăкран пуйан, шывран та аван. Ҫкифсенĕн ҫĕрĕнҗе вăрман паҗах ҫук, тет. Вĕсем тирсем тунă, ылттăнкĕмĕле шăратса, йе туптаса, тĕрлĕ йапаласем тунă, хаклă йышши җулсене йакатма пĕлнĕ, пир-авăр та тунă. Ҫкифсем вĕсем тӳрĕ кăмăллă, сăмаха тĕрĕс тытакан халăх пулнă, хăйсен ҫĕршывне йуратнă, вăрҫăра паттăр пулнă [4]). Ҫакăн пек халăх пулнă ҫкифсем.

Вĕсенҗен ҫурҫĕрелле сĕм вăрмансенҗе тĕрлĕ фин йăхĕсем кайăксем тытса тăранса пурăннă. Вĕсенҗен хăшĕ-хăшĕ питĕ тискер пулнă, етемсене те тыта тыта ҫинĕ. Финсем ҫинҗен пĕр Татсит (Татцит) йатлă авалхи историк тӳрех калаť: финсем калама ҫук тискер те йĕрĕнмелле наҗар (мĕскĕн), тет. Вĕсенĕн нимĕнле хатĕр те, выҗăх-җĕрлĕх те, кайăк-кĕшĕк те пулман. Вĕсем курăк ҫисе пурăннă, кайăк тирĕсене тăхăнса ҫӳренĕ, ҫара ҫĕр ҫинҗех выртса ҫывăрса пурăннă. Вĕсенĕн мĕн пур шанҗăкĕ ухă ҫинҗе пулнă. Тимĕр тавраш тыткалама пĕлмен пирки ухă вĕҫĕсене вĕсем шăмăран шĕвĕртсе тунă. Арҫын-хĕрарăмĕпех ухутана пĕрле ҫӳренĕ, хĕрарăмсем тытнă кайăка валеҫнĕ җух, хăйсенĕн пайне илнĕ. Аҗи-пăҗисене хулăсенҗен тунă шалашсенҗе усранă, унта вĕсене йĕпе-сапа та тивеймен, кайăксем те тытайман. Вăй питти ҫамрăксем те, ухутара ҫӳресен ҫӳресен, ҫав шалашах тавăрăннă, ваттисем те унтах пурăннă. Ҫакăн пек пурăнаҫа финсем, ҫĕр ĕҫлесе,

---

1) Геродот, IV, 46.
2) Геродот, IV, 47.
3) Геродот, IV, 61.
4) Геродот, IV, 61.

пулассн пулмассишĕн хăраса ĕмĕтленсе пурăннинђен авантарах, тенĕ. Вăрман хўттинђе вĕсенĕн нимĕншĕн те ăш хыпман[1]).

Тон шывĕпе Атăл хушшинђе, вĕсем иккĕшĕ пĕр пĕрин патне çитиђђенех, сарматсем пурăннă. Керетот калаť: Тон леш йенђе çкиф çĕрĕ пĕтет. Унти çĕрте ирĕкре ўсекен йăвăç та, пахђа йăвăçĕ те çук, тет[1]). Вĕсенĕн хĕрарăмĕсем арçынсемпе пĕрле, йе вĕсемсĕр пуçнех, йуланутпа кайăка çўреççĕ, вăрçа та кайаççĕ, тумланассине те арçынсем пекех тумланаççĕ, тет[2]). Кусем ђăвашсем пекех кĕтўçĕ халăх пулнă.

Çак сарматсенђен тăварахра вутсем пурăннă. Вĕсем хĕрлĕ çўçлĕ, кăвак куçлă, йышлă халăх пулнă. „Вĕсенĕн çĕрне аслăшпех хура сĕм вăрман хупласа тăраť[3]), тет Херотот. Вĕсем вырăнтан вырăна куçса çўресе, хыр йĕкелпе тăранса пурăннă. Пĕр аслă вăрманта кўлĕ пулнă, унта хăнтăрпа пĕрене хўресем хытă ĕрђенĕ. Çавсенĕн хаклă тирĕсене вĕсем кĕрĕк çухависене, аркисене тыттарнă[4]). Кусем кайăкçă пурăнăçĕпе пурăнакан финсемех пулнă.

Вутсенђен тăварахра пĕр 200 çухрăм хушши никам та тĕпленсе пурăнман вырăн пулнă. Çакăнтан хĕвелтухăçнелле вара ђăвашсем (туссем) пурăннă.

«Çакăнта каланă халăхсенĕн çĕрĕсем тўрем те, тата мамăк пек çемçе, хура тăпраллă»[5]) тет Херетот. Вăл каланă тăрăх, ђăвашсенђен хĕвелтухăçнелле çĕр сăртлă пулнă та, тата ђуллă пулнă. „Çак сăртлă çĕр урлă ђылай кайсан,

---

[1]) „Фенны отличаются необыкновенною дикостью и отвратительною нищетою: у них нет ни оружия, ни коней, ни пенатов; пищею им служит трава, одеждою—шкуры, ложем—земля; все надежды они возлагают на стрелы, для острия которых за неимением железа употребляют кости. Одна и таже охота кормит как мужчин, так и женщин, ибо последние повсюду сопровождают мужчин и требуют части добычи. Для детей нет другого убежища от диких зверей и от дождей, как укрываться в шалашах из сплетеных ветвей. Сюда возвращаются юноши, здесь и пристанище стариков. Но это они считают более счастливою жизнью, чем трудиться на полях, работать в домах и делать свою и чужую судьбу игралищем надежды и страха; безопасные от людей, безопасные от богов, они достигли самого трудного в жизни — что у них нет нужды даже желать что нибудь". Записки Классич. Отд Импер. Русск. Археолог. Общ. 1901 г. Т. II, в. I, Стр. 250—251).

[1]) Геродот, IV, 21.

[2]) Геродот, IV 116.

[3]) Г родот, IV, 21.

[4]) Геродот, IV, 109.

[5]) Геродот, IV, 23.

вара çӳлĕ тусем пуçланса кайаççĕ"[6]) тет вăл. Атăлпа Урал хушшинҕе ҕăнахах та сăртлă ҕуллă çĕрсем Шур Атăл патĕнҕен пуçланаççĕ те, Урал тăвĕсем патнех çитеççĕ. Апла пулсан, Херетот вăхăтĕнҕе Ҕăваш ăрăвĕсем Мăн Атăлпа Шур Атăл хушшинҕе пурăннă пулаť, мĕншĕн тесен, вĕсенĕнни пек хура тăпраллă вăрманлă тӳрем çĕр вăл Атăлпа Урал тăвĕсем хушшинҕе çакăнта çеç пур, урăх çĕрте çук.

Шур Атăл леш йенҕе, хĕвелтухăçнелле, Иртыш шывĕ таранах тĕрлĕ халăхсем пурăннă. Вĕсем пурте ҕăвашсемпе пĕр кăкран тухса кайнăскерсем пулнă, пурте Р—па Л—лă ҕĕлхепе калаçнă. Пурте йе кайăкçăсем, йе кĕтӳçĕсем пулнă. Вĕсенĕн хушшинҕе ҕи паллисем архиппейсемпе иççетонсем. Лешсем йăвăç çимĕçĕсемпе тăранса пурăннă; пурăнасса шурă кĕççепе витсе тунă ӳплесенҕе, пурăннă; вĕсенĕн выҕăх-ҕĕрлĕх сахал пулнă.[1]) Çак архиппейсем кусарсем пулнă пулас пулаť, мĕншĕн тесен, кусарсем кайран, Тон шывĕ çине килсе вырăнаççан, шурă ӳплесенҕе пурăннă. Вырăссем вĕсене „шур укăрсем" тенĕ[2]). Кайран вĕсем Тон шывĕ хĕрринерехре пĕр креппĕç тунă та, ăна «Сар-Кел» „Сар-Кил" тенĕ. Крексем çапла калаççĕ. Крек ҕĕлхинҕе Ш сасă çук, ун çинҕен кунтан малтан та каланăҕҕĕ. Çавăнпа „Сар" тесе вĕсем „шар" сăмаха хăйсем майлă туса çырнă пулмалла. „Шар" сăмах вăл „шур" сăмахпа пĕрех, мĕншĕн тесен, ҕăвашла „шап-шур" та „шап-шар" та теççĕ. Çапла ĕнтĕ авалхи кусарсем хăйсенĕн креппĕçне „Шур-Кил" тенĕ пулаť. Вырăссем ăна ҕăнах та, крексем пекех, „Белая Вежа" тесе куçараççĕ. Вăл авалхи вырăс сăмахĕ, ҕăвашла „шурă шалаш", „шурă кил" тени пулаť[3]). Çапла ĕнтĕ кусарсем, ĕлĕк шурă ӳплесенҕе пурăннăскерсем, хула тусан та, ăна „Шурă Килех тенĕ. Унтан тата кусарсем çинҕен çакна калас пулаť: ӳштексем мамăнт (пин) шăммине „хасар" теççĕ. Ку ӳштексемпе кусарсем ĕлĕк пĕрле пурăннине пĕлтернĕ пек туйăнаť[4]).

Херетот каланă тăрăх, иççетонсен, камăн та пулсан, ашшĕ вилсен, вĕсем выҕăхсем илсе пырса пуснă та, унтан

[1]) Геродот. IV, 23.

[2]) Сума, Историческое рассуждение о хозарах. Москва, 1840. Стр. 10—11.

[3]) Брокгауз и Ефрон, Энциклоп. Словарь. т. V, стр. 704—705.

[4]) Сума, Стр. 68.

[6]) Çавăнтах.

ашшёне те, выђăхсене те вакласа пĕçерсе çинĕ. Пуç купђашкинђен ылттăнласа курка тунă. Çапла иççетонсем тискертерех халăх пулнă.

Иççетонсенђен кăнтăрта Араљ тинĕсĕ патне çитех массакетсем пурăннă. Вĕсем йышлă паттăр кĕтӳç халăх пулнă.

Ђăвашсенђен çурçĕрелле Ђулман Атăлган пуçласа Пăрлă тинĕс патне çитех, хаљхи манçисен (вокулсен), комисен (сыренсен), йарансен (самойетсен), тата оçтаксен тĕп аслашшĕсем пурăннă. Вĕсем мĕнле пурăнни çинђен Херотот пĕлмест. Кусем кайăкçăсем пулнă.

Çапла ĕнтĕ ђăваш çĕршывĕ тавра пурăнакан халăхсем пурте нађар куљттурлă, пăрахăç пурăнăçлă, тĕттĕм халăхсем пулнă. Авалхи куљттурлă халăхсем пурте вĕсенђен инçетре пурăннă.

## 6. Пысăк куљттурлă халăхсем.

Куљттурлă халăхсем хушшинђе ђăн ђаплисем крексем пулнă. Вĕсем пит тăнлă хастар халăх пулнă. Пĕр 3000 çул ĕлĕк вĕсем Палккан çурутравĕ çинђе кăнтăрта, тата Кĕçĕн Аçи хĕрринђе çĕр ĕçлесе, выђăх-ђĕрлĕхсем усраса пурăннă. Урăх ĕçе вĕсем ытлашши нимех те пĕлмен. Анђах вĕсем нумай вăхăт ирттермесĕрех, кимĕсем тума вĕреннĕ, хуласем лартма пуçланă, кĕлеткесем тума, карттинсем ӳкерме, хут çырма пĕлекен пулса кайнă.

Крек халăхĕ ĕрђесе йышлăланса çите пуçласан, вĕсенђен нумайĕшĕ хăйсенĕн çуратнă çĕршывне пăрахса, телей шырама, урăх çĕре, айакка, кайнă. Ушкăнĕ-ушкăнĕпе вĕсем кимĕсем çине ларнă та, тинĕссем тăрăх çӳресен-çӳресен, пĕр пĕр çĕре пырса тухнă. Вара нихăçан курман-илтмен çĕртех хуласем тăва-тăва лартса пурăна пуçланă. Çапла тунă хуласене колоњисем тенĕ. Çавăн пек колоњисем крексенĕн Çĕр-Варринђи Тинĕс хĕрринђе нумай тĕлте пулнă. Крек колоњийĕсем Хура Тинĕсĕн хĕррипе те нумай ларса тухнă. Вĕсенĕн хушшинђе ђăн ђаплăраххисем: Ољви, Панттиккаппей, Танаис, тата урăххисем те. Танаисĕ Тон шывĕ Ас Тинĕсне йухса кĕнĕ çĕрте ларнă. Вăл крексенĕн колоњийĕсенђен ђăвашсене ђăн çывăххи пулнă.

Крексем авал пĕрлешсе çитсе пĕр натси пулайман. Кашни хула хăй травашĕнђи йалсемпеле пĕрле хăйне уйрăм халăх, уйрăм пĕђĕк патшалăх пулнă, унăн хăйĕн правиттĕлстви,

хӑйӗн арми, хӑйӗн флоґӗ пулнӑ. Ҫав пӗґӗк патшалӑхсем пӗр-пӗринпе ґас-ґасах вӑрҫкаланӑ.

Ҫавӑн пек патшалӑхсем пурӗ темиҫе ҫӗр пулнӑ. Вӗсене хулаллӑ ушкӑнсем (городская община) тенӗ. Вӗсем нумайӗшӗ пирӗн вулӑссенґен пысӑках та пулман. Ґӑн ґаплисем икӗ хула пулнӑ: пӗри—Спарттӑ, тепри—Афин.

Спарттӑ вӑл сӑртсем ҫинґе пурӑнакан крексенӗн хули пулнӑ. Вӗсенӗн арҫынӗсем пурте ҫар ҫыннисем пулнӑ. Вӑрҫӑ ӗҫне вӗсем калама ҫук тӗплӗ вӗреннӗ, ҫавӑнпа вӗсем паттӑр халӑх пулнӑ. Афин халӑхӗ тинӗс ҫинґе ҫӳреме йуратакан халӑх пулнӑ. Вӗсенӗн Афин ҫывӑхӗнґе кимсем пырса кӗмелли вырӑн (хавӑґ) пулнӑ, ӑна Пирей тенӗ. Ҫав Пирейе пур йенґен те кимсем темӗн ґухлӗ тавар турттара турттара пынӑ. Ҫапла пысӑк суту-илӳ тунипе афинсем пит пуйса кайнӑ. Вӗсем хитрене, илемлӗхе пит йуратнӑ. Ҫавӑнпа вӗсенӗн хушшинґе пур тӗрлӗ искуствӑ та, ӑсталӑх та пит ӑнса кайнӑ. Политтӗкпе крацтӑн ӗҫӗсене пурне те афинсем пухура пӗрле шутласа тунӑ. Пурӑнӑҫ йӗркисене пурне те тӗплесе ҫирӗплетсе хураканнисем спарттӑсен Ликурк пулнӑ, афинсен Солон, лешӗ 2700 ҫул, ку—2500 ҫул ӗлӗк пурӑннӑ.

Ҫав вӑхӑтра Аҫи ҫӗрӗнґе Перҫҫи патшалӑхӗ пит вӑйланса ҫитнӗ. Вӑл патшалӑх урлӑ суту-илӳ тӑвакан мӑн ҫул кайнӑ, ҫав ҫулпа таварсем Аҫирен те, Африкрен те, Йевропран та унталла та, кунталла ҫӳренӗ. Ҫавӑнпа вӑл перс халӑхӗ пуйса вӑйланса ҫитнӗ. Перссен патши, Тари йатлӑскер, пысӑк ҫарпа кайа-кайа, хӑй таврари халӑхсене нумайӗшне ҫӗнтерсе пӑхӑнтарнӑ, вӗсене калама ҫук хурлӑхра усранӑ. Йулашкинґен вӑл крексене те пӑхӑнтарасшӑн пулнӑ, вӗсем патне: мана пӑхӑнӑр, тесе калама ҫынсем йанӑ. Крексем хӑранипе нумайӗшӗ тӳрех парӑннӑ, анґах пӗр Спарттӑпа Афин ҫеҫ парӑнас шухӑшламан, вӗсем перссене вӗлернӗ. Вара Тари вӗсем патне темӗн пысӑккӑш ҫарпа флот йанӑ. Спарттӑсемпе афинсем пӗрлешнӗ те, хӑйсем сахалӑн пулсан та, перссене ҫӗнтерсе хӑваласа йанӑ.

Вӑрҫӑ пӗтсен кайран афинсене пур крексем те, хӑйсене перссенґен хӑтарнӑшӑн, куланай парса тӑнӑ. Вара афинсем пит пуйса хӑватланса ҫитнӗ. Пур тӗрлӗ искуствӑ та вӗсенӗн ґаплӑланса кайнӑ. Анґах афинсен вӑй-хӑваґӗ нумайа пыман: спарттӑсем вӗсемпе вӑрҫа пуҫланӑ. Вара пур крек халӑхӗ икӗ пайа уйӑрӑлнӑ: хӑшӗсем Афин майлӑ,

хăшĕсем тата Спарттă майлă, 30 çул хушши вăрçсан, вăрçсан Спарттă Афине çĕнтернĕ. Анђах крексем хушшинђе вăрçă ђарăна пĕлмен, мĕншĕн тесен, пурăнăç нађарланса çитнĕ пирки, кашни хуларах класпа клас, пуйансемпе ђухăнсем, хирĕçметытăннă.

Çав вăхăтра çак крексенђен çурçĕртерехре, Маккетоңире пурăнакан крексем вăйланса çитнĕ. Вĕсенĕн Александăр йатлă патши пур крексене те пăхăнтарнă, унтан Перс патшалăхне те çĕнтернĕ, вара вăл тем пысăккăшĕ пĕр патшалăх тунă. Унăн ђиккисем ђăвашла ăрусем пурăнакан çĕр сывăхнех çитнĕ. Çавăнпа Александăра авалхи ђăвашсем те пĕлнĕ, ăна Искентер тенĕ. Ђáваш хушшинђе ун çинђен ку таранђђенех халапласçĕ.

Ђылай вăхăт иртсен, çак крексенђен кай йенђе Аппенин çурутравĕ çинђе пурăнакан Рим халăхĕ калама çук вăйланса çитнĕ: вĕсем хăйсем таврари халăхсене пурне те çĕнтерсе пăхăнтарса, хăйсемпе пĕрлештернĕ. Йулашкинђен вĕсем крексене те парăнтарнă. Çапла вара унђђен нихăçан та пулман пĕр пысăк Рим патшалăхĕ пулса тăнă.

Римсем хуллен хуллен крексен куђттурне йышăнса, ăсталанса, пурăнăçа тата нумай малалла йанă. Малтан халăха Çенат (çунат) пăхса пурăннă. Унтан халăх хушшинђе вăрçă тавлашусем тухса кайсан, пĕтĕм влаçа пĕр çын хăйĕн аллине йарса илнĕ. Ăна ĕмпӳ (импператтăр) теме пуçланă. Малтанхи 12 ĕмпӳ пурте ухмаха тухнă хайар етемсем пулнă (28ç.—96 ç.) Кусенђен кайран ăслă ĕмпӳсем пулнă. Вĕсем сакконсем кăларнă. Çав сакконсене пурне те пĕрле „Римское право“— Рим йĕрки тенĕ.

Анђах ђасах пурăнăç пăтрана пуçланă. Салтаксем ĕмпӳсене вырăнтан кăлара-кăлара пăрахнă, пĕр-пĕринпе çапăçнă. Çапла краштăн вăрçисем тухса кайнă. Вăл вăрçăсем нумайђђен тăсăлса пынă. Халăх антăраса çитнĕ.

Вара 1600 çул ĕлĕкрех тин пĕр Константтин йатлă ĕмпӳпĕтĕм влаçа хăй аллине йарса илнĕ те, саланса кайа пуçланă Рим патшалăхне пĕрлештерсе хунă. Çак ĕмпӳ хăйне пурăнма ирĕкрех пултăр тесе, Римрен Висанттийе куçнă. Тата Христос тĕнне патшалăх тĕнĕ туса хунă, мĕншĕн тесен, пĕтĕм халăх ку тĕн йенне сулăннă. Пуп тавращсем вара Рим патшисене—турă ывăлĕ, пĕтĕм çĕр пуçлăхĕ тесе вĕренте пуçланă.

Рим патшалăхĕ пек вăйлă патшалăх ун ђухне пулман. Çав пысăк патшалăхра темиçе тĕрлĕ халăх та пулнă. Вĕсенĕн пуринĕн те ĕлĕк хăйсенĕн патшалăхĕсем пулнă, анђах кайран хăватлă Рим аллине лекнĕ те, йĕркесĕр пысăк хырçăсем, куланайсем тӳлесе тăнă.

Рим патшалăхĕн ђиккисем авалхи ђăвашла ăрусем пурăнакан çĕршывран инçе пулин те, вĕсем хушшинђе çыхăну пулнă пулас пулаť, мĕншĕн тесен, вĕсем пĕр-пĕринпе сугуилӳ туни нумай йенђен курăнса тăраť. Кун çинђен кайрантарах тĕплĕрех кăтартса парăпăр. Çапла авалхи кулђтурлă халăхсенĕн çутти ђăвашла ăрусен хушшине те пăртак килкелесе кĕнĕ пулас пулаť.

## V.

### Ђăваш ăрăвĕсем Атăлпа Урал хушшинђе пурăнни.

1. Атăлпа Урал хушшинђи çĕршыв.

2. Авалхи ђăвашсем çинђен Херотот мĕн калать.

3. Ђăвашсем çĕр ĕçне йепле йерсе кайнă.

4. Авалхи ђăвашсенĕн куљттурлăхĕ йепле пулнă.

5. Ђăвашсем кӳршисемпе йепле пурăннă.

6. Ђăвашсем хушшинђе хуласем—карсем йепле пуçланса кайнă.

## V. Ђăваш ăрăвĕсем Атăлпа Урал хушшинђе пурăнни.

### 1. Атăлпа Йейĕк хушшинђи çĕршыв.

Çакăнти çĕршыв Вăта Аçири çĕршывран нумай ăрасна пулнă.

Пуринђен малтан кунта çĕр пиђĕ ăрасна. Каçпи тинĕсĕнђен çурçĕрелле, пĕр 50⁰ çитеђђен пулĕ, тăварлă, хăйăрлă тӳрем çĕр сарăлса выртаť; тĕлĕн-тĕлĕн унта çапçара хăйăр та пулаť. Кунта тĕрлĕ хытă курăксем, тата ерĕм утисем çеç ӳскелеççĕ. Çавăнпа çак хирсене пуш-уйла çеçен хирсем теççĕ. Çак хирсем кунта пĕтмеççĕ; вĕсем хĕвелтухăçĕ йеннелле те, Йейĕк шывĕ урлă каçса, сарăлса кайаççĕ, хĕвеланăçĕ йеннелле те, Атăл шывĕ урлă каçса, ђылайђен сарăлса кайаççĕ.

Çак хиртен çурçĕрелле çĕр пиђĕ хуллен-хуллен çĕкленсе пыраť те, сĕвеклĕ сăрт пулса кайаť. Ăна халĕ вырăсла „Общий Сырт" теççĕ. Вăл ытла çӳллех мар: Атăл йенђе унăн çӳллĕшĕ тинĕсри шывран 100 метр пулаť, вăта çĕрĕнђе 190, Йейĕк йенђе 280 метăра çитет. Çак сăртран пуçласа Ђулман Атăл патне çитеђђенех çĕр тӳремми тӳрем те, анђах унта уй тӳписем нумай, вĕсем Атăлпа Ђулмана йухса кĕрекен шыв пуçĕсене уйăрса тăраççĕ. Çакăнти çангалăк пит тĕрлĕ; кунта пĕр хушă хура кĕллĕ тăпра пыраť, ун çинђе кăлкан пит ĕрђесе ӳсет те, вара кăлканлă ырă çеçен хирсем пулаççĕ. Çак хирсем те, Атăлпа Йейĕк урлă каçса, таçта витĕрех сарăлса, тăсăлса кайаççĕ.

Ку хирсенђен пуçласа, Самар шывĕ таран, тĕллĕн-тĕллĕн унтан та çурçĕртерехре мамăк пек хура тăпра выртаť. Кунта вара выђăх-ђĕрлĕхе тăрантаракан ухђăмпала темĕн тĕрлĕ курăк та ӳсет. Çапла ытарма çук илемле пуйан çеçен хирсем пулаççĕ. Çак хирсем те Атăлпа Йейĕк урлă каçса икĕ йеннелле сарăлса кайаççĕ, хĕвеланăçĕ йенђе Тунай шывĕ патнех çитеççĕ.

Самар шывĕпе Ђулман Атăл хушшинђе Урал тăвĕсем таранах вăрманлă хутăшлă хирсем сарăлса выртаççĕ. Ђулман Атăл патне çывăхарнăçемĕн çав вăрмансем сĕм вăрман

пулса кайаççĕ. Вăл хура вăрмансенђе тĕрлĕ йăвăçсем ӳсеççĕ: йумансем, хурăнсем, çăкасем, тата ыттисем те. Çак вăрманлăхсем хушшипе Атăлтан пуçласа Ђулман Атăл патне çитех Çарăмсан шывĕпе Шуçăм (Шешма) шывĕ хушшинђе уçă çеçен хирсем тăсăлса пыраççĕ. Ку çеçен хирсем те Атăлăн тепĕр йенне каçса кайаççĕ.

Ђулман Атăлпа Хусантан çурçĕрелле хура вăрманпа йăлăм хутăш ӳсеççĕ. Вĕсем те Атăл урлă каçаççĕ те, Сăр çине çитсе перĕнеççĕ, вара кай йеннелле виттĕрех кайаççĕ. Кусенђен çурçĕрелле тин таса йăлăм кайаť.

Çапла ĕнгĕ ђăвашсем килсе вырнаçнă çĕршывра виçĕ тĕслĕ çĕршыв пулнă. Ђăн кăнтăрта пуш-уйла хирсем, варринђе çеçен хирсем. Самартан, çурçĕрелле тата вăрманлăхсем.

Ку çĕршывăн икĕ йенĕпе икĕ пысăк шыв йухса вырта çĕ: кай йенђе—Măн Атăл, мал йенђе—Йейĕк. Çурçĕр йенђерехрен Măн Атăла ђалăшăн Ђулман Атăл пырса кĕрет. Варринђе тата урлă та пирлĕ йухакан пĕђĕкрех шывсем пит нумай. Вĕсем хăшĕ Атăла кĕреççĕ, хăшĕ Ђулмана, хăшĕ тата Йейĕке. Вĕсенĕн хушшинђе ђăн паллăраххисем ак çаксем: Ирхис, Самар, Кинел, Сук, Çарăмсан, кусем Атăла кĕреççĕ, Шуçăм (Шешма), Сай, Ăх (Ик), Шур Атăл хăйĕн йуппипе Тимпе, кусем Ђулмана йухса кĕреççĕ, Сакмарпа Салмăш тата Йейĕке кĕреççĕ. Пушă хирте, кăнтăрта, йухан шывсем сахал.

Măн Атăлăн йађĕ ђăн авал Оар [1]) пулнă. Крексем ăна 2 пин те 500 çул ĕлĕк çапла çырса хăварнă. „Оар" вăл авалхи сăмах. Вăл „вар" тенĕ сăмахпа пĕр. Măн шывсене хунсем ђăнах та авал „вар" тенĕ[2]).

Măн Атăл Палт тинĕсĕ патĕнђерехрен пуçланаť те, мал йеннелле туратланса йухса кайаť, кайаť-кайаť те, Шупашкарпа Хусан хушшинђе кăнтăралла пăрăнаť, вара Каçпи

[1]) Геродот, IV. стр.—Кайрантарах Атăла тĕрлĕ йатпа калаңă: Летил (Ледиль) Ертир (Ердир), Ертил (Ердиль), Ател (Атель), Атоđ (Атоль), Етилийа (Етилия), Волха Волга) (Русский Зритель, 1828 г. ч. 1-ая, стр. 17, 27), Еђшил (Эчжиль) тенĕ (Васильев В. Об отношениях китайского языка к среднеазиатским. Ж. М. Н. П., 1872 г., сентябрь, стр. 114). „О народах, издревле в России обитавших" йатлă пĕр кĕнекене çыракан тата Атăл йађĕ çинђен ак çапла калаť: „древнейшие греки называли Волгу поныне еще у чувашов употребляемым именем Рга" тет. Стр. 37.

[2]) Ашмарин Н. И. Болгары и Чуваши. Казань. 1902 г. стр.

тинĕсне çитех кукăрăлкаласа йухса пыраť. Атăл пек мăн шывсем тĕнђере сахал.

Атăлăн йупписем нумай. Ђулман йатлă пысăк йуппи Урал тăвĕсем патĕнђен çурçĕр йенђен турагланса анаť те, Атăла ђалăшăн пырса кĕрет. Ытти йупписенђен ђăвашсене çывăхраххисем Сĕвепеле Сăрă, тата Окка пулнă. Çак шывсем кăнтăр йенђен килеççĕ те, Атăла сылтăм йенђен йухса кĕреççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те Хура тинĕспе Ас тинĕсне йухса кĕрекен Танпала Тнепр пуçĕсем патĕнђерехрен пуçланса кайаççĕ.

Çапла çак пысăк шывсем тăрăх ђăваш çĕрĕнђен ытти çĕрсене,—инçетрисене те, çывăхрисене те,—кимсемпе çўреме пит лайăх пулнă. Мăн Атăл тăрăх кимĕпеле тăвалла хăпарса кайсан, Палт тинĕсне çитсе кĕме те май пулнă. Атăл пуçне çитсе, уй-тўпине тухсан, кимĕсене çав уй урлă турттарса касармалла пулнă та, Палт тинĕсне йухса кĕрекен шывсем çине çеç çитсе лармалла пулнă. Кăнтăрта Каçпи тинĕсĕпе çўреме пултарнă. Унтан тата Атăлпа Тан шывĕ çине ўкме те пит лайăх пулнă, мĕншĕн тесен, пĕр тĕлте вĕсенĕн хушши 60—70 çухрăмран ытла мар. Ђулманпа тăвалла кайсан, унăн турађĕсем тăрăх Пăрлă тинĕсе çитех кайма та пулаť, Çĕпĕр çĕрне çитсе ўкме те йăвăр мар. Çапла Атăла мĕн пур йупписемпе пĕрле илсен, ђăн ăна ырă, аслă, йака, йўнĕ çул теме пулаť.

Атăлпа Йейĕк хушши авал пит пуйан пулнă. Унта тĕрлĕрен йăвăçсем ўснĕ: хуралтă тума йурăхлă хырсем, йумансем, çăкасем, ђăрăшсем; унтан тĕрлĕ хатĕр тума ырă вĕренесем, хурамасем, йĕлмесем, кавăрçсем, çирĕксем, хурăнсем, йăмрасем, хăвасем, тĕрлĕ çимĕç кўрекен шĕшкĕсем, улмуççисем, пилешсем, палансем, армутсем (крушшăсем), пĕтнĕксем, кĕтмелсем, ђийесем, тата ытти тĕрлĕ йăвăçсем те вăрманĕ вăрманĕпе ўснĕ[1]).

Çеçен хирсенђе те, вăрмансенђе те тĕрлĕрен çырласем нумай пулнă. Унтан тата Атăл хĕррипе хаклă тăракан ревен курăкĕ ўснĕ[2]).

Атăлпа Йейĕк хушшинђе тĕрлĕ ђĕрђун та пит нумай пулнă. Унта темĕн йышши кайăк-кĕшĕк те пулнă: пит паха тирлĕ

---

[1]) Гаркави, 282; Савельев, [LXXXIV—LXXXV; Поволжье, под ред. проф. В. П. Семенова-Тянь-Шанского. Ленинград. 1925 г. Стр. 108–109, 123.

[2]) Френ. Известия Ибн.-Фадлана, стр.

хаклă йăпарсем (выхуоль‘сем), ăтăрсем (выдра‘сем), пĕрене хўресем (бобер‘сем[1]), сăсарсем (соболь‘сем), хăптăрсем (Куница‘сем), йуссем (горностай‘сем), вакшасем, çиме лайăх ашлă капансем (кĕрше сыснисем), упасем, пăлансем, хир-кађакисем, пăшисем (лось‘сем), лашасем[2]); паха вĕçен кайăксем: пăђăрсем, кăвакалсем, аккăшсем[3]), ăсансем (тетерев‘сем), карăксем (глухар‘сем), тата урăх тĕрлисем те нумай пулнă. Кусемсĕр пуçне, вăрмансенђе тата пыл хурђĕ шутсăр ĕрђенĕ[4]).

Йухан шывсенђе те, кўлĕсенђе те тĕрлĕ йышши пулăсем шутсăр нумай пулнă. Çиме ырă ђăн паха пулăсемех халĕ 52 тĕслисем пур: çуйăн (сом), шурă пулă (белуга), çăрттан, çĕкĕ (стерлядь), шăла пулă (судак), çупах (лещ), çавран пулă (бешенка), шампа, партас (головль), хĕç пулă (язь), хура пулă (линь), ăркаљ (форель) тата ыттисем те. Шултăри йышшисем хăшĕ 90 пăт ытла туртакансем те пулаççĕ. Пулăсем вĕсем пурте тенĕпе пĕрех вăлђă тăкма йе çуркунне, йе кĕркунне Каçпи тинĕсĕнђен Атăл тăрăх хăпараççĕ те, унăн йупписем тăрăх саланаççĕ[5]). Çак вăхăтра вĕсене темĕн ђухлĕ те тытма май пулаť.

Калама та çук ырă пулнă ĕнтĕ ђăваш ăрăвĕсем килсе вырăнаçнă çĕршыв. Аçири çеçен-хирсем унăн патне-çывăхне те пырайман. Ђи ырă вырăнĕ варринђерехре пулнă. Унăн пĕр йенђе Мăн Атăл, тепĕр йенђе Шур Атăл, кăнтăрта Самар шывĕ, çурçĕр йенђе Ђулман шывĕ. Атăлпа Йейĕк хушшинђи мĕн пур çĕршыв пуйанлăхĕ çакăнта йури пуçтарăнса тăнă пекех пулнă. Етемĕн килсе пурăнасси çеç йулнă! Ђăнахах та етеме куљттурланса кайма кунта пур тĕрлĕ майĕ те пулнă: кайăкçăсем валљи кайăк тулли сĕм-вăрмансем кашласа ларнă, пулăçă валљи пулă тулли йухан шывсем унталла та кунталла йухса выртнă, кĕтўçĕ валљи аслă çеçен-хирсем хатĕр пулнă, çĕрĕçлекен валљи мамăк пек хура тăпраллă çĕр пулнă, пахђаçă валљи çемçе-çемçе ăшă çанталăк пулнă[6]), тимĕрçĕ валљи тимĕр-тăмăрлă тăпрасем пулнă, сутуçĕ валљи тавар

[1]) Поволжье, стр. 114.

[2]) Çавăнтах, стр. 114--115.

[3]) Хвольсон, стр. 24, 88.

[4]) Çавăнтах.

[5]) Поволжье, стр. 117—119.

[6]) Ђăваш йалĕнђе Сиктĕрмере (Спас канттонĕнђе) халĕ те арпуссемпе тынсем пулса пиçсе çитеççĕ

çӳретмелли аслă çулсем те, вĕтĕ çулсем те ăçталла килђĕ унталла тăсăла тăсăла кайнă. Çакăнта ĕнтĕ ђăн куђттурланмалли йăва хăйех пулнă!

Сăртран (Общий Сырт'ран) кăнтăрти ӳсен-тăран пăт-пат ӳсекен, шывсăр, çара хирте çеç тискер те, темле шикленмелле пулнă. Унта тӳп тӳрем çĕр тăрăх хăрăк çилсем ним ђарусăр алхасса çӳреççĕ. Хĕлле пулсан, вĕсем Çĕпĕр сиввисене илсе килеççĕ те, вара пĕтĕм пушă хире пăрлантарса йăраççĕ, хăш ђухне тата калама çук хайар çил-тăман кăлараççĕ те, ун ђухне вара темĕн ђухлĕ вăйлă çирĕп ђĕрђун та ђăтаймасť: лашасем, ĕнесем, ытти пур выђăхсем: те çиле май ђупма тытăнаççĕ, вара мĕн вăйĕсем пĕтеђђенех ђупаççĕ-ђупаççĕ те, хăш ђухне пинĕ-пинĕпе вилсе пĕтеççĕ. Çулла пулсан, вĕт тусана таçта çĕклентерсе кайаççĕ те, вара сывламалла та мар, пăхмалла та мар [1]). Çапла çак пушă хир Вăта Аçири пушă хирсемпе пĕрмайлах пулнă. Ку пушă хирте лурăнакан сахал пулнă. Унта йаланах ирĕк пулнă. Çавăнпа Аçирен килекен халăхсем пурте çав пуш-уй виттĕр çӳренĕ. Ђăн вăл халăхсенĕн мăн çулĕ пулнă!

Çапла Атăлпа Йейĕк хушшинђе икĕ-виçĕ тĕслĕ çĕршыв пулнă. Çавăнпа ђăвашсенĕн йăхĕсем те, кунта килсе кĕрсессĕн, икĕ-виçĕ тĕрлисем пулса кайнă.

## 2. Авалхи ђăвашсем çинђен Херетот мĕн калаť.

Авалхи ђăвашсем çинђен Херетот ак çапла çыраť: „Фисагеты—народ особый и многолюдный; средства к жизни добывают они охотой. В смежности с ними, в тех же местах, живет народ, носящий название иирков, живущий так же охотой. Иирк охотится следующим способом: охотник влезает на дерево и там устраивает засаду, а деревьями изобилует вся страна их; у каждого охотника имеется наготове лошадь и собака; лошадь низкого роста и потому приучена лежать брюхом на земле. Завидевши с дерева дичь, охотник стреляет по ней из лука, потом садится на лошадь и пускается в погоню за добычей, собака неотступно следует за ним“[2]) тет. Ђăвашла Херетот каланине ак çапла калама йураť: ђăвашсем—йышлă уйрăм халăх; вĕсем пурăнмалăх çиме кайăка çӳресе тупаççĕ. Вĕсемпе йунашарах, çав

[1]) Записки Московского Археологического Института, т. XXVII, стр. 132—133.
[2]) Геродот, VI, 22.

вырӑнсенҫех, йурӑк йатлӑ халӑх пурӑнатӑ, вӑл та ҫапла кайӑка ҫӳренипе пурӑнатӑ. Йурӑк кайӑксене ак ҫала мелпе тытатӑ: кайӑкҫӑ йӑвӑҫ ҫине улӑхатӑ те, пытанса ларатӑ, вӗсенӗн пӗтӗм ҫӗрӗ вӑрманлӑхран пит пуйан; кашни кайӑкҫӑн лашапа йытӑ хатӗр тӑраҫҫӗ, лаши пӗҫӗкскер, ҫавӑнпа ҫӗр ҫине хырӑмпа выртма вӗреннӗ. Йӑвӑҫ ҫинҫен кайӑка курсанах, кайӑкҫӑ ӑна ухӑпа перет те, лаша ҫине утланатӑ, вара кайӑк хыҫҫӑн йара паратӑ, йытти унтан йулмасӑр пыратӑ. Ҫак Херетот калани вӑл хӑй Ермитташри тӑхасем ҫинҫен каланине йӑлтах аса килтерет. Вӑл тӑхасем тӑрӑх епӗр Аҫире пурӑнакан ҫӑвашла йӑхсем йепле кайӑка ҫӳренине карттин ҫинҫи пек куратпӑр. Херетот калани лап ҫав карттин ҫинҫи пекех.

Авал ҫӑвашсем ҫӑнах ҫавӑн пек хӑтланнисене, пирӗн шухӑшпа, тата ваттисем каланисем те лайӑх ӑнлантарса параҫҫӗ. Н. И. Ашмарин „Ваттисем каланӑ сӑмахсем" йатлӑ кӗнекинҫи „Умӗнхи сӑмахра" епӗр ваттисем каланисем ҫинҫен акӑ мӗн каланӑҫҫӗ: „Ваттисем калани—пуш сӑвартан тухни мар. Вӑл тахҫан авал пӗтӗм халӑх ӑсхакӑлӗнҫен ҫуралса тухнӑ сӑмах... Ваттисем калани вӑл, сыпӑкран сыпӑка, йӑхран йӑха куҫса пырса, ҫак куна ҫитнӗ сӑмах... вӗсем тӑрӑх епӗр хут ҫине ӳкмен авал пулнӑ тӗрлӗ ӗҫсем ҫинҫен тавҫарса илме пултаратпӑр, тенӗҫҫӗ. Ӗнтӗ мӗн калаҫҫӗха ҫав сӑмахсем авалхи ҫӑваш кайӑкҫисем ҫинҫен? Вӗсем Херетот калани патне пыраҫҫӗи? Акӑ илер пӗр сӑмахне: „Выртнӑ упана йӑвӑҫ тӑринҫен пӑхса тӑрати мӗн" тенине. Мӗне пӗлтерет вӑл? Авал ҫӑваш кайӑкҫӑсем кайӑксене йӑвӑҫ тӑрринҫе пытанса ларса сыхланине мари? Илер тата: „Ҫын ҫинҫи—йӑвӑҫ ҫинҫи" тенине. Ку сӑмах ҫав авал хӑтланнинҫен тухса кайнӑ теме пулатӑ. Авалхи кайӑкҫӑ, вӑл йӑвӑҫ ҫинҫе пытанса, кайӑка сыхласа ларнӑ ҫух, тытас кайӑка пӑртак та хӗрхенме шухӑшламан. Ҫавӑнпа халӗ пӗр ҫын хуйхи тепӗр ҫыншӑн нимӗн те мар пулсан, „ҫын ҫинҫи—йӑвӑҫ ҫинҫи" теҫҫӗ. Вӑрмана кайсан, кайӑкҫӑ ӗлӗк пушӑ алӑпа тавӑрӑнман. Ҫавӑнпа ваттисем: „вӑрман нихӑҫан та пушӑ йамастӑ" тенӗ. Ҫепла ваттисем каланӑ авалхи сӑмахсем ҫӑнах та ҫӑн авал йепле пурӑннине ҫиперех кӑтартса параҫҫӗ.

Кайӑка йе харпӑр хӑй ӗссӗн, йе ушкӑнпа, йышпа, ҫӳренӗ. Тытасса вӗсем хӑйсенӗн ҫӗршывӗнҫе пурӑнакан кайӑксене тытнӑ: вӑрман ӗнисене, пӑшисене, пӑлансене, хир каҫакисене, капансене, упасене, кашкӑрсене, тилӗсене, сӑсарсене, йӑпар-

сене, ăтăрсене, хăнтăрсене, вакшасене, пĕрене хӳресене, хир-лашисене, тата ыттисене те. Çак тĕрлĕ кайăксем ун ђухне сĕм вăрмансенђе йĕркесĕр нумай пулнă. Хир-лашисем (тарпансем) Пăслăк шывĕпе Самар шывĕ тăрăх XVIII-мĕш ĕмĕрте те ђылай пулнă [1]). Авал вĕсем пур çĕрте те йышлă пулнă пулмалла. Вырăс кђаçĕ Улатимĕр Мономах вилес умĕн ак çапла çырса хăварнă: Ђерникĕвре епĕ хир-лашисене аркканпа 120 пуç тытрăм („связал"), Роç шывĕ тăрăхĕнђе те вĕсене епĕ хам алăмпа нумай тыткаларăм, тенĕ.

Кайăксене вĕсем тĕрлĕ майпа, тĕрлĕ хатĕрпе тытнă. Вăл хатĕрсене ђăвашсем нумайĕшне тĕллĕн-тĕллĕн ку таранђенех пăрахман. Вĕсенĕн алăран нихăçан та вĕçертмен хатĕрĕ укçу пулнă. Укçунăн пĕкеђевĕ, кантăри, уххи (йĕппи), тата уххисене хумалли йĕнни пулнă. Пăшал тухађђенех ђăвашсем укçупа çӳренĕ. Вĕсем ухăпа пеме пит ăста пулнă. XVI ĕмĕрте те пĕри ђăвашсем çинђен: „весьма искусные стрелки" [2]) пеме пит ăстаскерсем, тет. Вăлах тата ђăвашсем ђăн ырă паха кайăксене тытни çинђен калаŤ [3]). Шултăра кайăксене вĕсем йе шăтăк алтса, йе тĕрлĕ капкăнсемпе, йе тата танатасемпе тытнă. Йăвăç хăвăлĕсенђе йăва туса пурăнакан вакшасене, пăсарасене, тата ыттисене те хăй ĕссĕн перекен ухăпа тытнă. Çак хатĕрсене ђăвашсем нумайĕшне ку таранђенех пăрахман.

Тĕрлĕ тискер кайăксенђен пуçне, вĕсем тата вĕçен кайăксене те нумай тытнă, мĕншĕн тесен, ун ђухне кайăк-кĕшĕк те сахал пулман. Вĕсене тĕрлĕ майпа, тĕрлĕ ђейелĕхпе тытнă: ухăпа, серепепе, кайăкла йурласа, шăхăрса, илĕрте-илĕрте хăйсенĕн çывăхне пыртарса тытнă. Халĕ те ђăвашсем ăста кайăкçă çинђен: вăл кайăк ђĕлхине пĕлет, теççĕ. Шыври пулăсене тата вăлтапа, сĕрекепе, атмапа, săскăпа, неретпе, шакпа, куђђапа, çилĕмпе тытнă.

Тытнă ђĕр-ђунăн ашне вĕсем çинĕ, тĕкĕнђен-тирĕнђен хăйсене валђи тумтир тунă. Пĕр авалхи Рим çынни каланă тăрăх, ђăвашсем („туссем"), вăрçа кайнă ђухне те „хыçалтан вĕçсе пыракан тирсене çыха-çыха йанă" [4]).

[1]) Соколов Д. Н. Оренбургская губерния. Москва, 1916 г. Стр. 70.

[2]) Барон Сигизмунд Герберштейн. Записки о московитских делах. Спб., 1608 г. Стр. 145.

[3]) Çавăнтах, стр. 95.

[4]) Записки Филологического Отделения Импер. Русского Археологического Общества. Спб. 1904 г. Т. II, стр. 210.

Çапла авалхи ђăвашсем выђăх-ђěрлěх те усранă, кайăка та, пулла та çŷренě, унтан тата тырăпулă та пăртак тукаланă пулмалла, мěншěн тесен, ěлěк те вěсем, Вăта Аçире ытти хун ăрăвěсемпе пěрле пурăннă ђухнех, çěрěçне тукаланине епěр куртăмăр. Анђах ун ђухне ěçлени вăл ахаљрен тенě пек кăна пулнă, мěншěн тесен, тěп ěçě вěсенěн кайăкçă ěçěпе кěтўçě ěçě пулнă. Вěсем ун ђухне йывăр çěр ěçěпе ытлашши хăтланмасăр та пурăнма пултарнă, мěншěн тесен, ун ђухне Атăлпа Урал хушшинђе пурте тулăх пулнă. Анђах вăл пуйанлăх (тулăх) ěмěр иксěлми, ěмěр пěтми тулăх пулман.

## 3. Ђăвашсем çěр ěçне йепле йерсе кайнă.

Ниměнле халăх та çěр ěçне ěçе ытараймасăр йуратнипе тытăнман. Мěншěн тесен, вăл ěç çăмăл ěç мар, йывăр ěç. Пěр акăлђан çынни калаť: çěр ěçě вăл ытти ěçсенђен пуринђен те йывăртарах, тен çěр айěнђе ěçлекенсен ěçě çеç унтан тертлěрех пулě, тет. Çавăнпа ађаранпа çěр ěçне хăнăхса пиçсе çитмен çынсем нихăшě те вăл ěçе ирěккěн тытăнмаççě. Ахаљ мар çав акăлђан çыннийех калаť: „Жизнь пастушеских народов... представляет почти безконечный праздник, и я не могу вообразить себе ничего, кроме страха голодной смерти, что могло бы заставить людей, живущих своими стадами и табунами, перейти к земледелию» [1]) тет. Ђăвашла: кěтўç халăхсенěн пурăнăçě—вăл вěçě-хěррисěр пыракан праçникпе пěрех, çавăнпа епě çав кěтў кěтўпе выђăх усраса пурăнакан халăхсем, выçă вилесрен хăранисěр пуçне, мěншěн те пулсан урăхшăн çěр ěçне тытăнни çинђен ниměнле те шухăшлама пултараймастăп, тет. Унтан вăл пушкăртсене илет. Ђăнах та кěтěвěсем вěсене ěлěк мěн кирлине йăлтах парса тăнă. Çавăнпа вěсем ниměншěн те ытлашши куђанмасăр канлě пурăннă. Анђах вěсенěн çěрěсене вырăссем, Урал касакěсем, ăçта килђě унта турта-турта иле пуçласан, вара ěлěкхи ирěк иртсе кайнă, мěншěн тесен, çěршыв пěтěмпех тăвăрланса, хěсěнсе çитнě. Нумай кěтў усраса тăранса пурăнасси вара пěтнě. Выçă хырăм аптăратни, економěк пусмăрě (вырăсла çав «экономическая необходимость» текенни), вěсене ирěксěрех çěнě кансěр ěçе тытăнтарнă: çěршыв ырăлăхне хура тăпра çинђе ђаваланса пухмалла пулнă. Пушкăртсем халě пурте тенěпе пěрех хуллен хулленех тыр тăвакан халăх пулса

[1]) Макензи Уоллес. Россия. Спб. 1881 г. Т.II, стр. 67—68.

пыраççĕ. Халĕ вĕсем ĕнтĕ кĕтӳçĕ халăх мар. Авал ђăваш йăхĕсенĕн те çапла çав хырăм выççи антăратнипе ирĕклĕ кайăкçăпа канлĕ кĕтӳçĕ пурăнăçĕнђен татăлса, йывăр çĕр ĕçне йермелле пулнă.

Ку ĕнтĕ тĕрĕсси тĕрĕсех те, анђах пирĕн ак çакна та манмалла мар:кайăкçă ĕçĕ—сĕтĕрĕнђĕк ĕçĕ, вăл ĕçре хăрушлăхĕ нумай, шанђăклăхĕ сахал, кĕтӳç ĕçĕ те канăçсăр ĕç, пĕр çĕр ĕçĕнђе çеç ним хăрушлăх та çук, шанђăклăх нумай, риск çукпа пĕрех. Пурăнăçа тараса çинђи пек виççе пурăннă выçăлă тугăлă ђăваш çакна асăрхамасăр хăварма пултарайман. Çавăнпа çĕр ĕçне тытăннă авалхи ђăваш çинђен епир: вăл шанђăксăр ĕçе пăрахса шанђăклă ĕçе тытăннă, теме те пултаратпăр.

Ку хăш вăхăтра пулнине халĕ пĕлме çук. Анђах тырăпулă ĕçне тытăнассине ђăвашсем ытла вăрăмах йаман пулмалла, мĕншĕн тесен, пурăнăç хăй вĕсене хыпалантарнă. Авалхи ђăваш вăл, пур номат пекех, сăтăрçă етем пулнă. Вăл хырăмшăн, çипуçшăн, сутуилӳ тăвасшăн ниме те хĕрхенмен: шыв шурти ђĕрђуна та, вăрманти-хиртине те, ларан-тăран йăвăç-курăка та шелleme пĕлмен, вĕсене нимĕн шухăшламасăр пĕтернĕ. Вĕсем ыран йепле пурăнасси çинђен шухăшла пĕлмен. Çапла вара пурăннăçемĕн ирĕксĕрех, вĕсенĕн аллинђи çĕрпӳ ырăлăхĕ, çĕршыв пуйанлăхĕ, иксĕлсе, сахалланса пынă. Çавăнпа кайăкçăн пурăнăçĕ пăрахăçланса пынă, кĕтӳçĕн те майсăрланнă. Çапла ирĕксĕрех çĕр ĕçне лайăхрах тытăнас вăхăт çитнĕ.

Пе́р авалхи халап (калав) ăна пире пит лайăх ăнлантарса парать. Иккĕн пĕр тăвантан пĕри, асли, Йаккишĕ, кайăк тытса пурăннă, тепри, кĕçĕнни, Велӳшĕ, хурт усраса. Йаккишĕ пĕрре кайăк тытаймасăр аптăраса çитнĕ те, шăлнĕн йăвăçĕ патне пырса, хăвăлтан пыл çаратма тытăннă. Анђах ăна хуртсем сăха-сăха вĕлернĕ. Велӳшĕ ăна курсан, пиђђĕшшĕн те, хурђĕсемшĕн те темĕн ђухлĕ макăрнă. Йĕрсен-йĕрсен, вăл çывăрса кайнă. Тĕлĕкре кăна турă курăнать те, хурђĕсене çĕре пытарма хушать. Вăрансан, Велӳш хурђĕсене ђăнах та çĕре ђаваласа пытарнă. Çакă вара малтанхи ака туни пулнă, малтанхи вăрлăх акни пулнă. Нумай та вăхăт иртмен, çĕртен калђа шăтса тухнă, унтан пуђаххисем пулнă. Вĕсенђен вара Велӳш тыр пĕрђисене сăтăра-сăтăра илнĕ те, ђул çинђе ватса, шывпа хутăштарнă, унтан типĕтнĕ, вара çăкăр пулнă.

Çапла Велӳш пыл вырӑнне çӑкӑр çисе пурӑна пуçланӑ пулат̆[1]).

Пуринђен малтан çӗр ӗçне Ђулманпа Самар шывӗ хушшинђе пурӑнакан ђӑваш ӑрӑвӗсем тытӑннӑ пулмалла. Кунта сӗм вӑрманлӑхсем нумай пулнӑ, çеçен-хирсем вӑрманлӑх хушшисенђе çеç пулкаланӑ. Вӑрман вӑл çеçен-хир пек мар: унта кӗтӳ-кӗтӳпе выља́х-ђӗрлӗх усрама май килмен, усрасан та, вӑрман хушӑкӗсенђе тӗллӗн тӗллӗн çеç усрама майӗ пулнӑ. Выљӑха пӑхма тата кунта хӗнтерех пулнӑ, мӗншӗн тесен, çара çеçен-хирти пек вӗсене вырӑнтан выра́на куçарса çӳремелли майӗ пулман. Çавӑнпа выљӑх-ђӗрлӗхе вӑрманлӑх хушшинђе пурӑнакансен ирӗксӗрех сахал усрамалла пулнӑ, тата ӑна хӗл каçарма апат хатӗрлемелле пулнӑ. Унтан тата кӑна та манмалла мар: çав вӑрманлӑхсенђе тискер кайӑксем пит нумай пулнӑ, вӗсем кӗрђӗ кӗрђӗпе çӳренӗ, выљӑха хытӑ тапӑннӑ. Çавӑнпа Ђулманпа Самар хушшинђе пурӑнакан ђӑвашсенӗн выљӑхӗсене сыхласа упраса тӑма картасем тумалла пулнӑ. Çапла кунта çеçен-хирти пек сарӑлса, вырӑнтан вырӑна куçса çӳреме нийепле те май килмен, ирӗксӗрех пӗрпӗр вырӑнта йӑва туса, хӗл хырӑмне тӑрантармалӑх апат хатӗрлесе, килçуртпа, карташпа тӗпленсе пурӑнмалла пулнӑ. Малтан кунта çӗр ӗçӗсӗрех пурӑнма та майӗ пулнӑ пулӗ теме пулат̆, мӗншӗн тесен, кайӑк-кӗшӗк те нумай пулнӑ, тата шывсем тӑрӑх улӑхсенђе выљӑх-ђӗрлӗх усрама та майӗ пулнӑ. Кӑна епӗр куртӑмӑр. Анђах пурӑна киле, çӗршыв тӑвӑрланнӑ майӗпе, пурӑнӑç хӗсӗнсе пынӑ, кӗтӳç пурӑнӑçӗ хырӑма тӑрантарайман, вара çӗрӗçне йермеллех пулнӑ.

Пур çӗрте те вӑл çавӑн пек пулса пынӑ. Пӗр историк калат̆: „Когда пастушеский народ не находит себе пищи в скотоводстве, когда, вследствие возростания народонаселения или иных причин, он либо начинает постепенно заниматься хлебопашеством (которым до тех пор занималась лишь небольшая часть его) либо ищет удобных мест для земледелия у соседей,—тогда скотоводческий строй начинает разрушаться“ [2])—кӗтӳç-халӑх выљӑх-ђӗрлӗх усраса хырӑмне тӑрантарайми пулсан, йе ӗрђесе йышлӑланса пынӑ пирки, йе

[1]) Известия Общ. Археологии, Истории и Этнографии. т. XXVI, в 5, стр, 504—505,

[2]) Вестник Европы, 1902 г., Октябрь, стр. 433.

урӑхшӑн мӗншӗн те пулсан, тырӑпулӑ тума тытӑна пуҫласан (вӑл ӗҫпе унђен хӑшӗ пӗрисем анђах хӑтланкалаҫҫӗ), йе тата кӳршисем патне тырӑпулӑ тума йурӑхлӑ ҫӗр шырама ҫӳре пуҫласан, вара кӗтӳҫле пурӑнӑҫӑн йӗрки арканма пуҫлаť те, урӑх пурӑнӑҫ йӗрки пуҫланса кайаť, тет.

Тури ђӑвашсенӗн ҫӗр-ӗҫне йерме майӗ те пулнӑ, мӗншӗн тесен, вӗсенӗн ҫӗрӗ мамӑк пек ҫемҫе тӑпраллӑ пулнӑ, кӑшт ђакаласа хускатсан та, ун ҫинђе тырӑпулӑ пулма пултарнӑ. Ҫапла Самар шывӗнђен тӑвалла, ҫурҫӗрелле, пурӑнакан тури ђӑвашсем ҫӗр ӗҫне хуллен хуллен йавӑҫса, хӑнӑхса пынӑ, йулашкинђен вӗсем йӑлтах ҫӗр ӗҫлекен, ҫуртйӗрпе тӗпленсе, лӑплӑм пурӑнӑҫпа пурӑнакан халӑх пулса кайнӑ. Вӗсем ҫӗр ӗҫне йерсе хӑнӑхса ҫитеђђен, нумай вӑхӑт иртнӗ пулас пулаť, мӗншӗн тесен, ун пек ӗҫ вӑл нийепле те ђас пулма пултарайман. Пӗр хушӑ вӗсем кайӑкҫӑ ӗҫне те, кӗтӳҫ ӗҫне те, ҫӗр ӗҫне те тукаласа пурӑннӑ пулмалла. Ҫак виҫ тӗрлӗ ӗҫсем пурте пӗр пек вырӑнта тӑнӑ пулмалла. Ҫӗр ӗҫӗ, пурӑннӑҫемӗн, ҫийеле тухса пырсан пырсан, йулашкинђен тин вара ҫӗнтерсе илнӗ те, тури ђӑвашсенӗн тӗп ӗҫӗ пулса тӑнӑ. Ҫавӑнтанпа вара тури ђӑвашсем ҫӗр ӗҫпе пурӑнакан халӑх пулса кайнӑ.

Тури ђӑвашсем ҫӗр ӗҫне йерсе кайнӑ ђухне, анатрисем ун ҫинђен шухӑшламан, мӗншӗн тесен, ҫеҫен-хирсенђе кӗтӳ выљӑх усрама вӑрманлӑхринђен нумай аван пулнӑ. Ҫавӑнпа вӗсем унта кӗтӳҫӗ пурӑнӑҫне вӑрӑмраха тӑсса йама пултарнӑ. Пурӑна киле вӗсенӗн те ҫӗрӗҫне йатарласах тытӑнмалла пулнӑ пулӗђђӗ те, анђах вӑл вӑхӑта вӗсем кунта кӗтсе илеймен. мӗншӗн тесен, вӗсенӗн кунтан куҫса каймалла пулнӑ.

Ҫапла ӗнтӗ Атӑлпа Урал хушшинђе ђӑвашсем хуҫалӑх йенђен икӗ тӗслисем пула пуҫланӑ: пӗрисем, анатрисем, Аҫири пек номатлах пурӑннӑ, теприсем, турисем, тӗпленсе, ҫӗр ӗҫлесе пурӑна пуҫланӑ, пурӑннӑҫемӗн вӗсем хула куљттурне те пуҫласа йанӑ.

### 4. Авалхи ђӑвашсенӗн куљттурлӑхӗ йепле пулнӑ.

Авалхи ђӑвашсенӗн куљттурлӑхне, вӗсенӗн ӑсталӑхӗпе илемлӗхне вӗсенђен тӑрса йулнӑ йапаласем лайӑх кӑтартса тӑраҫҫӗ. Ун пек йапаласене авалхи ђӑвашсем вырӑнаҫса пурӑннӑ вырӑнсенђе нумай тупаҫҫӗ. Ку йапаласем хушшинђе ђӑн авалхисем—ђултан тунисем. Ун пек йапаласем: сӑнӑ

вĕçĕсем, ухă вĕçĕсем, ăйăсем, савăлсем, йĕрĕлђесем, „нуклеуссем“. Вĕсене пурне те авалхи ђăвашсем пурăннă çĕрте тĕлпулакан вут ђулĕнђен тунă. Çавăнпа вĕсене авал унта пурăннă çынсемех тунă теме пулаť. Ђăнах та 1879-мĕш çулта Пăлкартан кăнтăртарахра, пĕр 5—6 çухрăмра, уй (хир) варринђе ђул хатĕрĕсем туса пурăннă авалхи пысăк йал вырăнне тупнă[1]). Ăна нуклеуссем те пит лайăх кăтартса тăраççĕ. „Нуклеус“ тесе пĕђĕк хатĕрсем тума ката-ката илнĕ пысăкрах ђул катăкне калаççĕ. Ун пек нуклеуссене авалхи ђăвашсем пурăннă çĕрте ђылай тупкаланă. Пĕлĕвçĕсем çавăн пек ђултан тунă хатĕрсем пирки нимĕн шухăшлама аптăраççĕ: те вĕсене ђăвашсенĕн тĕп аслашшĕсем пăлкарсем тунă, те вĕсем пырађђен малтан пурăннă фин йăхĕсем тунă? теççĕ. Йапалисене пирĕн ер пуçланађђен ытла нумайах мар малтан тунă теççĕ. Апла пулсан, вăл ђул хатĕрсене авалхи ђăвашсем тунă-ши, йе урăх йышши халăхсем-ши тесе иккĕленмелли çук пек, мĕншĕн тесен, Атăлпа Урал хушшине ђăвашсем тахăçан авалах килсе вырăнаçнине епĕр куртăмăр. Тата çакна манмалла мар: авалхи Пăлкар çĕрĕнђе тупакан йапаласем пуртепе пĕрех Алттай таврашĕнђи пек. Çавăнпа вĕсене пĕр йышши халăх аллинђен тухнă теме пирĕн пысăк тивĕç пур.



**5-мĕш ўкерђ.** Нуклеус.

Ђултан пуçне авалхи ђăвашсем тĕрлĕ хатĕрсене тата шăмăран тунă: сăнă вĕçĕсене, ухă вĕçĕсене, йĕпсене, пăрасене, т. ы. те. Ун пек шăмăран тунă йапаласене авалхи Пăлкари çĕрĕнђе ђылай тупкаланă, пуринђен ытла Пўлĕр таврашĕнђе. Вăл йапаласем хушшинђе туса пĕтерейменнисем те пур. Апла пулсан, вĕсене çав тупнă таврара пурăнакан çынсемех тунă пулаť. Ђăнах та Пўлĕр таврашĕнђех шăмă куписем те ђылай тупкаланă. Вĕсем пурте шултăра шăмăсем, вĕсем хушшинђе пин (мамăнт) шăмми те тĕл пулкалаť. Хăшхăш йапаласене çав пинĕн шăмминђен тунă пулмалла. Вĕсене



**6-мĕш ўкерђ.** Ђул мăлатуксем.

[1]) Труды Общества естествоиспытателей при Имп. Казан. Университете. Т. XIV, в. 5.

пурне те ал вĕççĕн тунă. Ђăвашсем халĕ те йĕпсене, йĕрĕлђесене (йӳлешсене, лӳлешсене), çĕрĕсене, шăлтăрма çаккисене пушă аврисене, туйа пуçĕсене, тата ытти нумай йапаласене те авалхи аслашшĕсем пек шăмăран тума йуратаççĕ.

Çакăнтах тата туйран (пронсăран) шăратса тунă йапаласем ђылай тупаççĕ: сăнă вĕçĕсем, çурла майлă кукăр çĕçĕсем, тата урăх та нумай. Кусене пурне те ђăваш йапалисем теме пулаť.

Аçи çĕрĕнђе ытти хун ăрăвĕсемпе пĕрле пурăннă ђухнех ђăвашла ăрусем хăш-хăш тимĕр-тăмăра пĕлкеленĕ, вĕсенђен йапаласем тума та пултарнă. Епĕр ăна куртăмăр. Атăлпа Урал хушшине ырăнаççан та, вăл ĕçе вĕсем пăрахман. Ђăвашсем тимĕр-тăмăрсенђен тĕрлĕ йапаласем туни вăл Валерий Флак каланинђен те паллă. Çак Флак 2000 çул ĕлĕк пурăннă. Вăл ђăвашсем çинђен („туссем" çинђен) ак çапла çыраť: „У них доселе сохраняется весь образ жизни древних, священные удары медных инструментов и напоминающая о восточной битве флейта"[2]) тет. Вăл ђăвашла: вĕсем („туссем"—ђăвашсем) пĕтĕмпех авалхи йăласене тытса пурăнаççĕ, йĕсрен тунă инструментсене те шаккаса йанраттараççĕ, ĕлĕк мал йенђе вăрçнине асăнтаракан шăхлиђĕ те калаççĕ, тени пулаť. Мусăк хатĕрĕсене авалхи ђăвашсем йĕсрен тунă пулсан, ĕç тума кирлĕ тĕрлĕ хатĕрсене: çĕçĕ-пуртăсене, ухăсăнăсене, ыттисене те пурне те çавăн пек йĕсренех йе шăратса, йе туптаса тума кам ђарнă пулĕ? Ђăнах та авалхи Пăлкари çĕрĕнђе тимĕр-тăмăр кăларнă ырăнсене ђылай тупкаланă. Йепле пулсан та, ђăваш йумах-халапĕсенђен шухăшласа кайсан, ђăвашсем хушшинђе тимĕрçĕсем тахçан авалах пулни лайăх курăнса тăраť. Тимĕрçĕсем ђăваш хушшинђе авал пит ђаплă ырăн йышăнса тăнă. Унтан нимĕн те тĕлĕнмелли çук. Ăна çакăнтан шухăшласах пĕлес пулаť: кирек мĕн йапала тăвас пулсан та, ăсталăхпа ал çавăрăнăшĕ кирлĕ, унсăрăн нимĕн те май килмест. Анђах етем пурте пĕр пек хастарлă мар: хăшĕ ĕçе пултараť, хăшĕ пултараймасť. Çавăнпа авалхи ђăвашсем кирек мĕн йапала тăвас пулсан та, ăна тума пулăшаканни пур тесе шухăшланă: çав пулăшакансăр нимĕн те пулмасť, тенĕ. Тимĕр-тăмăртан йапала тăвасси вăл пуринђен те хĕнтерех: унта сăлайне (ăславне) нумай пĕлес пулаť.

[2]) Записки Филолог. Отд. т. II, стр. 210.

Çавӑнпа тимӗрçӗсене ӗлӗк ахаљ çын тесе шутламан. Авалхи пур халапра та, йумахра та тимӗрçӗсем вӗсем темӗскерле паттӑр йышши етемсем. Вӗсем тӑвакан тимӗр йапала та ахаљ йапала мар: вӑл тӗреклӗ, хӑватлӑ, çивӗђ йапала, унӑн хайарӗ те пур. Çавӑнпа ђӑвашсем ку таранђђенех тимӗр йапалапа хӑмсарма каламаççӗ, тата тимӗртен пулнӑ сурансене тимӗр ђӗлхи-вӗрсе йусама хӑтланаççӗ.

Флак каланинђен шутласан, тата ђӑвашсем мӗн авалтанпах мусӑк калама та ӑсталана пуçлани лайӑх курӑнса тӑрат. Ђӑнахах та вӗсенӗн авалхи йумахӗсенђе те мусӑк ӑстисем пит пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраççӗ. Çапла пӗр йумахра кӗсле ӑсти ухмах Йӑван кӗслине калама тытӑнсан, выртан кӗлтисем те сикеççӗ, ларан çӗмелӗсем те ташлаççӗ, ӳсен йӑвӑçӗсем çулçисене çупаççӗ. Йепле пулсан та, ђӑвашсем—„туссем“ шӑхлиђӗ каласа, хӑйсене савӑнтарма пӗлнӗ. Çав шӑхлиђӗрен кайрантарах шӑппӑр тухса кайнӑ, йе тен вӑл ун ђухнех те пулнӑ пулӗ, мӗншӗн тесен, шӑппӑра ӑна икӗ шӑхлиђе пӗрлештерсе, вулӑ ӑшне кӳртсе лартса калаççӗ. Унтан тата çак вӑхӑталлах вӗсем тӗрӗсем туса, ерешлентернӗ тӗрлӗ илемлӗхсене те тӑхӑнса çакса çӳре пуçланӑ пулас пулат, мӗншӗн тесен, малта каланӑ Ермитташри тӑхасем çине ӳкернӗ кӗлеткесенӗн çипуçне тӗрӗсем туса илемлетни курӑнат. Тӗрӗ пулмасан та, тӗрлӗ тӗслӗ ђултан тунӑ ерешлӗх унта лайӑхах курӑнса тӑрат. Çапла ӗнтӗ ђӑваш куљттури пуçланса кайни вӑл пӗр 2000 çул ытла пулат.

## 5. Ђӑвашсем кӳршисемпе йепле пурӑннӑ.

Çӗр çинђе нимӗнле халӑх та ытти халӑхсенђен уйӑрӑлса паљ пӗђђен пурӑнни çук. Пур халӑх та ыттисене йерсе, вӗсемпе хутшӑнса пурӑнат: пуринђен малтан çывӑхрисемпе, унтан вара катарисемпе. Кӳршӗ-аршӑсем йепле пӗр-пӗринпе йе парса-илсе, йе вӑрçса пурӑнаççӗ, халӑхсем те çавӑн пекех. Акӑ илер вырӑссенех. Вӗсем халӗ ытти халӑхсене пуринђен ытла ђӗрӗ тавар йарса тӑраççӗ: тырӑсем, тирсем, йӑвӑçсем, тата урӑх та нумай. Хӑйсем вӗсем лешсем патӗнђен тӗрлӗ машинсем, тӗрлӗ хатӗрсем, хапрӑк савӑтра тӑвакан таварсене кӳреççӗ. Нумай пулмаст, Йевропри халӑхсем пӗр-пӗринпе йӗркесӗр хӑрушӑ вӑрçса илђӗç. Вӑл ӗлӗк те çаплах пулнӑ: етем ывӑлӗ-хӗрӗсем пӗр-пӗринпе йе килӗштерсе, йе вӑрçса пурӑннӑ.

Ђăвашсем Атăлпа Урал хушшине килсе кĕређђенех унта етемсем пурăннă: ăна халĕ вăл хушăра тĕрлĕ çĕрте тупакан авалхи йапаласем кăтартса тăраççĕ. Çав етемсем финсем пулнă. Вĕсем, ђăвашсем килсе кĕрсен, урăх çĕрелле кайнă пулмалла, хăшĕ тата ђăвашсемпе хутăшса пĕтнĕ пулмалла. Çавăнпа халĕ ђăвашсем хушшинђе, сăн-сăпатран пулсан, пурте тĕрĕксем пек мар: сарă, мăн сухаллă çынсем те нумай. Вырăнаçса, тĕпленсе çитсенех, ђăвашсем кӳршисемпе хутшăнса пурăна пуçланă.

Херетот пурăннă ђухнех çкифсемпе ђăвашсем хушшинђе сутуилӳ ĕçĕ пулнă. Вăл каланă тăрăх, çкифсем, сутуилӳ тума, Танран пуçласа, Урал таранах çӳренĕ. Вĕсем çав хушăра пурăнакан халăхсемпе пĕрмайах хутшăнса пурăннă. „К ним ходят некоторые скифы... Кто из скифов посещает их, тот пользуется для своих деловых сношений семью переводчиками и семью языками)[1]" тет Херотот. „Хăш-хăш çкифсем вĕсем патне çӳреççĕ... Вĕсем патне çӳрекен çкифсем хăйсенĕн (сутуилӳ) ĕçĕсене çиђĕ тăлмађĕ урлă çиђĕ ђĕлхепе тăваççĕ" тени пулаť вăл. Çак çиђĕ ђĕлхе хушшинђе пĕри ђăвашсенĕн „твшсенĕн туссенĕн" ђĕлхи пулаť [2]). Çкифсем çав çиђĕ тĕслĕ халăхсем патне кайа-кайа хаклă йышши кайăк тирĕсене пуçтарнă, мĕншĕн тесен, вăл тирсенђен вĕсем кĕрĕксем туса тăхăнса çӳренĕ. Авалхи пĕр çыруçă (Çенек) калаť: „разве большая часть скифов еще и ныне не одевается в лисьи и мышинные хребтовые шкурки, которые мягки на ощупь и непроницаемы для ветров" [3])—çкифсем нумайĕшĕ халĕ те тилĕ тирĕпе шăшин çурăмĕ çинђи тирне тăхăнса çӳремеççĕи вара? Вĕсем хыпалама та çемçе, тата вĕсен виттĕр çил те çапаймасť, тет. Хăйсенђен ытлашшине вĕсем Хура тинĕс таврашĕнђе пурăнакан крексене сутнă, кусем вара вĕсене Кĕçĕн Аçи çĕрне кимсемпе турттарса кайса сутнă. Вăл тирсене унта капăршăн ытараймасăр илнĕ [4]). Ђăвашсем тахçан авалтанпах сутуилӳ тума пуçланине тата вĕсенĕн авалхи хули вырăнĕнђе тупнă римсенĕн авалхи укçисем те лайăх кăтартса тăраççĕ [5]). Унтан тата авалхи ђăвашсемпе йунашар пурăнакан

[1]) Геродот, IУ.

[2]) Семенкович, стр. 7. Тата кунта калание танлаштарса пăх: Марр Н. Я. По этапам развития яфетической речи. Москва—Ленинград. 1926. Стр. 366.

[3]) Зап. Фил. Отд II, стр. 137.

[4]) Семенкович, стр. 7.

[5]) Семенов В. П. Россия. Спб. 1901. Т. УI, стр. 379.

кан халăхсем хушшинђе те 2300 çул ĕлĕк çапса кăларнă крексенĕн укçисене ђылай тупкалаççĕ[1]). Йулашкинђен кăна та манмалла мар. Мăн Атăлпа Ђулман тăрăх йĕс (пронсă) ĕмĕрĕнђех таварсем çўретнине халĕ пĕлеççĕ [2]). Çапла Атăлпа Урал хушшинђе мĕн авалтанпах сутуилў ĕçĕ вăйлă тăнă. Ђăвашсем, кунта вырăнаçсассăн, вăл ĕçе йермесĕр тăман. Ђăвашсем тахăçан авалах сутуилў ĕçне тытăнни вăл, Херетот каланинђен пуçне, тата „тавар" тенĕ сăмахран та лайăх курăнса тăрать. Çак сăмах ђăн авалхи ђăваш сăмахĕ. Вăл сăмах нумай халăхсен хушшине сарăлнă[3]). Ђăвашсем тавар çўретмен пулсан, „тавар" тенĕ сăмах та таçта çитех сарăлман пулĕђђĕ. Анђах ђăн малтанах вĕсем тўрех таçта çитех çўреймен пулĕ, мĕншĕн тесен, ун ђухне тавар çўретесси вăл ытла çăмăл ĕçех пулман: халăхсем ун ђухне пĕр пĕрин çине тăшманăн пăхнă, тата ђăвашсенĕн шывсем тăрăх çўремелли кимĕсем те ытлашши селĕм пулма пултарайман. Çавăнпа вĕсем, сутуилў тума çўренĕ пулсан та, хăйсемпе йунашар пурнакан халăхсем патне таварсем пуçтарма çеç çўрекеленĕ пулмалла. Ĕлĕк хаљхи пек ђукунçулсем те, урапа-çуна çулĕсем те пулман. Çавăн пирки çынсем шывпа çўреме йуратарах панă. Ђăвашсем те хăйсенĕн кўршисем патне çаплах çўренĕ пулмалла. Мăн Атăл, Ђуман Атăл, тата вĕсенĕн тĕрлĕ çĕрелле кайакан турађĕсем кимпе çўреме лайăх пулнă. Ђăвашсем кайрантарах ђăнах та çав шывсем тăрăх пур çĕрелле те çўренĕ.

Çапла ђăвашсем тĕрлĕ халăхсемпе йавăçса тăрса, парса илсе пурăна пуçланă. Унсăрăн май та килмен, мĕншĕн тесен, пĕрин пĕр тĕслĕ тавар, теприн тепĕр тĕсли пулнă. Ђăваш, йăхĕсем хăйсеннех, Атăл хушшине килсе вырăнаççан, çеçен хиртисен выљăх нумай пулнă, вăрмантисен—тĕрлĕ йăвăç çимĕçĕсем, тĕрлĕрен кайăк тирĕсем, шыв çывăхĕнђисенĕн—тĕрлĕрен пулăсем. Çапла вĕсен хăйсеннех пĕрисен пĕр йышши таварсем, теприсен тепĕр йышшисем пулнă. Çавăнпа вĕсем хăйсенђен ытлашшине пасара илсе тухса, кирлĕ йапалапа улăштарнă. Çапла вĕсем, çуккине пуррипе улăштарса, пур пулса пынă. Сутуилў вăл пур çĕрте те çапла пуçланса

---

[1]) Киевская Старина. 1888 г, июль, стр. 38, прим. 2.

[2]) Геддон, Переселение народов. Петроград--Москва. 1923 г. Стр. 115

[3]) Марр Н. Я., Чуваши—Яфетиды на Волге. Чебоксары. 1927 г. Стр. 69.

кайнă теме пулаť. Ђăвашсем те хăйсемпе йунашар пурăнакан халăхсемпе çапла ыглашши йапалана çук йапалапа улăштарса сутуилў тăва пуçланă.

Сутуилўве тытăнни вăл ђăвашсемшĕн пит усăллă пулнă. Ăна пула вĕсенĕн хушшинђе хăш-хăш карсем пасарлă хуласем пек пула пуçланă. Çапла ђăвашсем хушшинђе ђентрсем палăрнăçемĕн палăрса пынă.

## 6. Ђăваш хушшинђе хуласем-карсем йепле пуçпанса кайнă.

Çĕр ĕçлеме тытăннă ђăваш ăрăвĕсем хăйсенĕн килçурђĕсене шыв çывăхнерех лартма тăрăшнă, мĕншĕн тесен, шыв вăл етемшĕн пит кирлĕ йапала, етем шывсăр çĕрте аптăраť, ĕлĕк тата, йухан шывран пуçне, çўремелли лайăх çулĕ урăх пулман. Хăйсенĕн килçурђĕсене пĕрпĕр тăшман, йе етем, йе тискер кайăк, сисмен хушăра сасартăк пырса ан тапăнтăр тесе, вĕсем килçурђĕсем тавра карта çавăрнă, „каркарнă“ Çапла кашни ăрун хăйĕн карĕ пулнă. Пуринђен ытла çакăн пек карсене икĕ шыв, йе икĕ çырма пырса пĕтĕçнĕ ђăнкă çыранлă сăмса çине лартма тăрăшнă. Ун пек карсен вара икĕ йенђе йе тарăн вар, йе шыв пулнă. Çак ђăнкă çыранлă варсем вара кара кирек мĕн сасартăк пырса кĕресрен шанђăклă сыхласа тăнă. Усă йенне йе çўлĕ карта тытнă, йе çĕр хўме çавăрнă, йе тата канав авăтнă.

Ĕлĕк карсăр пурăнма май та килмен, мĕншĕн тесен, пĕр йенђен йут ăрусем пĕрпĕрне тăшман тесе пурăннă, пĕр майах пĕрпĕринпе вăрçса пурăннă, тата тискер кайăксем те, выђăх-ђĕрлĕх шăршине сиссе, етем пурăнакан çĕре йĕркесĕр нумайăн пыра-пыра тапăннă[1]). Çав тăшмансем карлă çĕре çех пырса çыпăçайман.

Çакăн пек карсем пурăннăçемĕн Мăн Атăлпа Шур Атăл хушшинђе йышлăланса пынă, мĕншĕн тесен, етем ывăлĕхĕрĕ ĕрђенĕ майĕпе, кив ăруран çĕнĕ ăрусем хунав пек тухса пынă. Çĕр тăвăрланнă пирки, вĕсем пĕрпĕринђен уйăрăла-уйăрăла кайса, пурăнма лайăх çĕнĕ вырăнсем шыранă. Майлă вырăн тупсанах, унти вăрманлăхсене кирлĕ таран хăртнă та, „кар карса“, йăвана вырăнаçнă пек, вырăнаçнă. Çапла çĕнĕ „кар“ киввинђен йе тăварахра йе анатарахра пулнă.

---

[1]) Вир-йал ђăвашсем хушшинђе халĕ те авал тискер кайăксем етеме кĕтў кĕтўпе пыра-пыра тапăнни çинђеп калаçаççĕ. Авалхи çырусенђе те ун çинђен калансем пур.

Ёлĕк пурăннă шыв тăрăхĕнђе ђипер вырăна ытти ушкăнсем йышăнса пĕтернĕ пулсан, вара ҫĕнĕрен уйăрăлакан ăрусенĕн ҫĕнĕ ҫĕре кайса вырăнаҫмалла пулнă, йе пĕрпĕр йухăн шыв хĕррине, йе кӳлĕ таврашне. Ҫапла ђăваш карсем ĕрђенĕ-ҫемĕн ĕрђесе пынă.




**7-мĕш ӳкерђĕк.** Авалхи ђăваш хули планĕ.

Ҫак пĕр йыш, йе пĕр ăру пурăнакан карсенђен хăшĕ-пĕри, пурăна киле, пысăк хула пек пулса кайнă. Апла пулма вĕсене тĕрлĕ мел пулăшнă: йĕри таврара пурăнакан халăхсем

пĕр ăруран пулни, çĕршывĕ пуйан пулни, тăшман сехринђен хăрамасăр пурăнма май килни, тата ы. т. Пĕр кăкран тухнă халăхсем—ăрусем пĕр ђĕлхепе, пĕр тĕнпе, пĕр тĕслĕ йалапа пурăннă. Çавăнпа вĕсем пађах хутшăнмасăр тăман, пĕрмайах пĕрпĕринпе хутăшса, пĕрлешсе, парса-илсе пурăннă. Çапла тури ђăвашсем карсенђе пурăна пуçласан та, пĕр нĕсĕлпе пурăнассине пăрахман: халăхпа ђўк тумалла пулсан, йе урăх ĕç тумалла пулсан, вара пурте „тĕп кара“ пуçтарăннă. Çавăнпа çак тĕп карсенђе пурăнăç йаланах вĕререх тăнă. Ун ђухне тата тăшман сехри етеме пур йенђен те хытă хăратса тăнă. Çакăн пирки пĕр кăкран тухнă ăрусем „тĕп-кара“ çўлĕрех çĕре, таçта çитех курăнакан вырăна лартма тăрăшнă; ăна ытти карсенђен пуринђен те çирĕпрех, аслăрах тунă. Тăшмансем пынине сиссенех, вара пур ађи-пăђипе, мулĕпурлăхĕпе çав кара тарса пытаннă. Тăшманĕсем çывхарсанах, вĕсене хўме хыçĕнђен ухăпа пере-пере тартнă. Çапла „тĕп-карсем“ вĕсем хаљхи креппĕç вырăнне пулнă. Сутуилў вăйлăланса кайсан, мăн шыв çывăхĕнђе ларакан «тĕп-карсенђе» вара пасарсем те пула пуçланă.

Таçта çитех тăсăлса кайакан мăн шыв турађĕсем тăрăх вара тĕрлĕ çĕртен çав карсене сутакан-илекен çўре пуçланă. Вĕсенђе вара пурăнăç тата хытăрах вĕресе тăра пуçланă. Ун пек карсем тата хытăрах пысăкланса ђапа тухса пынă. Авалхи ђăвашсенĕн пасарлă карĕсенђен иккĕшĕ пурăннăçемĕн пит ђаплăланса пынă. Вĕсенђен пĕри *Пўлер* пулнă, тепри—*Пулкар*. Вĕсем иккĕшĕ те пит лайăх вырăнта ларнă: Пўлерĕ Çарăмсан шывĕ çинђе, Мăн-Атăлпа Шур-Атăл хушшинђе, Пулкарĕ Ђулман Атăл Мăн-Атăла йухса кĕрекен вырăн çывăхнерехре. Çапла иккĕшĕ те вĕсем таçта çитех йупленсе сарăлса кайакан ђăн пысăк çул çинђе, Атăл хĕрринђе, ларнă. Çавăнпа унта пыма пит лайăх пулнă: унта инçетри хуçасем те çўре пуçланă, çеçен хирсенђе кĕтўсем кĕтсе пурăнакан анатри ђăвашсем те хăйсенĕн таварĕсене иле иле пынă. Çапла çак икĕ хула пур ђăваш ăрăвĕсене те перлештерсе тăракан тĕп вырăнсем, ђентрсем, пула пуçланă. Вырăссене ĕлĕк Мускав йађĕпе „мускавсем“ тенĕ пек, йе латтинсене Рим йађĕпе „римсем“ тенĕ пек, ђăвашсене те киттайсем „пўлерсем“ тенĕ, крексемпе арапсем кайрантарахран „пулкарсем“ тенĕ.

Пулкарпа Пӳлер хăш вăхăтра пуçланса кайнине халĕ пат татса калама май çук. Анђах вĕсем—пит авалхи хуласем. Йепле пулсан та, ĕлĕкхи историксем Пулкар хулине Искентер пурăннă ђухнех пуçланса кайнă теççĕ [1]). Вăл Искентер 2250 çул ĕлĕк пурăннă. Çак Искентер крексенĕн вăрçа йуратакан паттăр патши пулнă. Вăл икĕ мăйракаллă пуç кăшăлĕ тăхăнса çӳренĕ, çавăнпа ăна тата икĕ мăйракалли теççĕ. Историксем каланă тăрăх, вăл Вăта Аçире пурăнакан тĕрлĕ халăхсемпе вăрçма тытăннă. Лешсем кун патне çынсем суйласа йанă та, ак çапла каланă: кайалла-майалла шухăшламасăр нимĕн те ан ту, тенĕ. Анђах Искентер Йаксарт (Сыр-Тарйа) шывĕ урлă каçнă та, „хăй телейне кура" вĕсене çĕнтернĕ. Ку ĕç 2256 çул ĕлĕк пулнă. Искентер унтан Уралпа Атăл хушшине çитнĕ пулаť те, вара тавраri халăха тытса тăма, Тан (Тон) шывĕ хĕррине виçĕ ерне хушшинђе пĕр карман (креппĕç) тутарса лартнă пулаť [2]). Унтан тата пĕр перс кĕнекинђе каланă тăрăх, вăл ђĕрĕлĕх шывне шыраса çурçĕрелле кайнă пулаť те, унта пĕр Пион Кар йатлă шăтăк патне пынă пулаť. Вăл унтан кайас тенĕ ђух, ун патне çывăхри çĕрсенђен темĕн ђухлĕ халăх пуçтарăннă пулаť те, вара ывăннисем пурте пурăнма унтах тăрса йулнă пулаť. Çавăнпа та вара пĕђĕккĕн пĕђĕккĕнех пысăк хула пулса ларнă пулаť. Кайрантарах Н вырăнне Л кала пуçланă та, „Пион-Кар" вырăнне „Пулкар" теме пуçланă пулаť. Çак хула патшисем те çав Икĕ-Мăйракаллă Искентертенех пулнă пулаť. Вĕсенĕн патшалăхне те хули йађĕпе Пулкар патшалăхĕ

[1]) Шпилевский С. М. Древние города и другие булгарско-татарские памятники в Казанской губернии. Казань. 1877 г. Стр. 24.

[2]) Олофа Далина История Шведского государства. Спб. Часть 1-ая, кн. 1, стр. 45.

Авалхи крексенĕн историксем Тан шывĕ тесе Сыр-Тарйа йатлă шыва каланă. (В. В Григорьев „Поход Александра Великого в Западный Туркестан". (Пăх): Журнал Мин. Народн. Просвещения, 1881 г., Сентябрь). Сыр-Тарйана авал тĕрлĕ каланă: римсемпе крексем—Окс тенĕ, авалхи пактăрсем—Лаксат тенĕ, ытти çкифсем Çилис тенĕ. Çак Çилисе Искентер çарĕсем Тан шывĕ тенĕ пĕлмесĕр. (Кун çинђен авалхи çыруçăсемех лайăх ăнлантарса хăварнă. (Пăх: В. В. Латышев. Известия древних писателей греческих и латинских о Скифии и Кавказе. Записки Классич. Отд. Имп. Русск. Археолог. Общества Т. I, 1902 г. Т. II, в. I, 1904 г. и в. II, 1906 г.).

тенĕ пулаť [1]). Ку авалхи сăмах йумах йышши сăмах çех. Анђах пур йумахра та мĕне те пулсан пĕлтерекен тĕшши пулаť. Ку йумахăн та хăйĕн тĕшши пур. Вăл виçĕ йапалана пĕлтерсе тăраť: Пулкăр хули тахçан авалах пулнине, унтан çак хула пур ђăваш ăрăвĕсене те пĕрлештерсе тăра пуçланине, йулашкинђен тата пур ђăваш ăрăвĕсене те йут халăхсем çак хула йађĕпе пулкарсем теме пуçланине.

Анђах ку пысăк ĕç пуçланнă пуçланманах, тĕрлĕ ђăваш ăрăвĕсен пĕрпĕринђен уйăрăлса саланса каймалла пулнă. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен, вĕсем анђах пĕрлешсе ђăмăртанма пуçланă ђухне, вĕсенĕн çине Аçи çĕрĕнђен тĕрлĕ халăхсем килсе кĕнĕ те, анатри ђăваш йăхĕсене Атăл леш йенне хăваласа йанă. Çапла мĕн пур ђăваш йăхĕсем икĕ пайа уйăрăлнă: турисем Атăлпа Урал хушшинех тăрса йулнă, анатрисем Атăл леш йенне каçса кайнă. Çак вăхăтран пуçласа, вара вĕсенĕн историйĕсем те тĕрлĕ çулсемпе кайнă.

---

[1]) Эрдман. История Булгаров (Сын Отечества, 1821 г., № 7, стр. 17).

Страленпĕрк (Страленберг) Пăлкара «Пулкап» (Булган) йатлă пулнă тет. Анђах вăл калани тĕрĕс мар, мĕншĕн тесен, авалхи çыруçăсен кĕнекисенђе те, палăксемпе укçасем çинђе те ун пек çырман, «Пулкар» (Булгар) тесе çырнă. (Миллер. Описание живущих в Казанской губернии языческих народов. Спб. 1791 г. Стр. 4—5. Пăх тата: О народах издревле в России обитавших. С немецкого на российский язык переведено Ивановом Долинским. Вторым тиснением. Спб. 1788 г. Стр. 46).

## VI.

### Анатри ҫӑвашсенӗн пурӑнӑҫӗ.

1. Анатри ҫӑвашсем уйӑрӑлса кайни.
2. Анатри ҫӑвашсем вакӑн-вакӑн саланса кайни.
3. Тунай таврашне вырӑнаҫнӑ ҫӑвашсенӗн пурӑнӑҫӗ.

# VI. Анатри ђăвашсенĕн пурăнăçĕ.

## 1. Анатри ђăвашсем уйăрăлса кайни.

Аçире пурăнакан хун йăхĕсем пĕрмайах киттайсемпе вăрçса пурăннă. Кусем аптăранипе хыçал йенпе çурçĕр йенђен патшалăхĕ ђикки тăршшĕпех ђул карта çавăрнă. Унăн çўллĕшĕ 3 ђалăш çурă, тăршшĕ темиçе пин çухрăм пулнă. Вăл Суђђа хули патĕнђен пуçланса кайаť те, тусем, варсем çырмасем, шывсем урлă тăсăлса, Аслă Оккеан хĕррине тухаť. Анђах çак темĕн пысăкăшĕ ђул карта та хунсене тытса ђарайман[1]). Вĕсем пĕрмайах Киттайа пыра пыра çаратнă. Вара киттайсем хунсене çулсерен парнесем, куланайсем парса тăра пуçланă.

Пĕр 2 пин те 60—70 çул ĕлĕкрех тин киттайсем çав хăйсене тарăхтарса пурăнакан хунсене хăваласа йарас шухăш тытнă. Вĕсенĕн пĕр çар пуçлăхĕ ђăнах та темĕн пысăккăшĕ çар пухнă та, хунсене пĕр 2000 çухрăм айаккалла хăваласа йанă. Çавăн ђухне киттайсем хытă хĕстернипе вара тĕрлĕ хун йăхĕсем Аçирен Атăл йеннелле тапса киле пуçланă.[2]) Ђылай вăхăт иртсен, вĕсем хĕстерсе килнĕ пирки, кусар йăхĕ Урал урлă каçнă та, çеçен хирсенђе пурăнакан анатри ђăвашсем çине килсе кĕнĕ. Кусем вара ђăтаймасăр Атăл урлă каçса Хура тинĕс йеннелле кайнă.

Кусарсем вара вĕсенĕн вырăнне йышăннă. Хăйсенĕн тĕп çĕрне пăрахса, кайсан кайран анатри ђăвашсенĕн пурăнăçĕ ђылайђђен пĕрре те ăнман.

Атăл урлă каçса кайсан, вĕсенĕн хушшинђе темшĕн тав тухнă та, килĕшў пĕтнĕ, вара пысăк çапăçусем те пулнă пулмалла. Çавăн ђухне хăш-хăш ăрусем ыттисенђен уйăрăлса Капкас тăвĕсенĕн леш йенне çитех пăрахса кайнă.

Ун çинђен ерменсенĕн пĕр историкĕ ак çапла калаť; В дни его, Аршака, царствования возникли большие смуты

[1]) Истомин. Китай и китайцы в их прошлом и настоящем. Казань 1901 г. Стр. 15.

[2]) Моисей Хоренский. История Армении, в переводе Н. Эмина. Москва 1858 г. Стр. 97.

в цепи великой горы Кавказской в земле булгаров, из которых многие, отделившись, пришли в нашу землю и поселились в низовьях Кох'а в плодоносных и хлебородных местах"[1]) тет. Ђăвашла калас пулсан, вăл: Аршак патшăра ларнă ђухне, аслă Капкас тăвĕ ђăсĕмĕнђе, пăлкарсенĕн çĕрĕнђе, пысăк пăлхавсем тухса кайнă. Вĕсенђен нумайĕшĕ вăра уйăрăлнă та, пирĕн çĕре килсе, тырă-пулă пулакан, çимĕç лайăх кўрекен Кох айлăмне вырăнаçнă, тени пулаť. Аршак вăл Капкас леш йенђе пурăнакан Ерменсенĕн патши пулнă. Вăл патшара ларни Х. Ç. 127—114 çул малтан пулнă. Çапла ĕнтĕ ку ĕç, халђхи вăхăтран шутласан, пĕр 2 пин те 30—40 çул ĕлĕк пулнă пулаť.

## 2. Анатри ђăвашсем вакăн-вакăн саланса кайни

Анатри ђăвашсем ыттисенђен уйăрăлса кайсан, кайран Хура тинĕс çывăхĕнђе, Манăђпа Купаң шывсем хушшинђе, пурăна пуçланă. Кунта çĕршыв пит аван пулнă. Анђах вĕсене унта та тĕпленсе пурăнма май килмен, мĕншĕн тесен, тепĕр çĕр çултан киттайсем хунсене каллех çĕмĕрме тытăннă.

Вĕсенĕн çар пуçлăхĕ Пан-Ђао тарăхнипе сăтăрçă хунсене тĕппипех пĕтерме шухăшласа хунă. Вăл вара темĕн ђухлĕ çар пухнă та, тĕрлĕ йенђен кайса, хунсене тимĕр карта пек çавăрса илнĕ. Анђах хунсем, Алттай патĕнђе çав тимĕр картана аркатса тăкса, хĕвел анăçнелле тарнă [2]). Пан-Ђао вĕсене хăваласа Каçпи тинĕсĕ патне кăштах çитеймен [3]). Вара хунсем хĕстерсе пынипе ытти халăхсем, йăхсем ирĕксĕрех каллех пĕрпĕрин çине кĕре-кĕре кайнă. Кунта темĕн ђухлĕ çапăçу та пулнă пулĕ те, анђах ун çинђен çырни нимĕн те çук, пĕр йумахсенђе каланисем çеç йулнă пулмалла. Йепле пулсан та, çакăн ђухне пăтранса кайнă халăх хумĕсем, ђылай вăхăт иртсен, кусарсене те пырса çапăнна пулмалла, мĕншĕн тесен, Ермен историкĕ каланă тăрăх, вĕсем те II-мĕш ĕмĕр вĕсĕнђе (198-мĕш çулта) Кур шывĕ урлă каçса, Ермен çĕрне çĕмĕрсе кĕнĕ те, ерменсемпе хытă вăрçнă, анђах лешсем вĕсене

[1]) Моисей Хоринский. История армении, в переводе Н. Емина. Москва 1858 г. Стр. 87.

[2]) Князьков С. Очерки из истории до—Петровской Руси. Петроград. Стр. 198.

[3]) Гурко-Кряжин В. А. Великие пути в мировой истории. Москва. 1925 г. Стр 16—17

кайалла хăваласа йанă[1]). Кунтан ĕнтĕ курăнса тăрат: хусарсем ун ђухне Атăлăн каçал йенђе Капкас тăвĕсенђен çурçĕрелле пурăннă. Ђăнах та ун çинђен Перс историкĕсем те çаплах çыраççĕ. Апла пулсан, Атăлпа Урал хушшинђи çĕçен хирсене хунсем вĕсенђен туртса илнĕ пулат.

IV-мĕш ĕмĕрте хунсем Атăл урлă каçнă та, хыçал йенелле кайнă. Вĕсем çул çинђе тĕл пулакан халăхсене пурне те парăнтарнă. Хусарсем малтан хунсемпе пĕр майлă пулнă; унтан крек патши илĕртнĕ хыççăн кайса, вĕсенђен уйăрăлнă. Хунсенĕн *Атăл* йатлă патши (Аттил) вĕсене вара вăйпала пăхăнтарнă. Ку ĕç 448-мĕш çулта пулнă. Атăл вилсен, тин хусарсем ирĕке тухнă, анђах вĕсенĕн ирĕкĕ нумайах пыман, мĕншĕн тесен, тепĕр 100 çул ытларахран вĕсем çине хайар халăхсем, *аварсем*, килсе кĕнĕ те, вăрçсан-вăрçсан вара вĕсене те, пулкарсене те айала тунă.

Çакăнтан кайран 100 çултан тин Хура тинĕс патĕнђи пулкар йăхĕсене пĕр Куврат йатлă пуçлăх пĕрлештерсе çитернĕ те, авар пусмăрлăхĕнђен хăтарнă. Вилес умĕн вăл ађисене пĕрле килĕштерсе пурăнма каласа хăварнă[2]). Анђах лешсем вăл пиллесе (пехиллесе) хăварнине нумайах тытса тăрайман.

Çак вăхăтра хусарсем те аварсенђен хăтăлнă та, вăйлăланнă майĕпе пулкарсене хĕсе пуçланă. Вĕсем темиçе çул (635 çултан пуçласа 679 çулђђен) кана пĕлмесĕр вăрçнă. Куврат ывăлĕсем кайран темĕншĕн пĕрпĕринпе килĕштерейми

[1]) Моисей Хоринский' стр. 134. Ку вăрçăра хусарсем малтан ермепсене çĕнтернĕ, вĕсенĕн патшине те вĕлернĕ, унтан ермен патшин ывăлĕ ашшĕне вĕлернĕшĕн тарăхса, хусарсем çине тепĕр хут кайнă та, вара вĕсене лăнђах туса хунă, кашни çĕр çынтан пĕрер çын аманата илсе кайнă. Çакăнтан кайран хусар халăхĕ имшерленсе йулнă пулмалла, çавăнпа вĕсем çинђен пĕр 100 çул хушши Ермен историкĕсем пĕрре те шарламаççĕ. 310-мĕш çулта кусарсем каллех Ермен çĕрне çĕмĕрсе кĕнĕ. Анђах ку ђухне те вĕсенĕн телей пулман: ерменсем вĕсене хунсем патне çитех хăваласа кайнă, унтан аманатсем илсе тавăрăннă. Çакăнтан кайран хусарсем çинђен пĕр 100 çул хушши нимĕн те шарламаççĕ.

[2]) Ун çинђен акă çакăн пек сăмах пур: Вилес умĕн Куврат ађисене ўкĕтлеме çакăн пек тунă тет. Вăл ывăлĕсене пидĕкĕшне те ђĕнтернĕ тет те, пĕр ывăç ђĕрĕ, пиçĕ хулă, парса: пĕрерĕн пĕрерĕн илĕр те, хуçăр! тенĕ тет. Ађисем хулăсене ђасах хуçса пăрахрĕç тет. Унтан Куварт тата тепĕр ывăç панă тет те, ывăлĕсене ывăçĕпех хуçма хушнă тет. Лешсем темĕн ђухлĕ хăтлансан та, хуçайман тет Ашшĕ кусене каланă тет: есĕр пĕрле пурăнсан, сире никам та çĕнтереймĕ, хирĕçсе пурăна пуçласан, сире çăпçăмăлах çĕнтерсе пăрахĕç, тенĕ тет. Вăл ђăнах та çапла пулнă.

пулнă та, пĕрпĕринъен уйăрăлса кайнă: асли, Ватвайĕ, хусарсене парăннă та, хăй аллинъи пулкар йăхĕсемпе Хура тинĕспе Ас тинĕсĕ хушшинъех тăрса йулнă; иккĕмĕшĕ, Котракĕ, Тан шывĕн леш йенне вырăнаçнă; виççĕмĕшĕ, Аспарухĕ, Тнепăрпа




8-мĕш ÿкерчĕк.

(Хун варĕпе) Тнестр (Тир) хушшине вырăнаçнă; тăваттăмĕшĕ хăй ушкăнĕпе Панонийе çитех кайнă[1]). Йулашкинъен пилĕкĕмĕшĕ, Алшикĕ, Иттаљи çĕрнĕ кайса Пенєвент çывăхне

[1]) Панонире ку таранъъенех нумай вырăн йаъĕсемпе çĕршыв йаъĕсем ъăвашла майлă, йе лап ъăвашлах.

вырӑнаҫнӑ. Ҫапла саланса пӗтнӗ анатри пулкар йӑхӗсем[1].

Хура тинӗспе Ас тинӗсӗ хушшинҕи пулкарсене вырӑссем «хура пӑлкарсем» тенӗ[2]), арапсем тата «шалти пӑлкарсем» тенӗ[3]).

Аспарухпа пӗрле кайнӑ пӑлкарсем—ҕӑвашсем VII-мӗш ӗмӗрте Тунай шывӗн леш иӗнне каҫнӑ та, пысӑк вӑйлӑ патшӑлӑх тунӑ. Ӑна арапсем «Аслӑ Пулкари» тенӗ[4]).

Ыттисем вӗсем нумайах пурӑнайман, пӗтнӗ: вӗсем ытти халӑхсемпе хутӑшса кайнӑ та, йаҕӗ те йулман.

Ҫапла анатри ҕӑваш йӑхӗсенҕен пӗр Тунай таврашне вырӑнаҫнисем ҫеҫ хӑйсенӗн патшӑлӑхӗпе пурӑннӑ.

## 3. Тунай таврашне вырӑнаҫнӑ пӑлкарсенӗн пурӑнӑҫӗ.

Тунай шывӗ—вӑл Атӑл пекех пысӑк шыв, унтан кӑшт анҕах кӗскерех. Вӑл Кай-йенҕи Йевроп варринҕен йухма пуҫлат те, темиҫе тӗрлӗ халӑх хушшипе тӑсӑлса пырса, Хура тинӗсе ҫитсе кӗрет. Вӑл мӗн ӗмӗртенпех аслӑ ҫул шутӗнҕе тӑнӑ, мӗншӗн тесен, ун тӑрӑх тӑвалла кайсан, шывпала Йевроппӑн кай-йенҕи хӗррине ҫитех ҫӳреме пулат, анаталла ансан, Хура тинӗс урлӑ кайса, мал-йенҕе пурӑнакан халӑхсем патне ҫитсе ӳкме пулат. Ҕӑнах та Тунай шывӗ тӑрӑх мӗн авалтанпах таварпа пурлӑх ҫӳренӗ. Ҕӑн вӑл Атӑл пекех мул куҫса ҫӳрекен мӑн ҫул пулнӑ.

Аспарух йертсе кайнӑ пӑлкарсем Тунай патне ҫитсессӗн, ҕӑн малтан, вӑхӑтлӑха, ҫав шывӑн вӑрринҕи пӗр утти ҫине вырӑнаҫнӑ. Кунта улах вырӑн пулнӑ: нимӗнле тӑшман та, шыв урлӑ каҫса, сасартӑк пырса ҫӗмӗрме пултарайман. Анҕах крексем вӗсем пырса вырӑнаҫнине пӗртте йуратман, мӗншӗн тесен, Тунай вӑл крек ҫӗрӗн ҕикки пулнӑ, тата пӑлкарсем апла вырӑнаҫса крексенӗн таварӗсем ҫӳрекен ҫула лап питӗрсе хума пултарнӑ. Ҫавӑнпа крексем пӑлкарсем ҫине вӑрҫӑпа тухнӑ. Анҕах лешсем кусенӗн ҫарне йӑлтах ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та, крек ҫӗрне шалалла витӗрех кайнӑ. Вара крек патшин ирӗксӗрех вӗсемпе килӗшмелле пулнӑ. Крексенӗн пӗр историкӗ

---

[1]) Русский Исторический Сборник. Москва. 1843 г. Т. VI, стр. 58—59

[2]) Журнал Министерства Народного Просвещения, 1908 г. № 2, отд. 1, стр. 387.

[3]) Русский Историч. Сборн., т. VI, стр. 63.

[4]) Журн. Мин. Нар. Просв. 1908 г. №3, отд. 2, стр. 45-46.

(Кедрин) калат «император убо с ними завещание учинил, мира желая, чем вещи христианские в стыдение пришли»[1])—ёмпӳ килёшесшён пулса, вёсемпе (пăлкарсемпе) сăмах татнă, вара христиансенён ĕçĕсем мăшкăла тухнă, тет. Тепĕр историкĕ (Феофан) каланă тăрăх, «принужден император с ними мир сотворить, и на срамоту римской империи дань ежегодно давати»[2])—ёмпӳн вĕсемпеле ирĕксĕрех килĕшмелле пулнă, Рим патшалăхне намăс пулин те, çулленех пăлкарсене кулайнай тӳлесе тăмалла пулнă. Çапла Тунай çине куçса пынă ђăвашсем тем пысăккĕшĕ пăтшалăх тунă: унăн çурçĕр йенђи ђикки аварсемпе йунашар пулнă, кăнтăр йенђи Варнăпа Пирот патне çитнĕ, хĕвел анăç йенђе хорватсемпе йунашар пулнă, хĕвелтухăçĕнђе Хура тинĕс хĕрри пулнă[3]).

Çав тери аслă çĕр çинђе 7 тĕслĕ славă халăхĕ пурăннă. Вĕсем унта пăлкарсенђен нумай малтан пырса вырăнаçнă. Вĕсем йышлă пулнă, пурте çĕр ĕçлесе пурăннă, анђах патшалăх пулман. Çавăнпа вĕсенĕн хушшинђе хирĕçӳпе тавлашу тăнă: ăрупа ăру, нĕсĕлпе нĕсĕл килĕшеймесĕр йаланах вăрçса пурăннă. Крексем вĕсенђен тем тĕрлĕ пысăк куланайсем сăтăра сăтăра илнĕ, хырçăсем пуçтарнă, вĕсене калама çук йăвăр пусмăрта тытса тăнă. Пăлкарсем пырса кĕрсен, славăсем вĕсене ирĕккĕн парăннă. Çапла вара пĕђĕк халăх пысăк халăха тытса тăра пуçланă.

Пăлкарсем вырăнаçнă çĕр-шыв пуйанни те пуйан пулнă та, тата унта суту-илӳ ĕçĕ калама çук вăйлă тăнă, мĕншĕн тесен, Тунай шывĕпе Хура тинĕс тăрăх унта пур йенђен те темĕн тĕрлĕ тавар та пынă [4]). Çавăнпа вăл таврари вăйлăрах халăхсем пурте унталла туртăннă. Çавăнпах крексем те вăл çĕре пăлкарсенђен туртса илсе, хăйсенĕн аллине каллех кӳртесшĕн пулнă. Крексенĕн патшалăхĕ ун ђухне вăйлă, пысăк патшалăх пулнă, пăлкарсем ытла йышлăнах пулман. Çакна кура, крексенĕн патшисем кусене, йепле те пулсан, çĕнтерсе, хăйсене пăхăнтарасшĕн пулнă. Анђах вăй питти çамрăк пăлхар халăхĕ, пĕђĕк пулсан та, крексене парăнма мар, вĕсене хăйсене çĕнтерсе, вĕсенĕн ђăплă пуç-хулине,

[1]) Ранч, История разных славянских народов. Стр. 224.

[2]) Çавăнтах.

[3]) Арсений арх. Летопись церковных событий и гражданских, поясняющих церковные. Спб. 1880 г. Стр. 266.

[4]) Соловьев С. М. Русская история с древнейших времен. 3-е изд. Т-ва «Общественная польза». Спб. Т. I, стр. 144.

Константтинопполе, мĕн ĕмĕртенпе пуçтарăннă мулĕ мĕнĕпе туртса илесшĕн пулнă. Çавăнпа крексемпе пăлкарсем хушшинҫе килĕшӳ нимĕнпе те нумайа пыма пултарайман.

Ҫăнах та 687-мĕш çулта çĕнĕ крек патши пăлкарсене куланай пама пăрахнă, вĕсем çине çарпа кайнă, анҫах, хай Кетрин каланă тăрăх, „при возвращении же, от болгар в тесных местах окружен, много своих воев погубил, и сам едва спасеся“— кайалла тавăраннă ҫух, ăна пăлкарсем тусем хушшинҫе хупăрласа илнĕ те, унăн çарĕсене нумай пĕтернĕ, вăл хăй те аран аран тарса хăтăлнă [2]). Пăлкарсенĕн хунĕ ун ҫухне Паттай (Паттей) пулнă. 705-мĕш çулта крексем хăйсенĕн патшине хăваласа йанă. Ку хăйне пулăшма пăлкарсене ҫĕннĕ. Лешсем вара çар пухнă та, крексене çĕмĕрсе кайса, вĕсенĕн ҫаплă пуç-хулине Стампула (Константтинопполе) туртса илнĕ, хăваласа йанă крек патшине вырăна кӳртнĕ. Ку уншăн пăлкарсене славăсем пурăнакан Сакори (Загория) йатлă çĕре панă. Çапла пăлкарсенĕн патшалăхĕ вăйланса аслăланса пынă. Çакна крексем нумайах ҫăтма пултарайман. 2 çултан вĕсем пăлкарсем çине çарпа пырса кĕнĕ. Анҫах вĕсенĕн телей пулман: лешсем вĕсене йăлтах çĕмĕрсе тăкнă [2]). Çак вăхăтран пуçласа, вара пăлкарсем йаланах крексенĕн патшалăхĕнҫи ĕçсене йерме тытăнаççĕ. Çапла 711-мĕш çулта вĕсем каллех вырăнтан кăларса пăрахнă крек патши хутне кĕрсе, çарпала кайса, каллех крексенĕн пуç хули патне çитнĕ. Феофан каланă тăрăх, «таже всю Фракию пленили, и оттуда неисчислимое множество рабов и скотов398 вземше, невредимы в домы своя отыдоша“—вара пĕтĕм Фракки çĕрне тыткăна илнĕ, унтан темĕн ҫухлĕ ҫурасем, темĕн ҫухлĕ выҫăх-ҫĕрлĕхсем, илсе ҫипҫиперех килне тавăраннă. 716-мĕш çулта тин пăлкарсемпе крексем килĕшсе токăвăр тунă. Вăл токăвр тăрăх крексем пăлкарсене çулсерен куланай тӳлесе тăмалла пулнă. Çапла пăлкарсем пĕр 40 çул хушши крексемпе вăрçмасăр пурăннă.

Çакăнтан кайран крексем Пăлкари ҫикки тăрăх креппĕçсем ларта пуçланă. Пăлкарсем вара крексем çине, токăвăра пăсатăр тесе, вăрçăпа кайнă. Ун çинҫен крексенĕн историкĕ ак çапла калаť: „Нападение учинили, даже до долгих стен

[1]) Ранч. История разных славянских народов, стр. 225.

[2]) Çавăнтах. Тата: А. Л. Погодин. История Болгарии. С.—Петербург. 1910 г. Стр. 3.

пленивше с великою добычею невредимы до дому возвратилися"—пырса кĕнĕ те, вăрăм хӳме патнех çитнĕ, вара темĕн ђухлĕ халăх тыткăна илсе, пĕр пăтăрмахсăр килне тавăраннă.

Тепĕр виçĕ çултан крексем çарпалла пăлкарсем çине кайнă та, вĕсене хытă çĕмĕрнĕ. Пăлкарсем вара вĕсемпеле килĕшнĕ, вĕсем хăйсенĕн ађисене аманата парса йанă. Тепĕр çулне крексем каллех пăлкарсене хирĕç вăрçă тапратнă. Анђах лешсем 759 мĕш çулта вĕсене пĕр хушăка (Клуссура) хăваласа кӳртнĕ те, йăлтах пĕтернĕ, пăлкарсем аллине вара пĕтĕм çар хатĕрĕ те, ĕмпӳ йапалисем те ленкнĕ.

Çак вăхăтран пуçласа, пăлкарсенĕн патшалăхĕнђе славăсем çийеле туха пуçлаççĕ. Пăлкарсенĕн хунĕсем вĕсенђен нумайĕшне пысăк вырăнсем пара пуçланă. Унђђен пур аслă вырăнта пăлкарсенĕн ђаплă ăрăвĕсенĕн пуçлăхĕсем ларнă. Вĕсем хунсене ирĕк паман, хунсем кусенђен йепле те пулсан ирĕке тухма тăрăшнă. Çавăнпа вĕсем славăсем йенне сулăна пуçланă.

Çак вăхăтран пуçласа, Тунай çинђи пăлкарсенĕн историнђе тата Христос тĕнĕ пысăк вырăн йышăнса тăра пуçлаť. Пăлкарсем палккана пырса кĕнĕ ђухнех, славăсем хушшинђе Христос тĕнне тытса тăракансем нумай пулнă. Вĕсене уйрăм аркхийепископ тытса тăнă. Çак тĕнпе пурăнакансем пурте крексем майлăрах пулнă [1]), мĕншĕн тесен, крексенĕн миççионерĕсемпе пуп-таврашĕсем вĕсене çапла пулма вĕрентнĕ. Вĕсем: „Не возможно христианам иметь церковь, а царя не иметь"—Христос тĕнĕпе пурăнакансенĕн ђиркĕвĕ пулсан, патши те пулас пулаť, тенĕ. Тата: çĕр çинђе ђиркӳ пĕрре, патша та пĕрре анђах пулмалла, вăл—крек патши, вăл—турă ывăлĕ (сын божий), тасаскер (святой), ырăскер („божественный"—divus), пур христиансене тытса тăраканскер („владыка всех христиан") пĕтĕм тĕнђе пуçлăхĕ („начальник вселенной"), тенĕ[2]). Çапла, ђиркӳпе крек патши пĕрлешсе, пĕр майлă пулса, пĕтĕм çĕр çинђи халăха хăйсене пăхăнтарасшăн пулнă. Çавăнпа вĕсенĕн миççионерĕсем пăлкарсене те хăйсенĕн тĕнне тыттарасшăн хытă тăрăшнă.

Ку ĕçе вĕсем ытлашши вăрăмах йаман пулас пулаť, мĕншĕн тесен, пăлкарсем хушшинђе Христос тĕнне тытакан-

[1]) Соколов М. Из древней истории болгар. Спб. 1879 г. стр. 113—116 121

[2]) Скабаланович. Виз. госуд. цер. в XI в. Тата: Дьяконов. Власть моск. госуд., стр. 10—16

сем ку вăхăтра ђылай пулнă. Çапла пăлкар халăхĕ хушшинђе крек вăйĕ çийеле тухса пынă, пăлкарсем иккĕленсе кайнă: пĕрисем авалхи йĕркепех пурăнасшăн пулнă, теприсем—çĕнĕ йĕркепе, лешсем крексене йуратман, кусем крексемпе славă майлă пулнă. Çапла лешсене натси партти тесен, кусене крекле славăлла партти теме пулаť. Вĕсем пĕрпĕринпе кăшт та килĕштермен.

762-мĕш çулта пăлкарсем хăйсен патшине кăларса пăрахса, крексене йуратман Телевçийе суйласа лартнă. Вара славăсем 268.000 çын, çĕнĕ патшана пăхăнмĕш пулса, крексем патне куçса кайнă[1]). Телевçи крексене хирĕç 20,000-лĕ çарпа кайнă, анђах 763-мĕш çулта крексем пăлкарсене пит хыта çĕмĕрнĕ, тыткăна илнисене те йăлтах вĕлернĕ. Вара крексем майлă пыракан пăлкарсем Телевçийе те, унăн умĕнђе тăракан улпуђĕсене те пĕтĕмпех пĕтернĕ. Телевçи вырăнне Курмиш кĕрӳшне Савине (Сапине) кӳртнĕ. Анђах ку крексемпе килĕшесшĕн пулсанах, крексене хирĕç пыракан пăлкарсем пуçтарăннă та: „Болгария ради тебя римской власти покорена будет"[2])—сана пула Пăлкари çĕрĕ Рим патшине парăнмалла пулаť, тенĕ. Савин вара хăраса, пĕтĕм çемйипе крек патши патне тарнă.

Пăлкарсем Пакана патша туса хунă, анђах крексем пăлкарсенĕн çарĕсене вутлă хатĕрсемпе çунтарса йарсан, тарăхнипе вĕсем ăна та хăваласа йанă, вара Телерике суйланă. Ку çу уйăхĕнђе, 773-мĕш çулта, крексемпе килĕшнĕ. Анђах крек патши майлă пулнă пăлкарсем крек патшине: Телерик славăсене пăхăнтарма кайасшăн, тесе систернĕ те, лешĕ вара 80.000 çарпала Пăлкари çĕрне пырса, темĕн ђухлĕ халăха пĕтернĕ.

Телерик хăйĕн çыннисемех хăйне сутнине сиснĕ те, крек патши патне: ку шанђăксăр халăха тытса тăриђђен, сана парăнас тетĕп, ĕнтĕ ун çинђен санăн кунти шанђăклă çыннусемпеле пĕр хăрамасăр кампала калаçма пулĕши, тесе çырса йанă. Лешĕ, кунăн ђейелĕхне сĭсеймесĕр, хăй майлă пулнă пăлкарсен йађĕсене йăлтах каласа панă. Телерик вара вĕсене пурне те вĕлерттернĕ. Анђах кайрантарахран ђăтаймасăр вăл та крек патши патне пăрахса тарнă.

Пăлкарсем вара Картама патша туса хунă. Ку крексемпе хытă вăрçнă, вĕсене йĕркесĕр çĕмĕрнĕ, ĕлĕкхи пек куланай

[1]) Соколов, стр. 80—81.

[2]) Ранч, стр. 231.

тӳллеттересшĕн пулнă. Анђах крексенĕн патши кун патне, „завив во убрусец конский гной, посылает ему вместо дани“ —ут пăхне тутăр ăшне ђĕркесе хунă та, куланай вырăнне мăшкăласа парса йанă [1]).

Картам хыççăн пулнă Крум та крексемпе хытă вăрçнă. Малтан ăна крексем хытă çĕмĕрнĕ, унтан 811-мĕш çулта вăл крек çарне йĕри тавра хупăрласа илнĕ те, йăлтах пĕтернĕ, крексенĕн патшин пуçĕ купђашкине кĕмĕллесе курка тутарнă, вара вăл куркапа хăй çыннисене ĕçтернĕ. Крум крексене унтан кайран те темиçе хут çĕнтернĕ. Анђах пăлкарсем ăна темшĕн кантăрапа пăвса вĕлернĕ теççĕ.

Вăхăт иртсе пынă. Крек миççионерĕсем ахаљ ларман, вĕсем хытă ĕçленĕ. Пăлкарсенђен нумайĕшĕ Христос тĕнне кĕрсе пĕтнĕ, палкарсенĕн хунĕсен ывăлĕсем-хĕрĕсем те кĕре пуçланă. Крекле партти вăйланса çитнĕ, славăсем те çийеле тухнă çемĕн çийеле тухса пынă. Анђах натси парттийĕ влаçе хăй аллинђен ĕçертесшĕн пулман, мĕншĕн тесен, вĕсем, авалхи ђăваш йăлисене пăрахса, авалхи тĕне улăштарнине халăха сутни ырăмар ĕç, ăна тусан, патшалăх пĕтет, халăх крексен аллине кĕрсе ӳкет, тесе шухăшланă. Çавăнпа Мăртахун патшана ларсан, Христос тĕнне кĕрекенсене пит хыта хĕстере пуçланă, нумайĕшне вĕлерттернĕ, анђах апла тусан та, усси пулайман.

Христос тĕнне тытакансем нумайланнă çемĕн нумайланса пынă. Унăн йенне сулăннисем темĕн ђухлех пулнă. Пăлкарсем вăл вăхăталла пурте тенĕпе пĕрех слава тухса кайнă. Таса пăлкар сахал йулнă. Христиансене хирĕç кайсан, вĕсем, йышлăскерсем, револђутси тума та пултарнă. Пăхăр хун çаксене пурне те лайăх пĕлнĕ. Унтан тата хĕвел анăçĕ йенђи тăшманĕсем те ăна хăратса тăнă. Çавăнпа вăл крексемпе килĕшсе туслашасшăн пулнă. Пуринђен ытла вăл аслă улпуђĕсем, пӳлерĕсем, хăйне ирĕк паманнине йуратман, вĕсем пурте тĕне кĕмен пăлкарсем пулнă. Пăхăр вĕсенђен хăтăласшăн пулнă. Йулашкинђен тата куна та манмалла мар; тĕне кĕнĕ çынсене Христос тĕнĕ патшана пăхăнса пурăнма вĕрентнине Пăхăр лайăх пĕлсе тăнă.

Çавăнпа вăл 864-мĕш çулта тĕне кĕнĕ те, пурне те ђасрах Христос тĕнне тыттарасшăн пулнă. Анђах пăлкарсем ăна хирĕç тăнă. Пăхăр вĕсене, сахалăн пулнăскерсене, ђасах

[1]) Ранч, стр. 234.

çĕмĕрсе тăкнă, вара халăха йертсе пыракан паллă улпут ăрусене 52 ăрăва пађах пĕтерсе хунă[1]).

Пăхăр çакăнтан кайран авалхи ђăваш йăлисене пĕтерме тытăннă. Вăл Римри паппă патне, хăш йăласем лайăх, хăшĕсене пĕтермелле тесе, йури çыру йанă. Çапла вăл вилнĕ тĕлнелле Пăлкар патшалăхĕнђе Христос тĕнĕ пĕтĕмпех çирĕпленсе çитнĕ.

Тепри калĕ: пăлкарсем Христос тĕнне кĕрсен, крексемпе вĕсенĕн хушшинђе вăрçă пĕтесле пек темелле, мĕншĕн тесен, лешсем те, кусем те пĕр тĕне тытса тăракан халăхсем пулнă, тата Христос иаларĕшле вĕсем пĕрпĕрне „тăвансем“ темелле пулнă, тийĕ. Анђах вăл апла пулман, пулма та пултарайман, мĕншĕн тесен, крек патшисем ытарма çук пуйан Пăлкари çĕршывне туртса илес шухăша пăрахман, пăлкарĕсем вĕсене пĕрре те парăнасшăн пулман. Ку сахалха: пăлкарсем хăйсем те крексенĕн ђаплă пуйан хулине Константтинопполе йарса илесшĕн пулнă. Çапла лешсен те, кусен те пĕр шухăш пулнă—суту-илӳ çулĕсене йарса илес шухăш. Çавăнпа вĕсенĕн хушшинђе йалан хирĕçӳпе тавлашу тăнă. Çав хирĕçӳпе тавлашу пăлкарсемпе крексем пĕр тĕне кĕнипе пĕтме пултарайман, мĕншĕн тесен, економĕк инттересĕ вăл кирек хăçан та етемĕн пур тĕрлĕ инттересĕсенђен те хăватлăрах.

913-мĕш çулта пăлкарсем крексене йĕркесĕр хытă çĕмĕрнĕ. Крексем аптăраса çитсен, пăлкар патши патне: аще убо христианни еси, сотвори уже конец сечи и излияния невинныя крови, и мир со христианы христианин сый соделай“ [2])—есĕ, ђăн ђăнах Христос çынни пулсан, вăрçма пăрах, таса йуна текех ан йухтар, Христос çыннисемпе (крексемпе) килĕшӳ ту, тенĕ. Лешĕ вара 928-мĕш çулта ђăнах та крексенђен пысăк парне илнĕ те, вĕсемпе килĕшнĕ.

Çакăнтан Кайран Пăлкар патшалăхĕнђе урăм-сурăм саманасем тапранса кайнă та, вăл йăлтах вăйсăрланса çитнĕ.

1) Ку хайар ĕç пирки Пăхăрăн ђĕри лăпланма пĕлмен пулмалла. Çавăнпа вăл Римри паппăран ыйтат: „Согрешили-ли мы, предав главных мятежников, восставших у нас против христианства, смерти вместе с их детьми?“ Христос тĕнне хирĕç тăрса пăлхав тăвакансене, ђи аслисене, ађи пăђипе вĕлерттернĕшĕн пире çыл хи, çылăх мари? тет. Лешĕ: „Вы согрешили особливо убиением невинных детей, и вообще поступили слишком жестоко! но как это было сделано из ревности и по неведению, то, если покаетесь, получите прощение.—Айăпсăр ађасене вĕлернĕшĕн сире çылăх, есĕр ытла та хайар хăтланнă, анђах есĕр ăна (Христос тĕншĕн тăрăшса пĕлмесĕр тунă, çавăнпа ӳкĕнсен сире каçару пулат. тет. Гильфердинг. Сочинения, т. I, стр 65—66.

2) Савăнтах, стр. 254.

Çав хушăрах вырăссем пит вăйлăлана пуçланă. Вара вырăссемпе крексем пăлкарсене икĕ йенђен çĕмĕрме тытăннă. Вырăс патши Çветтослав, сатурскер, 967-мĕш çулта çарпа пынă та, Пăлкари çĕрне пĕр саманра пĕтĕмпе тенĕпе пĕрех тыгкăна илнĕ. Ку ĕçре ăна крексене хирĕç пыракан натси парттийĕ хытă пулăшнă: вĕсем крек патши аллине кĕрсе ўкесрен хăраса, вырăссем майлă пулса кайнă [1]). Йулашкинђен çапах та лешĕ вырăссене çĕнтернĕ те, пăлкарсене парăнтарнă, вĕсенĕн корођне тыткăна илсе кайнă, унăң шăлнĕне, ађапăђа ан пултăр тесе, кастарнă, ытти тăванĕсене пурне те вĕлерттернĕ [2]). Çапла хăтланнă „турă ывăлĕ“ текен крек патши.

Унтан кайран та пăлкарсем крексемпе нумай вăрçнă. Крексем вĕсене пăртак та канăç паман, пĕрмай вăрçăпа пырапыра аптăратса çитернĕ, йулашкинђен вара пăлкарсене пăхăнтарнă пăхăнтарнах. Пăлкарсем, йут халăха пăхăнса тăрасшăн пулмасăр, крексене хирĕç тăрса, темĕн ђухлĕ те вăрçнă, анђах вĕсенĕн хушшинђе пĕрлешўпе килĕшў пулман пирки, вĕсем йалан айала пулса пынă. Çак вăрçăсенђе халăх пит нумай пĕтнĕ, халăхăн пурлăхĕ те хытă йухăннă. Çитменнине тата крексем тĕрлĕ хырçăсемпе контрипутсисем пусătара-пуçтара, пăлкарсене йăлтах аптăратса çитернĕ: халăх вăйсăрланса нађара тухнă.

Ку сахал-ха. Христос тĕнне кĕрсен, вăл тĕн авалхи ђăвашла пăлкар йăлисене, йĕркисене, ђăвашла пурăнăçăн сăнсăпатне йăлтах пĕтерсе хунă. Вара вăйсăрланса, сахалланса, нађара тухнă халăха йышлă славă халăхĕн куђттурĕ витĕр çапса тухнă. Çавăнпа ђăвашла пăлкар ђĕлхине славă ђĕлхи çĕнтерсе илнĕ. Çапла натси вăй-хăваđĕ сўннĕçемĕн сўнсе пырса, Х-мĕш ĕмĕрте вара пађах сўнсе ларнă: Тунай çинђи пăлкарсем славăсемпе хутăшса кайнă, вĕсенĕн йађĕ кăна тăрса йулнă [3]), тата хăш-хăш хула йађĕсемпе вырăн йађĕсем ку таранђђенех пурăнаççĕ.

Ытти пăлкар йăхĕсен йађĕ те, тĕсĕ те йулман. Вĕсем çинђен пĕр вырăс историкĕ тўрех калаť: „Ни в Паннонии,

---

[1]) Ж. М. Н. П. 1877 г., сентябрь, стр. 65.

[2]) Рачч, стр. 261—262.

[3]) Русск. Истор. Сборн. Т. VI, стр. 63. Тата: Эргле Р. Р. О племени древних и нынешних болгар. Издание „Новгородского Общества Любителей Древности“ Новгород. 1916 г. стр. 17.

ни в окресностях Беневента... не осталось и признаков языка волжских болгар[1]) тет. Ђăвашла каласан, вăл: Паннонире те, Пеневент таврашĕнђе те... Атăл ҫинђи пăлкарсенĕн ђĕлхин тĕсĕ те йулман, тени пулаť.

Тунай ҫинђи пăлкарсем пĕтнĕ пулин те, пысăк ĕҫ туса хăварнă: вĕсем сапăнђăк пурăнакан славă йăхĕсене пĕрлештерсе ҫитернĕ те, патшалăх тунă. Ҫапла вара славăсем креклеnсе кайасран хăтăлса йулнă[2]).

Тури ђăвашсене арап историкĕсем „Тулти пăлкарсем" („внешние болгары") тенĕ. Ҫак ђăвашсем анатрисем пек пулман: тĕрлĕ халăхсем, тĕрлĕ йăхсем пыра-пыра тапăнсан та, вĕсем пĕрре йышăнса ларнă вырăнтан тапранман, мĕншĕн тесен, вĕсене сĕм вăрмансем, мăн шывсем, тата тĕреклĕ карсем лайăх хӳтĕлесе тăнă. Пурăна киле, V-мĕш ĕмĕр тĕлнелле, вĕсене Пăлкар пĕрлештерсе ҫитернĕ те, вĕсем вара тĕреклĕ, кулђтурлă ђăваш патшалăхĕ тунă. Ун ҫинђен ку кĕнекенĕн тепĕр пайĕнђе каласа парăпăр.

---

[1]) Ҫавăнтах, стр. 59—60.

[2]) Ун ҫинђен пĕри ак ҫапла калаť: „Может быть, не явись тюркская орда не было бы и об'единения, может быть, славянские племена, не имея сильной государственной власти и сплоченности, сами были бы эллинизированы, что несомненно произошло с некоторою частью славян на Балканском полуострове, особенно с теми из них, которые пробрались более всего к югу на полуострове. Конечно, рассуждение о том, что могло бы быть, это — только предположение, но факт тот, что современной болгарский народ — прямой потомок многочисленного славянского населения, жившего на Балканском полуострове в то время, когда туда вторглись тюрки Аспаруха. Правда, тюркская орда древних болгар то же является предком современного нам болгарского народа, но тюркский элемент растворился в славянском море, он оказался и малочисленнее и слабее славянского. Влияние его на болгарский язык незаметно, во всяком случае гораздо менее влияния тюрок — османов, под владычеством которых болгарам пришлось влачить жалкое существование много веков". (Р. Р. Эрглс. О племени древних и нынешних болгар. Издание „Новогородского Общества любителей Древности". Новгород. 19:6, стр. 47.)

# КРАТКИЕ ОЧЕРКИ ИЗ ЧУВАШСКОЙ ИСТОРИИ

Ч. I-ая.

## Следы древнейшей истории.

## I. Понятие о чувашской истории.

1. Что такое история. 2. Исторические факторы. 3. Значение изучения истории. 4. Памятники языковые. 5. Памятники вещественные. 6. Памятники письменные (документы). 7. Необходимость скорейшего учета и сбора памятников чувашской истории. 8. Труды по чувашской истории. 9. Части чувашской истории.

---

## II. От кого произошли чуваши.

**1. Существующие по этому вопросу теории.** Тюркская, высказанная в первые Витзеном и Стреленбергом, и финская, получившая широкое распространение от Шлецера, в последствии отказавшегося от нее. Взгляды Френа, Карамзина и Радлова, видевших в чувашах отюрчившихся финнов, и проф. Н. И. Ашмарина, сначала разделявшего эти взгляды, затем отказавшегося от них и об'явившего чуваш офинившимися тюрками.

**2. Как возможно разрешить вопрос о происхождении чуваш.** Данные языка, как великого жизненного фактора в решении этого вопроса имеют решительное значение. Язык чуваш ни в какой степени не может быть причислен к группе финских, но он не может быть поставлен и в ряд тюркских наречий, так как имеет существенные отличия от них, оставаясь в единственном числе Р—Л языком в то время, когда все тюркские оказываются З—Ш языками. Он имеет совершенно особое место среди урало-алтайских наречий.

**3. Что говорит язык чувашей по вопросу о их происхождении.** То, что они являются потомками волжских болгар. Язык последних, как и единственный чувашский язык,

был языком Р—Л, а элементы его (тăхăр, вăтăр, çĕр, хĕр, пилĕм и проч.), сохранившиеся до настоящего времени в эпитафиях надгробных памятников, оказываются по существу вполне тожественными с чувашскими. Это дает неоспоримое право видеть в чувашах потомков болгар. Это подтверждается и присутствием в чувашском языке многочисленных фактов заимствований из арабского и персидского языков, при чем оказывается, что эти заимствования были сделаны древними чувашами не из вторых рук, напр. через татар, как думали некоторые, а из непосредственного общения, как то доказывается тем, что в сравнении с татарскими чувашские арабизмы часто оказываются более чистыми (харам, хавас, хак, вăхăт и др.). Наконец, важным свидетельством в пользу чувашско-болгарской теории является неоспоримо установленные чувашизмы в языках соседствующих в настоящее время с чувашами финноугорских народностей (мордвы, мари, вотяков, пермяков и др.) и отдаленных венгров, являющиеся древне-болгарскими.

**4. Свидетельство бытовых и вещественных памятников**. Сюда относятся соответствие ныне существующих чувашских обычаев с известными древне-болгарскими (держание шапки под мышкой, как выражения почитания, бросание мелкого серебра при приеме важных гостей, угощение их за особыми столами, напр., при браках, раздача кушанья на руки, чув. „алвалли“, присяга на мечах), почитание чувашами до ныне святых, почивающих в Болгарах и Билярске, с призыванием их в молитвах и рядом преданий о гибели этих городов, как центров народно-государственной жизни их предков, ежегодно совершающиеся в летнее время у чуваш и дунайских болгар по деревням и селам ярмарки, являющиеся бытовым остатком от древних болгар, и, наконец, соответствие множества хозяйственно-бытовых предметов, доныне употребляемых чувашами в сельском быту, с таковыми же у древних волжских болгар, находимыми во время археологических раскопок, напр., принадлежности плуга, косы, разного вида огнива и проч.

**5. Свидетельство антропологии**. По данным Богданова, изучавшего болгарские черепа, население древних болгар было по преимуществу длинноголовым и широко-

скулым и в этом отношении имеет наибольшее сходство с современными чувашами, черты же отличия между ними (низкоорбитность, широконебность древних болгар) можно рассматривать как результат влияния чужеродных примесей, вливавшихся в чувашский мир в течение веков. Впрочем нерешительный характер показаний антропологии может быть об'ясняем недостаточной изученностью физического типа древних болгар и нынешних чуваш, каковую работу необходимо усилить в ближайшее же время.

**6. Свидетельства известных историков и лингвистов**. Татищев первый высказал то, что в лице чуваш мы имеем „оставшее поселянство“ древних болгар. Это принимается Савельевым, Трачевским, Богалеем, Погодиным, Смирновым Соколовым, акад. Платоновым и др. Татарский ученый Хуссейн-Фейз-Ханов первый указал на близость болгарского языка с чувашским, это подтвердили Н. И. Ильминский и академ. Куник, доказали Н. И. Ашмарин и Катанов, окончательно осветили Н. Н. Поппе и акад. Н. Я. Марр.

**7. Кто были сами болгары?** Особое положение, какое чувашский или, что одно и тоже, болгарский язык занимает между наречиями тюркскими с одной стороны и монгольскими с другой, дает основание утверждать, что он древнее древних и ныне существующих турецких наречий и носители его, древние болгары, должны были отделиться из недр народов Средней Азии еще до появления тюркской народности. Так как народами, обитавшими в глубинах Центральной Азии издревле, были хунны, то, естественно, историческими предками болгар-чуваш должны быть признаны древнейшие хунны.

**8. Какие же народы назывались хуннами?** По свидетельству древнейшего историка Китая хунны появились у границ его впервые примерно за 4000 лет тому назад. Это был народ с примитивнейшей культурой и без какойлибо твердой общественной организации. Китайцы называли их в разное время разными именами, в которые вкладывалось ими глубокое презрение к полудиким номадам. Настоящее имя хуннов, если только оно было, осталось неизвестным. Собственно имя „хунну“ принадлежит народу, от которого произошли тюрки. Имя же древнейших хуннов

было „шань-юн“, от одного из поколений которых, вероятно, пошли хунны с Р—Л языком, а от других—хунны-тюрки.

## III. Пребывание в Средней Азии.

1. **Средне-Азиатские степи**. Естественно-географический обзор их.

2. **Обзор жизни древнейших хуннов.** Они жили охотой и скотоводством, о чем говорят общие и для чуваш и для тюрков названия предметов и принадлежностей охоты (зверя, капкана, копья, стрелы, собаки) и пастушества (домашних животных, принадлежностей упряжи, некоторых молочных и животных продуктов). Они знали и первобытное земледелие, о чем можно судить по общности назв. злаков, первобытного орудия „кетмень“ и некоторых предметов домашнего обихода у чуваш и тюрков. Зачатки земледелия могли быть переняты ими от китайцев-пленников или колонистов, хотя судя по чув. сказке „о хомяке“, можно полагать, что до мысли о земледелии древнейшие хунны могли дойти и самостоятельно, так как они имели возможность наблюдать, как хомяки на зиму запасались зернами дикорастущих злаков и, возможно, таковые нередко опоражнивались хуннами для себя. Все же основным занятием их было пастушество, что гармонировало с условиями жизни в Центральной Азии.

3. **Жилище хуннов**. Судя по общности названия юрты (çурт-юрт) и отверстия для дыма (тӗнӗк) у чуваш и тюрков надо полагать, что у их общих предков юрта и была жилищем с древнейших времен. Ее устройство и удобство как переносного жилища.

4. **Из чего изготовлялись необходимые орудия.** Материалом для разнообразных орудий несомненно служили не только продукты растительного и животного мира и камни, которыми пользовался древний человек, но судя по общности чув.-тюрк. названий некоторых металлов (меди, железа, серебра и золота), надо полагать, что их общие предки, древнейшие хунны, уже пользовались ими, хотя, по свидетельству китайцев, каменные орудия в Центр. Азии были в употреблении вплоть до IX в. нашей эры.

**5. Семейная и общественно-родовая жизнь**. Отсутствие у чуваш и тюрков общего названия для семьи указывает на отсутствие у предков их брака и семьи. Было умыкание невест у чужих родов, на что указывают многие общие древне-свадебные обычаи у чуваш (вооруженные поезжане, „плач" невесты) и тюрков. Древнейшие хунны государственного об'единения не имели, но, судя по чув. тюрк. „йыш", жили отдельными группами, об'единявшимися в родовые группы, которые мы доселе наблюдаем у многих тюрк. племен. Что касается чуваш, то многие чувашские обычаи, соблюдающиеся, напр. при „ђӳклеме пăтти", свадьбе (сбор калыма в древности), поминовении усопших, подтверждают сказанное. У чуваш родоначальники наз. „тӳпи" или „тӳпе паттăр". Роды об'единялись в „нĕсĕл" („нĕслĕк"), якут. „наслег". Каждый род жил на определенной территории и, возможно, имел свой знак или тамгу. Они имеются у чуваш местами доселе, а у тюрков скотоводов почти повсеместно. Во главе родовых групп находились старшие, чув. „ватти". Власть его была велика, но решения он принимал по совещании со всеми „ватти" родовых групп на собрании. Этот порядок наблюдается у многих тюрков до настоящего времени, у чуваш же черты его удержались только в исполнении некоторых обрядов (при свадьбах, молениях) и, кроме того, на этот господствовавший некогда порядок намекает то, что чуваши всех старше по себе наз. „пиђи", название, совпадающее с тюрк. „бий". Старшие родов пользовались большим почетом и по смерти у чув. наз. „ырă"—добрый, святой.

**6. Вера хуннов**. Предки чуваш и тюрков, древнейшие хунны, небо почитали божеством. Это подтверждается чув. „турă" (бог) и тюркскими „танкре, такре, таре", означающими небо. Супругою его является земля, которая у древних чуваш почиталась существом женского пола, как это видно из их обычаев, связанных с кражей земли и празднованием „Çинђе". Кроме того, была другая божественная пара—солнце и луна, которые у чуваш доселе еще призываются в клятвенной формуле (турăшăн та, хĕвелшĕн те, уйăхшăн та) и символ коих увенчивал в древности храмы чувашские. При этом солнце повидимому представлялось в виде крылатого существа женского пола. Было у хуннов, без сомнения, много и др. мелких божеств.

**7. Постепенное распространение хуннов**. По мере развития скотоводческого хозяйства и размножения населения, хунны должны были раздвигать пределы своего расселения. Это естественно делалось по линии наименьшего сопротивления, с востока на запад, по бесконечным степям. Так они в незапамятные времена вышли из глубин Азии за Алтайские горы и распространились от Иртыша вплоть до Урала, затем и Волги. На широкое распространение их указывает чув. единица меры длины „çухрăм“ (верста), которая есть собственно единица меры распространения человеческого голоса в пространстве. Размах расселения для скотовода-кочевника диктовался условиями пастушеской жизни, требующей для своего развития огромной площади.

**8. Следы общения чуваш с Китаем**. Об этом говорят китайские заимствования в языке чуваш (ђике—локоть, ђи—превосходн. степень, çын—человек, çĕнĕ—новый, туй—свадьба, собрание, тинĕс—море, болото, сухан—лук и др.), песни и многочисленные сказания о Китае и китайцах, которые ходят среди чуваш и доселе еще не собраны.

## IV. Роды чувашские и собственно чувашские

**1. Как произошли чувашские роды**. Единство природных условий первоначальной жизни, быта и труда поддерживало единство речи и уклада жизни первоначальных хуннов. Когда же многие родовые группы расселились по огромной, необ‘ятной территории и оказались в условиях разнообразной естественно-географической среды, то у них должны были произойти большие изменения во всем. Эти изменения прежде всего должны были появиться у тех групп, которые оказались как бы разделенными от Центральной Азии мощным горным хребтом Алтая, т. е. у племен, живших между Иртышом и Волгой. Здесь они, кроме того, вошли в непосредственное соприкосновение с финно-угорским миром, влияние которого, разумеется, д. б. сказаться прежде всего в языке и физическом типе их. Действительно в чувашском языке имеются заимствования из языка и ливов, и

эстов, и литовцев, и лопарей, и коми, и вотяков. Очевидно, подобные заимствования могли быть сделаны чувашами не позднее того времени, когда эти племена обитали вблизи Средней Волги, т. е. ранее нашей эры. Так давно выработался особый чувашско-болгарский язык и вместе с тем и особый этнический тип.

**2. Сколько было чувашских родов вообще.** Судя по известному письму хозарского царя, их было в X в. не менее десяти, между которыми исторически известными стали хозары и болгары, говорившие, по свидетельству восточных писателей, на языках сходных между собою, но уже отличных от тюркского. При этом нельзя не отметить того обстоятельства, что племенные названия хозарских родов совпадают полностью с древне-чувашскими именами.

**3. Обзор жизни древне-чувашских родов.** Они были пастухами и в то же время занимались и охотой. Их жизнь хорошо иллюстрируют золотые бляхи, найденные в Сибири и хранящиеся в Эрмитаже. Они описаны у Кондакова в „Русских Древностях".

**4. Свидетельство Геродота собственно о чувашах.** Чуваши называют себя „ђуош" или „ђӑваш". Последнее образовалось от свойства чув. языка длинное тюркское ӳ передавать в форме „ӑва". Название „ђуош" у Геродота получило форму „тусс" (θисс)—туссагеты, θиссагеты. Геродотовское „тусс" римские писатели стали уже передавать в форме „турс", тирс"—турсагеты, тирсагеты. По Геродоту, местом расселения собственно чувашских родов было междуречье Волги и Белой.

**5. Соседи чуваш.** Западными соседями чуваш были скифы, жившие к северу от Черного моря, возможно бывшие одного корня с чувашскими племенами и несомненно имевшие с ними торговые сношения. К северу от них обитали дикие финны, междуречье Дона и Волги занимали сарматы и выше их лесной народ будины, к востоку от них жили чуваши, соседями их на востоке, начиная от Белой, были родственные аргипеи, вероятные предки позднейших хозар, и исседоны, к югу от которых вплоть до Аральского моря кочевали массагеты. Северными соседями чуваш были разные финно-угорские племена.

Все это были народы со слабо развитой культурой.

**6. Народы большой культуры**. Греки и римляне.

# V. Чувашские роды в междуречьи Волги и Урала.

**1. Междуречье Волги и Урала.** Естественно-географическое описание его.

**2 Свидетельство Геродота о древних чувашах.** По этому свидетельству древние чуваши („туссы“) и совместно с ними ирки вели охотничий образ жизни, полностью совпадающий с тем, иллюстрацией к которому служат вышеуказанные бляхи, хранящиеся в Эрмитаже. Он находит себе подтверждение и в пословицах чуваш („Выртнă упана йывăç çинђен пăхса тăратимĕн“ или „Çын çинђи— йывăç çинђи“). Охота производилась или облавой, или в одиночку. Тогда было необычайное обилие всякого рода диких животных и птиц. Древние чуваши употребляли разные способы ловли их, но главным орудием охоты были лук и стрела. Свидетельство Герберштейна о чувашах, как об искусных охотниках. Свидетельство Флака о „туссах“— чувашах, носивших шкуры диких зверей.

**3. Переход чуваш к земледелию**. Никакой народ к земледелию не переходит добровольно, а по нужде. Пример башкир пастухов доказывает это. Впрочем не надо забывать и того, что земледелие, являясь сравнительно более надежным источником существования, могло найти в номадах и естественное влечение к себе. Трудно сказать, когда были заложены у чуваш первые зачатки оседлого земледелия, вероятнее всего после оскудения других источников существования. Чувашское сказание о двух братьях Якише-охотнике и Велюше-пчеловоде подтверждает это. Первыми к земледелию, вероятно, приступили северные чуваши, жившие к северу от р. Самары в лесной полосе, не дававшей попавшим сюда степнякам простора для скотоводческой жизни. Природные же условия здесь этому весьма благоприятствовали. Южные чуваши, жившие в степной полосе к югу от Самары, конечно, беспрепятственно продолжали свой прежний пастушеский образ жизни.

**4. Какова была культура древних чуваш.** В местах древнего обитания чуваш находят множество орудий, сделанных из камня, кости и бронзы. Находятся и следы их изготовления на месте. По свидетельству Флака музыкальные орудия „туссов“ были медные. Судя по сказаниям и поверьям чуваш, связанным с кузнецами и кузнечным делом, можно думать, что примитивная обработка металлов им была известна издревле. По Флаку у них были свои музыкальные инструменты, следов. и песни.

**5. Как жили чуваши с своими соседями.** Междуречье Волги и Урала до прихода чуваш, вероятно, было обитаемо слабыми финскими племенами, которые под напором чуваш частью отодвинулись к северу за Каму, частью же смешались с ними. Отсюда особый физический тип чуваш. Водворившись на месте, они вступают в сношения с своими соседями. Приходят к ним за богатыми шкурами скифы, которые отправляли их в Малую Азию, впрочем и сами любили одеваться в них. Находки древних монет подтверждают наличие этой древней торговли. Сами чуваши, вероятно, тоже принимали в ней более или менее активное участие. Во всяком случае разнообразие даров природы на новом месте должно было способствовать возникновению меновой торговли.

**6. Начало возникковения городов-кар'ов.** Оно связано с моментом оседлости. В лесной полосе, богатой зверьем, кары (ограждения) должны были возникнуть из естественного стремления оградить свое имущество и скот от нападения хищников и врагов. У каждого рода, разумеется, д. б. быть свои кары. Они устраивались обычно у стыка двух рек на высоком мысу, обрывистые склоны которых были мало доступны, а открытая сторона ограждалась или валом, или рвом, или тем и другим вместе. Так стали возникать отдельные центры поселений. Некоторые из них, находившиеся при удобных путях сообщения, постепенно становились более крупными центрами, такими были Пӳлĕр и Пӑлкар. Последний находился у стыка Волги и Камы. этих великих путей общения народов Восточной Европы. Древность Пӑлкара несомненна. Вероятно, еще в начале нашей эры он стал приобретать характер общеплеменного центра чуваш, которых иностранцы и стали называть

его именем. Но начавшиеся движения народов из Средней Азии помешали полному об'единению чувашских племен вокруг этого центра, оторвав от него южные группы их.

## VI. Жизнь южных чуваш-болгар.

**1. Отделение южных чуваш-болгар.** Беспрерывная борьба Китая против хунно-тюрков. Разгром хуннов 2060—70 лет назад и отогнание их к западу на 2000 в. Под давлением их хозары снимаются с своих мест, переходят Урал и, отогнав южные группы чуваш-болгар за Волгу, занимают их места. Здесь, за Волгой, между беженцами происходят раздоры и, по свидетельству Моисея Хоренского, в 127—119 г. до Р. Х. некоторая часть их, отколовшись, переселяется в Армению, остальные расселяются между Кубанью и Манычем.

**2. Раздробление южных чувашско-болгарских родов.** Лет через 100 китайский полководец Пан-Чао своими войсками охватывает хуннов-тюрков со всех сторон, но последние, прорвавшись, устремляются на запад. Под их давлением хозары вынуждены перейти за Волгу и в 198 г. по Р. Х. врываются через Кавказ в Армению, но получив оттуда сильный удар, водворяются к северу от Кавказа. В IV в. хунны—тюрки переходят Волгу и в 448 г. покоряют хозар. После Аттилы хозары добывают себе свободу, но лет через 100 они вместе с болгарами-чувашами становятся добычей новых пришельцев аваров. Через другие 100 лет Куврат об'единяет разрозненные дотоле чувашско-болгарские орды и сбрасывает иго аваров. Тоже делают и хозары.

Последние, усилившись, начинают теснить своих сородичей чуваш-болгар, между которыми возникает рознь, и они, распавшись на 5 групп, двигаются одна за другой к западу. Расселение их в разных местах, где они, кроме дунайских, бесследно исчезли.

**3. Жизнь дунайских болгар.** Краткий очерк истории дунайских болгар и исчезновение болгарской национальности среди славянских племен.

# ТУПМАЛЛИ.


| | Стр. |
|---|---|
| Умĕнхи сăмах . . . . . . . . . . . . . . . . | I |
| Автăртан . . . . . . . . . . . . . . . . | III |
| Ђăваш историйĕ çинђен ăнлантарса калани . . | 1 |
| Ђăваш камран пулнă . . . . . . . . . . . . | 27 |
| Вăта Аçире пурăнни . . . . . . . . . . . | 45 |
| Ђăвашла ăрусемпе Ђăваш ăрăвĕсем . . . . . | 65 |
| Ђăваш ăрăвĕсем Атăлпа Урал хушшинђе пурăнни . . . . . . . . . . . . . . . . | 83 |
| Анатри ђăвашсенĕн пурăнăçĕ . . . . . . . . | 107 |
| Краткий очерк из чувашской истории. Ч. 1-ая. Следы древнейшей истории . . . . . . . | 1 |

## Асӑрханӑ йӑнӑш тӗлсем:

| *Стран.* | *Строкка:* | *Ҫапнӑ:* | *Кирлӗ:* |
|---|---|---|---|
| 1 | айалтан 13-мӗшӗ | 100 | 1000 |
| 39 | ҫӳлтен 12-мӗшӗ | Трапевски | Трађђевски |
| 71 | айалтан 3-мӗшӗ | Сиб. | Спб. |
| — | — — | Сиб. | Спб |
| — | — — | авторов Русп | авторов о Русп |
| — | — — | Спб. | Сиб. |
| — | — 4-мӗшӗ | Сиб. | Спб. |
| 74 | — 2-мӗшӗ | Darios | Dareis |
| — | — — | ibid | Ibid |
| — | — 3-мӗшӗ | Herodot | Herodot и. |
| — | — — | Darieos | Dareis |
| — | — — | Jbid | Ibid |
| — | — — | feldzug | Feldzug |
| — | — 4-мӗшӗ | Q | G |
| — | — — | Sauz | Saaz |
| — | — 12-мӗшӗ | алададского | аладагского |
| 75 | — 6-мӗшӗ | гунпов | гуннов |
| 81 | — 13-мӗшӗ | тепӗ | теҫҫӗ |
| 91 | — 4-мӗшӗ | 1608 | 1908 |
| 105 | — 2-мӗшӗ | Ивановом | Ивапом |
| 110 | — 9-мӗшӗ | вӗсӗнђе | вӗҫӗнђе |
| 111 | — 17-мӗшӗ | Хоринский | Хоренский, |
| 114 | — 7-мӗшӗ | ђӑплӑ | ђаплӑ |
| 117 | — 8-мӗшӗ | сӑсеймессӗр | сисеймессӗр |

---

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашск и АССР

Хакĕ 1 тенкĕ